4018
47-107

М. ТРУБИНА

# КАЛАВСЕМПЕ ЮМАХСЕМ

ЧӐВАШГОСИЗДАТ · 1947

1917

М. Д. ТРУБИНА

# КАЛАВСЕМПЕ ЮМАХСЕМ

1947

КОНТРОЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ

ШКУЛ БИБЛИОТЕКИ

М. Д. ТРУБИНА

# КАЛАВСЕМПЕ ЮМАХСЕМ

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1947

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палате
2 марта 1948 г.
№ 4





## *ХĔРЛĔ ГАЛСТУК*

*Калав*

I.

Вăрманти полустанкăра поезд çинчен виçĕ-тăватă чăваш тата пĕр 10—12 çулхи ача тухса юлчĕç.

Ача шурă кĕпепе, кĕске хăмăр йĕмпеле. Мăйне хĕрлĕ галстук çыхнă. Пуçĕнче хĕрлĕ çăлтăрлă шурă шлепке. Уринче хура чăлхапа пушмак. Чăлхи, вăрăмскер, ача урисене яштак кăтартать. Ачанăн пĕтĕм пӳ-сийĕ, уткалани, пăхкаласа тăни илемлĕ.

Чăвашсем, полустанкăран тухсанах, вăрман хĕрне чĕлĕм туртма ларчĕç. Ача çурăм хыçĕнчи пĕчĕк кутамккине çӳлерех хăпартса çыхрĕ те вăрман сукмакĕпе çăмăллăн утрĕ.

Çуллахи кун кăç еннелле сулăннă. Хĕвел чалăшшăн пăхать, йывăç çулçисем витĕр сукмак çине çутти тĕл-тĕл ӳкелет. Ванюк вăрмана кĕрсенех унталла-кунталла пăхкаларĕ. Тăван вăрман, тăван çĕршыв! Ванюк ку вăрманти кашни йывăçа, кашни шĕшкĕ тĕмине тенĕ пекех астăвать. Акă сукмак хĕрринче кукăр-макăр ват улмуççи ларать. Çак улмуççи çинчен Ванюк выçлăх çул пĕр витре улма пухнăччĕ. Улмисем вĕтĕ, сип-симĕс, çавăра чикмелле мар йӳçеччĕ. Ванюк амăшĕ çав улмасене кăмакана хывса пĕçерсе ачисене çитеретчĕ. Выçлăх çул мĕн-мĕн çимен-ши? Выçлăх çул Ванюкăн ашшĕ, икĕ йăмăкĕ вилчĕç. Ванюк та, выçлăх çул килте пурăннă пулсан, вилетчĕ пулĕ. Ыр, Ванюка амăшĕ çине тăрсах вулăсри ытти ачасемпе пĕрле Мускава ячĕ. Мускава кайман пулсан, Ванюк паян кун çак сукмакпа: халех киле çитетĕп, аннене куратăп, тесе хавассăн утса пынă пулĕччĕ-ши? Выçлăх çул, асран кайман йывăр çул... Сара çӳçлĕ, йăлтăркка куçлă пĕчĕк Санюк халĕ те Ванюкăн куçĕ умĕнче. Ыраш çăкри, паранкă çинĕ чух, Санюк чупса çӳресе вылятчĕ, кулатчĕ.

Кĕркунне, çимелли пĕтсен, Санюк улшăнчĕ. Çимелли йĕкел пашалу çеç. Санюкăн илемлĕ пичĕ кăн-кăвак пулса кайрĕ. Тутисем хуралчĕç. Икке кайнă пĕчĕк Санюк утайми те пулчĕ. Кунĕ кунĕпе пукан çинче ларса: „мем-ме-е, мемме-е", тесе аллисене кăнтаратчĕ. Ыран вилес тенĕ чух Санюк пукан çинче сулкаланса ларать. Йĕкел пашалуне çăварĕнче макăлтаттарса нăчăк-нăчăк! ĕмет. Амĕш ачана ачашласа сăпка çине вырттарчĕ. Санюк çĕрле сăпка çинчех вилсе выртнă...

Тепĕр икĕ эрнерен Ванюкăн ашшĕ те шыçăнса кайса вилчĕ. Вара тата 5 çулхи Малани вилчĕ. Ăна пытарнă кун кантуртан ачасене пухса Мускава ямалли хут килчĕ. Амăшĕ, Ванюк та пулин çăлантăр тесе, Ванюка Мускава яма питех те çине тăчĕ. Ванюкпа амăш иккĕн кантура çуран кайрĕç. Вулăсра ачасем пухăнса çитсен, вĕсене Мускава ячĕç. Ванюк амăшĕ пĕр пĕччен тăрса юлсан, килне хупса, Çĕрпӳве кайрĕ. Унта вăл пĕр шкула çисе пурăнасшăн ĕçлеме кĕчĕ.

Çак шухăшсемпе Ванюк вăрмантан тухрĕ. Веç, ав, ыраш пусси урлă Ванюкăн тăван ялĕ курăнчĕ. Ялĕ, пытанса ларнă пек, пĕр лапăра чăмăртанса ларать. Чăн малтан йывăç тăррисем, çӳлĕрех пӳртсем курăнчĕç. Кăшт кайсан, улăм витнĕ çуртсем, йывăç пахчисем курăнчĕç. Ванюк, хăйсен улăм витнĕ лапчăк пӳртне курсан, чĕри хăвăртрах картлатма тытăнчĕ. Çинçе, çамăл пушмаклă урисем хытăрах утăмлама пуçларĕç. Ванюк ыраш пуссин яп-яка, илемлĕ сукмакĕпе хăвăрттăн шок, шок тутарать. Шăркана ларнă вăрăм ыраш Ванюка пуçĕнчен те, хулпуççинчен те тĕртĕнсе тутлă шăршă çаптарать.

Кĕтӳ кӳртес вăхăтра Ванюк ял патне çитрĕ. Тусан мăкăрлантарса кĕтӳ униченелле кĕрет. Кĕтӳ кĕнĕ çĕре хĕрарăмсем, ача-пăчасем пухăнса тăнă. Ванюка вĕсем патĕнчен иртсе кайнă чух никам та палламарĕ. Паллама та çук çав. Ванюк Мускава кайнă чух пĕчĕк, 7—8 çулхи çĕтĕк-çатăк начар ачаччĕ. Халĕ вăл, илемлĕ пӳ-силлĕскер, çăмăллăн урам тăрăх утса кайрĕ. Пĕр карчăк хĕвеле хупласа, аллине куçĕ çинче тытса: „ăçта каять-ши ку маттур ача," тесе пăхса юлчĕ. Икĕ ача сысна çурисене пĕчĕк пушшисемпе хăвалаççĕ. Ванюка курсан, вĕсем чарăнчĕç те пăхса юлчĕç.

— Епле аванскер,—терĕ пĕр ачи, Ванюка куçĕсемпе ăсатса.

Ванюк пĕр сăмах чĕнмесĕр килелле утрĕ. Васкаса пырать. Тăван ял, çуралнă кил! Чухăн пулсан та пит паха.

Ванюк амăшĕ 45 çула çитнĕ. Çакăн чул пурăнса та Ванюк амăш паянхи пек пысăк савăнăç курман. Карташĕнче качака суса ларнă чух амăшĕ, Ванюк хапхаран кĕнине курсан, хытса кайнă пек пулса пăхса тăчĕ. Хăй куçне хăй шанмасть. Вара вал, сасартăк куççуль юхтарса, Ванюк патне чупса пычĕ, ывăлне пÿрте илсе кайрĕ. Кăшт тăрсан, Ванюка курма хурăнташсем, кÿршĕсем пычĕç. Амăшĕ ачине çăмарта пĕçерсе, сĕтпе чей ĕçтерессшĕн ĕштеленсе çÿрет. Хăй ăшĕнче ачипе савăнать.

— Куç тулли вĕт!—тет. Ванюк амăш ăна çăмартине те шуратса, чейне те тултарса парать. Виç çул хушшинче мĕн тĕрлĕ ÿссе, тасалса кайнă. Калаçассине те епле аван калаçать. Вырăсла калаçма та вĕренсе çитнĕ. Кутамккинчен темиçе кĕнеке каларса хучĕ, хут вĕреннĕ пулмалла...

Амăшĕн савăнăçĕ вĕçĕмсĕр. Ванюка курма пынă хурăнташсем, кÿршĕсем саланса пĕтсен, амăшĕпе ывăлĕ карташĕнче чылайччен сăмахласа ларчĕç. Çутă çăлтăрсем тухсан тин Ванюкпа амăшĕ çывăрма выртрĕç.

II.

Ванюкăн тăван ялĕ, Лапра-касси—пĕтĕм вулăсĕпе пĕр тĕттĕм ял. Вулăсри ытти ялсенче комсомол ячейкисем, вуламалли çуртсем пур. Лапра-кассинче ун пек, кун пек япала çук вара. Çĕнĕ пурăнăçăн культурăллă хумĕсем çак лапăра пытанса ларакан яла пырса çапăнман пек туйăнать.

Лапра-кассинчи пурăнăç пуртарах çынсем ачисене Хир-кассинчи шкулта вĕрентсе пурăннă. Чухăн çын ачисем, тумтир çук пирки, 5—6 çухрăма вĕренме каяйман.

Выçлăх иртни виçĕ çул тулчĕ. Кĕркунне çитсе килет. Лапра çыннисем хирти ĕçĕсене пуçтарчеç. Кăçал тырă начар мар. Пурин те çителĕклĕ.

Малтан, Ванюк Мускавран килсессĕнех, ачасем ăна ютшăннă, пĕрле явăçсах çÿремен. Халĕ пĕтĕм ялти вактĕвек ача-пача Ванюк патне вылямa çÿреççĕ. Ванюк ачасемшĕн ытла тĕлĕнмелле маттур туйăнать. Ванюк темле вăйă та, темле юрă та, тем çинчен каласа кăтартма та пĕлет. Кунĕ-кунĕпе пекех ачасем Ванюкпа пĕрле Киремет сăрт çеремĕ çинче салтакла та, темĕн тĕрлĕ илемлĕ

вăйăсем те выляççĕ, юрлаççĕ. Ванюк юлташĕсене Мускавра хăй пурăнни çинчен, мĕн курни, мĕн илтни çинчен кала-кала кăтартать. Ял ачисемшĕн Ванюк каласа кăтартни ытла тĕлĕнмелле туйăнать. Пионер юррисене, вăййисене кашни ача вĕренсе çитнĕ. Пионер, комсомол мĕннине те вĕсем Ванюк каласа ăнлантарнинчен пĕлнĕ. Çыварма выртсан, хăшĕ-пĕри хăйсене хăйсем пионера кĕнине тĕлĕкре курнă. Вăрансан çав тĕлĕк те вĕсене тахçанччен савăнтарса çÿренĕ. Пионер отрядне çыранасшăн вĕсем пит çуннă.

— Хут пĕлмесен, эпир пионер пулаймастпăр,—тет Ванюк. — Пионерсем вĕренеççĕ. Пирĕн те хут вĕренес пулать. Пире шкул кирлĕ. Хамăр ялта шкул уçма комсомол ячейки урлă ыйтăпăр. Пирĕн пиччесем, комсомолецсем, пире шкул уçтарса парĕç.

Ачасем шкул пулассине кĕтсе тăнă. Шкул уçăлас шанчăка вĕсем пĕчĕк ăсĕсенче тытса çÿренĕ.

Пĕр вырсарникун пуян Гриша арăмĕ иртерех вут хутса çунтарса, çимĕçсем пĕçерсе кăларчĕ. Ачисемпе чиркĕве каяс тесе хатерленет. Икĕ ывăл ачи, Вальăпа Шура, сĕтел хушшинче темĕн пăшăлтатса лараççĕ.

— Мĕн пăшăлтатса ларатăр эсир? Тăхăнăр часрах таса кĕпесем те, атьăр чиркĕве,—терĕ амăшĕ. Ачисем нимĕн те шарламарĕç. Иккĕшĕ те алкумне вĕлт тухрĕç те кайрĕç. Алкумĕнче каллех темĕн пуплеме тытăнчĕç.

Кăшт тăрсан, 10 çулхи Валя алăка уçрĕ те:

— Анне, эпир паян чиркĕве пымастпăр, ачасен пуххине каятпăр,—терĕ.

— Ах, путсĕр ачасем! Епле вăл чиркĕве каймасан! Каллах çав Ванюк патне каятăр пуле-çке! Ах, ку Ванюка! Илтмен-и эсир, ĕнер пачăшкă кухарки пионерсене антихрист чĕпписем тенине? Ан кайнă пултăр çав Ванюк патне. Аçу пĕлсен çапса çурать, персе вĕлерет!

Чан çапса ячĕ. Пуян Гриша арăмĕ пустав хыс, пушмак-чăлха тăхăнчĕ те, турăш умне тăрса сăхсăхса, чиркĕве тухса кайрĕ.

Ачасем, амăшĕ тухса кайсанах, анкарти хыçĕпе Киремет çеремĕ тенĕ çĕре çитрĕç. Киреметре ачасем чылай пухăннă мĕн.

Çирĕм ачана яхăн пур. Çавăнтах Ванюкпа пĕрле икĕ пысăк ют ача пур. Вальăпа Шура ачасен ушкăнне кĕчĕç.

— Камсем ку пысăккисем?—тесе ыйтрĕ Валя çаптаркка кĕпеллĕ ачаран.

— Вулăсри ячейкăри комсомолецсем,—терĕ те лешĕ мĕн каланине итлеме хатĕрленчĕ.

Ванюк, хăй юлташĕсем пионер отрядне çырăнас тенине ячейкăна пырса каласан, пĕтĕм ячейка хускалса ура çине тăчĕ. Часрах пионер отрячĕн ялавне хатĕрлесе, комсомолецсем Лапра ялне ачасен чаплă пухуне ирттерме килчĕç.

Кăтра çӳçлĕ, хура кĕпеллĕ, çӳлĕ комсомолец ачасене сăмах калама тытăнчĕ.

— Ачасем, эсир пионер пуласшăн. Кам вăл пионер? Камсене калаççĕ пионер тесе? Акă пĕр-пĕр ученăй хăйĕн ĕçĕпе наукăна малалла ярать, çав çын наука пионерĕ пулать. Акă çулçӳревçĕ халиччен этем çитмен, этем ури пусман çĕре çитет — вăл пионер. Тата акă, патша вăхăтĕнче революци тăвасшăн хăйсене хĕрхенмесĕр ĕçленĕ çынсем—революци пионерĕсем пулаççĕ. „Пионер“ сăмах малта пыракан, çĕнĕ çул шыраса уçса тупакан тенине пĕлтерет. Мĕнле пулмалла пионера кĕнĕ ача? Пионер аван вĕренмелле, аван вĕренсе социализмлă çĕршывра культурăллă, усăллă этем пулмалла. Пионер ĕçре хастар пулмалла, малта ертсе пымалла. Пионер сывлăхлă, паттăр, тӳсĕмлĕ. Вăл хăйĕн ӳт-тирне çирĕп ӳстермелле, йывăрлăх пионера хăратмасть: вăл кĕрешсе çĕнтерме вĕренмелле. Пионерăн лозунгĕ çакă: Ленин—Сталин ĕçĕшĕн кĕрешме хатĕр пул!... Яланах хатĕр!— ответлет пионер. Пионер хĕрлĕ галстук çыхса çӳрет. Галстукăн виçĕ кĕтесĕ коммунистсене, комсомолецсене, пионерсене пĕлтерет. Эсир паян чаплă сăмах паратăр, ун хыççăн эсир—Ленин ачисем, комсомол шăллĕсем пулатăр, хĕрлĕ галстук илетĕр. Чăн-чăн пионерсем пулма сире сĕнетĕп. Сывă пултăр сирĕн пионер организаци! Сывă пултăр Ленин—Сталин ĕçĕ!

Ачасем харăссăн алă çупса ячĕç.

Тепĕр комсомолец, шурă кĕпеллĕскер, хĕрачанни пек çинçе пĕчĕк питлĕскер, ачасене икĕ ĕретĕн тăратса тухрĕ те çапла каларĕ:

— Ĕнтĕ, ачасем, торжественное обещание сăмахĕсене калатăп, эсир ман хыççăн ушкăнпа калăр,—терĕ.

Пионерсем хатĕрленчĕç: шăп, тӳп-тӳрĕ тăраççĕ. Комсомолец уçă сасăпа, васкамасăр, кашни сăмах хыççăн чарăнса калама тытăнчĕ.

— Эпĕ—Совет Союзĕн Социализмлă Республиксен çамрăк пионерĕ юлташсем умĕнче тупа тăватăп: Ленин—Сталин ĕçĕшĕн эпĕ çирĕп тăрăп, коммунизм çĕнтерттĕр тесе тăрăшăп, кĕрешĕп. Аван вĕренсе, социализмлă тăван çĕршывшăн тивĕçлĕ гражданин пулатăп тесе сăмах паратăп.

Ачасем пĕр хараăссăн кашни сăмаха комсомолец хыççăн каларĕç.

— Ĕнтĕ эсир—пионерсем,—терĕ комсомолец. Çапла каланă хыççăн комсомолец портфелĕнчен хĕрлĕ галстуксем кăларчĕ. Икĕ комсомолец кашни пĕрер шеренгăна тăчĕç те ачасене галстук çыхма тытăнчĕç. Галстук çыхнă чухне комсомолец калать: Ленин—Сталин ĕçĕшĕн кĕрешме хатĕр пул!—Яланах хатĕр!—тет пионер. Вунсакăр ача хĕрлĕ галстук çыхрĕç. Вунсакăр пионер хугшăнчĕ çак чăваш ялĕнчен пионерăн аслă çемйине.

— Эпир сирĕн пионер отрячĕ валли ялав та илсе килтĕмĕр,—терĕ кăтра çуçлĕ комсомолец. Вăл хăйĕн портфелĕпе юнашар выртакан сăрлă яка парка патака илчĕ. Патакăн пĕр вĕçне хаçатпа чĕркенĕ. Комсомолец чĕркенине сӳтрĕ те патакне çӳлелле çĕклерĕ—хĕрлĕ ялав сар хĕвел çинче ылттăн саспаллисемпе çиçсе вĕлкĕшрĕ. Комсомолец çав ялава Ванюка тыттарчĕ. Ванюк хĕпĕртенипе чĕтресе кайса паха ялава аллине хытă тытрĕ. Ачасем Ванюк вĕрентнĕ пионер юррине алăсем çĕклесе юрласа ячĕç. Ача-пăча сасси симĕс çерем çийĕпе илтĕнсе, çӳлелле хăпарса янăрарĕ.

Юрлама чарăннă хыççăн ачасем çерем çине ларчĕç. Ванюк комсомолецсене каларĕ: „Пионер отрячĕ пур, анчах пионерсем валли ялта шкул çук. Пире шкул кирлĕ".

— Тĕрĕс каларăн. Шкул калама çук кирлĕ,—килĕшрĕç комсомолецсем. Ванюк тухса кайнă пупăн çурчĕ пушăх ларни çинчен, унта шкул тума пит майли çинчен каларĕ.

— А вăл çурта пуян Гриша арман хуçине партарасшăн, атте каларĕ, ыран пуху пулать, сутаççĕ,—терĕ пĕри.

— Суттармастпăр—терĕ Ванюк, ура çине сиксе тăрса.

— Суттарас марччĕ,—килĕшрĕç ытти пионерсем те.

— Суттармастпăр, тĕрĕс калаттăр,—терĕ шурă кĕпеллĕ комсомолец.—Ырах пĕлтертĕр эсир пире ку хыпара. Сире шкул уçса парас шутпа эпир мĕн тума пултарнине пĕтĕм вăйран тăрăшса тăвăпăр. Эпир ыран килетпĕр, халĕ ĕнтĕ саланăр.

Пионерсем йӗркеленсе тӑчӗҫ те ялалла илемлӗн харӑс утса кайрӗҫ, ҫӗнӗ юрӑ пуҫласа ячӗҫ. Хӗрлӗ ялав варкӑшса хӗвел ҫинче ҫиҫсе пырать.

III.

Тепӗр кунхине пӗтӗм пионерсем кӑнтӑрларанпах Ванюксем патӗнче вӗркӗшрӗҫӗ. Ӗнерхи комсомолецсем те виҫҫӗшӗ те унта. Карташӗнче ачасене вӗрентеҫҫӗ. Мӗнле тусан аван пулӗ тесе сӳтсе яваҫҫӗ. Кӗркури Михали патӗнчен туй параппанӗ кайса илсе хатӗрлерӗҫ.

Каҫалапа пуху та пухӑнма тытӑнчӗ. Витӑрах ҫынсем кӗске сӑхмансем тӑхӑнса хуллен иккӗн-виҫҫӗн чиркӳ патнелле утаҫҫӗ. Халах пуххи чиркӳпе юнашар пуша ҫурт ҫумӗнче пухӑнать.

Ку ҫурта 15 ҫул малтан халӑх хӑй вӑйӗпе пупа лартса панӑччӗ. Ҫамрӑк пуп ват пуппала килӗшсе пурӑнаймарӗ те тухса кайрӗ. Ҫын пуранман ҫурт часах япӑхланчӗ. Халӗ ку ҫуртӑн 8 чӳречинче те куҫ кантӑк ҫук. Икӗ кӑмакине те ишсе пӗтернӗ.

— Тепрер ҫул ларсан, ку ҫурта пӗрер пӗренен салатса пӗтерӗҫ. Ӑна луччӑ сутас пулать, тесе шут турӗҫ Лапра ҫыннисем. Паян ҫак ҫурта арман хуҫине сутма пуху пуҫтарӑнать. Арман хуҫи ӑна хӑй уйӑрӑлса тухакан ывӑлӗ валли илесшӗн. Сутас та, укҫине мишавая ҫӗр касса панӑшӑн тӳлес. Пит маҥерле пулать: мишавая тӳлеме халӑх ҫинче пӗр пус укҫа та ҫукчӗ-ха,— теҫҫӗ.

Ҫак шухӑша ҫынсем чылайӗшӗ тытаҫҫӗ.

Лапчӑк картуслӑ Иван чӗлӗмне шӑлпа хытӑ ҫыртнӑ та хӑй патӗнче тӑракан 7—8 ҫынна:

— Кун пек ҫурт сутса та ӗҫмесен, хӑҫан ӗҫес?—тет. Хӑй чӗлӗмне мӑкӑрлантарса ҫӗре лачлаттарса сурать. Иван шухӑшне те хапӑл тӑвакансем пур: пуринчен ытла кайри кас куштанӗсем ҫакӑнпа килӗшеҫҫӗ. Вӗсем ҫуртне сутачченех арман хуҫинчен 31 тенкӗлӗх эрех ӗҫнӗ.

Пӗр ватӑ старик хулайне „Канаш" хӗстернӗ те чалӑшса кайнӑ картлашка ҫинче ларать. Старик патӗнче 3—4 ҫын тӑраҫҫӗ. Хуллентерех пуплеҫҫӗ. Вӗсен шухӑшӗсем ак ҫапла:

— Ку ҫурта сутас мар, шкул валли юсас. Анчах куштансем шкула хирӗҫ. Халах ҫинче каласан та ҫӗнтерейменӗр...

— Куштансем çуртне сутатпăр тесе кашни пасартах ĕçеççĕ тет те...—терĕ старик. Хай хаçатне кăларчĕ те пăшăлтатса вулама тытăнчĕ.

— Çĕнтеретпĕр. Влаç хамăрăн вĕт,—терĕ тепри.

Пуян Гришан, унпала пĕр майлă çынсен урах шухăш. Пуян Гриша питне-куçне йăвашлантарса хуллен сасăпа калать:

— Ку çурта сутас та укçине чиркĕве парас. Çурт укçи чиркĕве тивĕçлĕ, мĕншĕн тесен, ку çурта пупшăн, чиркӳшĕн тунă.. Гриша çапла каларĕ те йĕри-тавра хай шухăшлă çынсене шыраса пахкаларĕ. Хăшĕ-пĕри: çапла, çапла тенине илтсен, пуян Гришан кăмăлĕ çемçелсех кайрĕ. Вăл куçне мăч-мăч хупса тата та ытларах йăвашланса кайрĕ.

Акă яка тумланнă арман хуçи те пухăва çитрĕ.

Халăх сĕрлет. Пĕри апла, тепри капла тăвасшăн. Халăх хушшинче виç-тăватă ача пысăк çынсен ушкăнĕсенче шăтара-шăтара çӳреççĕ. Акă пĕр ачи тăнласа тăчĕ те çынсем хушшинчен хăвăрт витĕр-витĕр тухса вĕлт туре.

Урамра лав куранса кайре. Кантур ямшăкĕ тӳрех Ванюксен карташнелле чуптарчĕ.

Чылайччен кĕрлесен, çурта 200 тенкĕлле сутма йышăнчĕç, анчах Иван: „виç витре эрех ларт тата 200 тенкĕ çумне", тесе кăшкăрать.

Сасартăк параппан сасси илтĕнчĕ. Урамра тӳнк, тӳнк! илтенет.

Пурте параппан сасси илтĕннĕ еннелле пăхрĕç.

Урам тăрăх хĕрлĕ ялавпа, параппан çапса, ачасем салтаксем пек утса пыраççĕ. Вĕсен хыççăн кантурти икĕ комсомолецпа вулăс исполкомĕн членĕ пырать.

— Ку мĕнле япала? Мĕне пĕлтерет?—тесе çынсем тĕлĕнсе хытса кайрĕç. Çăвара карса пăхса тăраççĕ.

Пионерсем халăх пуххи умне пырса тăчĕç те пĕр çын пек харăс:

— Парăр пире шкул!—тесе кăшкăрса ячĕç.

Вулăс исполкомĕн членĕ халăх ăшне кĕрсе кайрĕ те, папкине хул айĕнчен кăларса:

— Мана черет урлă сăмах калама парăр-ха,—тесе ыйтрĕ.

— Кала, кала! - терĕç шкул уçас шухăшлă çынсем. Вĕсем, пионерсене, комсомолецсене тата вулăс исполкомĕн членне курсанах, хăйсен чĕри ăша вырăна ларассине сисрĕç.

— Эсир кунта çурт сутма пухăннине илтрĕмĕр эпир. Кун çинчев пионерсемпе комсомолецсем вулăса пĕлтерчĕç. Юлташсем! Сирĕн çак çурта сутас пулмасть. Эсир, ку çурта юсасан, вутне турттарса пама пулсан, эпир сирĕн ялта шкул уçас, тетпĕр. Пăхăр, юлтшсем, сирĕн хăвăр ачăрсем кунта пĕрлешсе шкул ыйтма килнĕ. Весем вĕренесшĕн çунаççĕ. Çурт пур çинче епле эсир, ку çурта сутса, ачăрсене шкулсăр хаварăр.

Халăх сĕр-р-р! кĕрлесе ячĕ.

Кăтра çӳçлĕ, хура кĕпеллĕ комсомолец вĕревни пит кирли çинчен хĕрӳллĕ сăмах каларĕ.

— Ленин Совет Союзĕпе те пĕр хут пĕлмен çын ан пултăр, тенĕ,—терĕ комсомолец юлашкинчен.—Шкул уçмасан, эсир Ленин сăмахĕсене, çĕнĕ пурăнăç йĕркисене хирĕç пыратăр. Тĕттĕме пĕтермелле! Парăр хавăр ачăрсене шкул уçса!

— Парăр пире шкул!—харăс, хытăрах кăшкăрчĕç пионерсем.

Шкул уçас шухăшлă çынсем хăпартланчĕç. „Канаш“ вулакан старикĕн, пионерсене курсан, хĕпĕртенипе куçĕ шывлансах кайрĕ.

— Ара, халăх, епле кун пек хăйсем шкул ыйтакан ачасене шкул туса памăпăр! Намăс пулать пире, халăх!

Арман хуçипе куштансен пичĕ-куçĕсем улшăнчĕç: унталла, кунталла хăйсене майлă çынсем шыраса кăн-кан пăхкаларĕç.

Пуян Гриша, хăй ывăлĕсене пионерсем хушшинче курсан, кĕл пек шуралса кайрĕ. Пит хытă çиленсе кайса, вăл хыттăн, ятлаçнă пек, калама тытăнчĕ:

— Кирлĕ мар пире шкул! Вĕç ав, шкулта вĕренес ачасем мĕнле çӳреççĕ. Кун пек пĕчĕккисем ваттисен ĕçне пырса пӳлни тĕнче çуралнăранпа та пулман. Килĕшӳсĕр япала ку! Вĕсене каккуй шкул! Хула илмелле те пĕтĕмпе хĕнесе ямалла.

Халăх каллех сĕр-р-р кĕрлесе ячĕ. Куштансемпе пуян Гриша шухăшлисем пĕр майлă, шкул уçас текенсем ĕнтĕ (халĕ нумайланса) тепĕр майлă.

— Парăр пире шкул!—виççĕмĕш хут янтратса ячĕç пионерсем.

Чылайччен тавлашсан, кĕрлесен, сасăларĕç те, çурта шкул валли юсамалла турĕç. Вулăс исполкомĕн членĕ çавăнтах договор çырма тытăнчĕ. Договорĕ çапла пулнă: халăх икĕ эрне хушшинче шкул çуртне юсаса

парать, вуттине кирлĕ вăхăтра турттарать. Учительне шалу уездран параççĕ.

Пионерсемпе комсомслецсем мĕнле килнĕ, çаплах, стройпа утса, ĕретлĕн кайрĕç. Хăйсен шухăшĕ вырăна кĕнĕшĕн кашни пионер, кашни комсомолец хавасланса утса пырать. Хĕрлĕ ялав паян ял урамĕпе çӳлерех çĕкленсе пырать.

Пуху саланма тытăнчĕ. Арман хуçинчен эрех ĕçнĕ çынсем кăмăлсăрланса пухуран пуçран çапнă пек тухса кайрĕç.

Лапчăк картуслă Иван, такçантанпа: çурт сутнă чухне ĕçкĕ пулать-ха, тесе ĕметленнĕскер, халĕ чĕлĕмне тата хытăрах шăлпа çыртса: шуйттансем, тесе такама ятлаçса тухса кайрĕ.

Пуян Гриша, пысăк хуйхă пулнă пек, пĕкĕнсе хутлансах кайнă пек туйăнчĕ. Асаплăн, вăрăммăн сывласа, хуллен чиркӳ хыçнелле утрĕ вăл.

Ванюк, киле таврăнсан, савăннипе лара-тăра пĕлмест. Амăшне пухура мĕн пулни çинчен, икĕ эрнерен шкула вĕренме каймалли çинчен, темиçе хут васка-васка каласа пачĕ. Ванюк амăшне ывăлĕ савăнни паха.

Ывăлĕпе пĕрле амăшĕ те хĕпĕртет.

Çывăрма выртсан, Ванюк тахçанччен çывăрса каяймарĕ. Пĕчĕк пуçри шухăшсем вĕçсе çӳлелле хăпараççĕ. Хамăр шкултан юлташсемпе вĕренсе тухатпăр та, вара пурте икĕ сыпăклă шкула вĕренме кĕретпĕр. Икĕ сыпăклă шкултан тухсан, вара е Хусана, е Мускава каятпăр.

Вырăн çинче чылайччен çаврăнкаласа выртсан, Ванюк хăрах аллине пит çămарти айне чикрĕ те савăнăçлă шухăшсемпе тутлăн çывăрса кайрĕ.

1925.

---

## АРÇУРИ

*Калав*

I.

Амбар умĕнчи вырăн çине выртса, Кавĕрле çывăрса кайма пуçланăччĕ, анчах калитке шăлтăрт туса уçăлни ăна кансĕрлерĕ. Калитке сасси хăлхана кĕрсенех, Кавĕрле куçне уçса ячĕ. Калиткерен хура мĕлкĕ пек такам кĕчĕ, тӳрех Кавĕрле патнелле пырать.

—Кавĕрле!—тесе чĕнчĕ кĕнĕ çын хуллен.

Сассинчен Кавĕрле хăйсемпе юнашар Микулана паллярĕ. Кавĕрле, пуçне хăпартласа, минтер çине чавсаланчĕ.

„Мĕн шутпа çӳрет-ши вăл çерхута? Мĕн калăсшăн-ши вăл?..“ Шухăшларĕ Кавĕрле.

— Эсĕ çывăрмастăн-çке,—терĕ Микула ăшшăн, Кавĕрлен ури вĕçне пырса ларса.

— Çывăрсах каяйман-ха,—терĕ Кавĕрле, анасласа илсе.

— Итле-ха, ача, эсĕ маншăн пĕр ĕç тума пултарайmăн-ши?—терĕ Микула. Кавĕрлене çурăмран çемçен тытса, вăл пĕрре кăмăллăн çапса илчĕ.

— Мĕнле ĕç?

—Кĕлтесем çухалкалама тытăннăранпа хир хуралне комсомолецсем черетпе тăма пуçланине пĕлетĕн вĕт-ха эсĕ?

— Пĕлетĕп, вара?

— Ман вырăна пĕр каçлăха хир хуралне каймастăн-ши, тетĕп.

— Ху ăçта каятăн, ху мĕншĕн тăмастăн?

— Мана пусă хуралĕ тăма черет тивнĕ, каç эпĕ килте пулаймастăп пулĕ. Иалăма каю çулма каятăп: те килейретпĕр çав каç, те килейместпĕр. Çумăр пулсан, тен ки-

леймĕпĕр те, çавăнпа эпĕ сана, хам çитеймесен, ман вырăна хурала каймăн-ши, тĕтĕп.

— Каятăп-çке,—терĕ Кавĕрле хавассăнах.

— Юрĕ, эпĕ сана куншăн пĕр çулталăклăха „Пионер сасси“ çыранса парăп, хам шăллăма, Хĕлипе, хурала пĕрле илсе кай. Пĕччен те хăрас çук эсĕ. Маттур пионер вĕт эсĕ. Сана Октябрь уявĕнче комсомола илетпĕр тесе сăмах тапратнăччĕ-ха пĕркун пирĕн комитетра.

— Çитĕ сире, мĕн çĕр варринче калаçса тăратăр?—илтĕнчĕ Кавĕрле ашшĕн сасси. Унччен те пулмарĕ, лупас айĕнче каранса тăракан шăналăк ăшĕнчен Кавĕрле ашшĕ тухрĕ, анасласа Кавĕрлепе Микула патне пычĕ.

— Кавĕрлене сăмах каламалли пурччĕ... Хам вырăна хир хуралне ярас тетĕп те, çавăнпа эпĕ çĕрлех килтĕм,—терĕ Микула.

— Илтетĕп те-ха эпĕ,—терĕ Кавĕрле ашшĕ,—пĕчĕкрех-ха вăл, Кавĕрле, айвантарах. Хуралтан Хĕлиппе иккĕше те çĕр варринче тарса килĕç вĕсем.

— Çу-ук? Хăрамастăп эпĕ!—терĕ Кавĕрле.—Пĕччен те каятăп.

— Хăрамалли те çук унта: ялтан инçе мар.

— Юрĕ эппин. Ытах, урăх çĕре каймалли тупăнмасан, хам та тухса пăхкалăп, е хамах тăрăп хуралне те,—килĕшрĕ Кавĕрле ашшĕ.

— Ырă каç пултăр,—терĕ те Микула, калитке патнелле утса кайрĕ.

— Чипер кай,—терĕ Кавĕрле ашшĕ, хăй вырăнĕ патнелле хуллен утса.

— Эсĕ мĕн, Тяпук пичче, кунта ларатăн?—илтĕнчĕ Микула сасси, калитке хупăнсанах.

— Ахалех, чĕлĕм туртса ларатăп-ха. Хăяр пахчине кайса пăхрăм та, иртсе килнĕ чух кунта чĕлĕм чĕртме лартăм,—илтĕнчĕ урамран Тяпук сасси.

Çын утса кайни илтĕнчĕ. Кăшт тăрсан, Микуласен хапхи шăнкăлт турĕ. Такамсем калаçса илчĕç. Колхоз карташĕ енчен тиха кĕçенни илтĕнчĕ.

Кавĕрле хир хуралне каясси çинчен шухăшласа кăшт выртрĕ те, урам шăпланса çитсен, çăлтăрлă кăвак пĕлĕте пахса çывăрса кайрĕ.

## II.

Кавĕрле ашшĕ кĕптĕрккке аттине сапласа ларать. Вăл—бригадăра капан тăваканни. Уяр пулнă пулсан,

колхозниксем вырса пăрахнă тулла турттарсан, Кавĕрле ашшĕ хирте капансем туса та лартатчĕ, тулă та типĕлле капана кĕретчĕ. Халĕ суратри кĕлтене те шыв каяс пур, те вăрăсем турттарса каяс пур. Ав Лешкас колхозĕнне пĕр çĕртех сакăр урапа тулă турттарса кайнă, теççĕ. Вăррисене шыранă—тупайман.

Кĕçĕр, сакар сехетрен пуçласа вуник сехетчен, Кавĕрлепе тепер 14 çулхи пионерăн Хĕлипĕн хире кĕлте хуралллама каймалла.

— Санăн, ывăлăм, халĕ кăнтăрла çывăрмаллаччĕ. Çĕрле, асту, хуралта çывăрса ан кай,—терĕ Кавĕрле ашше, ывăлĕ çине пăхса.

— Çу-ук! Эпĕ хуралта ыйăхламастăп.

— Эсир, вышка çинчен анса, час-часах Кĕтеснер çырми пуçнелле кайса çавrăнса килĕр. Çав Кĕтеснер çырми тăрах кĕлтесене турттарса кайма пултараççĕ,—тет татах ашшĕ.

— Эпир хуралта вышка çинчех ларса ирттерместпĕр ĕнтĕ, темиçе хутчен те кирлĕ вырăнсене кайса пăхса çÿретпĕр,—тесе Кавĕрле хаçатне сĕтел çине хучĕ те, ура çине тăрса, чÿречерен пахрĕ.

Кавĕрле—вунпилĕк çулхи ача, çÿллĕ, тĕреклĕ ÿт-пÿллĕ. Унăн пÿне пăхсан, вунçичĕ çулта темелле, анчах çавраka пит-куçĕ çамрăк, ачалла пăхать. Кавĕрле халĕ туллимар вăтам шкулта 7-мĕш класра вĕренет. Вăл кăвак блуза тахăннă, ун çинчен чĕн пиçиххи çыхнă, блуза тĕслĕ кăвак йĕмне ата кунчи ăшне кĕртсе янă.

Кавĕрле чÿречерен пăхса тăчĕ те, хура çÿçне аллипе шăлса илсе, хăй вырăнне ларчĕ.

— Чарăнмасть пулĕ ку çумăр паян та, каллех хура пĕлĕтсем хупарласа илчĕç,—терĕ вăл.

— Кĕçĕр çумăр çусан та, хурала каятăн-и?—терĕ амăшĕ, хăй саплакан михxине чÿрече патнерех илсе пырса, шăтăксем тата çук-ши, тесе пăхкаласа.

— Каятăп,—терĕ Кавĕрле хăюллăн.

— Каясса кай та, ан шăн,—терĕ амăшĕ.

— Каймалла çав,—терĕ ашшĕ, ывăлĕпе арăмĕ çине пăхса.—Хуралне хамах тăраттăм та-ха, ир çинче ирех района кайса килмелле.

„Аван манăн атте-анне,“ тесе шухăшларĕ хăй ăшĕнче Кавĕрле. Унăн ашшĕне кăçал çуркунне парти членĕн кандидатне йышăннине аса илсен, вăл ашшĕшĕн хĕпĕртесе савăнчĕ.

Çапла калаçкаласа ларнă хушăра Тяпук пичче пырса кĕчĕ. Тяпук лаптак питлĕ, лапчăк сăмсаллă, пиçĕкрех куçлă, хĕрĕх çулхи çын. Хура сухалĕ унăн, качака сухалĕ пек, малалла кăнтарса тăрать. Тяпук пĕрмаях чĕлĕмне хыпса çӳрет. Пĕркенсе килнĕ шăтăк сăхманне йăрхахран çакса ячĕ. Çара урипе хур пек лапкан пусса, алăк патĕнчен Кавĕрле ашшĕ çывăхнерех иртсе, сак çине пырса ларчĕ.

— Ну, юхтарать çумăр, ну, юхтара-а-а-ть. Çанталăкăн çумăр пăкăласа тăракан пăкки тухса ӳкнĕ пулĕ. Пăккине тупса, çумăр юхакан шăтăка пăкăласа лартасчĕ,—терĕ Тяпук.

— Ан та кала ку çумăра, чистах йăлăхтарса çитерчĕ. Кĕлте кӳрсе пăрахаймарăмăр,—терĕ Кавĕрле ашшĕ, саплаласа пĕтернĕ хăрах аттине çавăркаласа пăхса.

— Эй-эй-эй, çумăрĕ те çав мăшкăллану пек хăтланать. Колхоза сăтăр тунăннах туйăнать,—терĕ Тяпук, кулкаласа, тутисене такама тăрăхланă пек туса илсе.

Тяпук Кавĕрлесемпе хире-хирĕçех, пĕр кӳршĕре пурăнать. Кавĕрле ăна килĕштермест. Пĕррехинче Тяпук Кавĕрлене хаçат сарса çӳренĕ чух вăрçсах кăларса янă.

— Эсĕ ан ятлаç, эпĕ ирĕксĕр çырăнтармастăп,—терĕ Кавĕрле, Тяпук йĕркесĕр кăшкăрса пăрахнинчен тĕлĕнсе.

— Калаçса тăратăн тата! Ак тапса сиктерĕп те калаçăн вара!—терĕ Тяпук, пушшех чăрсăрланса.

Комсомолецсемпе пионерсем ваттисене колхоз çинчен ăнлантарнă чухне Тяпук çапла каларĕ, тет:

— Кĕрĕрех, колхозу пулин, хăварах. Манпа колхоз çинчен калаçса çăвар пылакне те ан ярăр.

Ку ĕç виç-тăват çул каялла пулнă. Халĕ те Тяпук колхоза кĕресшĕн мар, хăш чухне колхоз çинчен тăрахласа калаçать.

— Колхоз туллийĕ, ахаль те шултăраскер, çумăрпа шӳсе тата шултăраланать пулĕ, хе-хе-хе... Çанталăк... тĕнче... хе-хе-хе, ним тума та çук...—шăлне йĕрет Тяпук.

— Суратсене шанчăклă çынсем тунă. Шыв кайман, терĕç паян ирхине правленинче,—терĕ Кавĕрле ашшĕ, Тяпука пӳлсе. Тяпук, сӳннĕ чĕлĕмне çăварĕнчен кăларса, тепĕр хут табакне тултарса чĕртме тытăнать. Чĕлĕмпе аппаланнă май сăмаха урăх япала çинчен тапратса ярать.

— Вот, иртнĕ юнкун каç эпĕ питĕ хăрарăм. Çуралнăранпа та эпĕ ун пек хăраман. Ну, пулать вĕт япала. Çан-çурăм сăрлатса кайрĕ, çӳç-пуç вирелле тăчĕ. Чутах

чун тухса каятчĕ,—терĕ Тяпук, пӳртри ҫынсем ҫине пăхса.

— Мĕнтен хăрана вара эсĕ апла?—ыйтрĕ Кавĕрле амăшĕ.

— Эпĕ вăл каҫ Хиркассине хăяр катки кайса леҫрĕм. Каткин икĕ кăшăлĕ те татăлса кайнăччĕ те, кăшăл кайса ҫаптарам Катка Михалине, терĕм. Каткана парса хăварса, киле килме ҫĕрле тухрăм. Хурăл чанĕ вунпĕр ҫапрĕ. Ҫĕр тĕттĕм, куҫран тĕртсен те курăнмасть. Кашт ҫумăр пĕрĕхкелет. Утса пыратăп ҫулпала, Кĕтеснер ҫырми тĕлнелле ҫитетĕп. Сасартăк, такам ши-ши-и! шăхăрчĕ. Эпĕ ҫаплах утатăп. Тата хытăрах шăхăрчĕ, хăлха патĕнче шăхăрнăннах туйăнать. Эпĕ хытăрах утма тытăнтăм. Унччен те пулмарĕ, ҫавраҫил пĕтĕрĕнсе килчĕ. Мана ураран ӳкерес пек ҫил туллать. Эпĕ, утайми пулса, ҫул хĕррине лапчăнса лартăм та пите хупласа ларатăп. Сасартăк мана аларан кант! тытрĕ. Эпĕ пите уҫрăм: ах, тура! ман ҫумра вут куҫлă, майракаллă, качака сухаллă, ĕне чĕрни пек чĕрнисене шакăлтаттарса ташласа тăра парать. Ташларĕ, ташларĕ те, лапсака ҫăмлăскер, хĕрлĕ, вут-кăварлă чĕлхине ҫĕре ҫитиччен тăсса кăларса, ахăрса ячĕ. Эпĕ вилес пек хăрарăм.

— Ҫиетĕп сана, халь ҫисе яратăп,—тесе, мана чĕрнисемпе пуҫран кукалеме тапратрĕ. Чун тухас патнех ҫитрĕ, аран чĕре анине тытма ĕлкĕртĕм. Тата пăртак тăнă пулсанах, вилсе каяттăм пулĕ те, анчах Лешкасра автан авăтса ячĕ. Автан сасси илтĕнсенех, хайхи темскер пачах куҫран ҫухалчĕ. Пăхатăп: чăнка ҫыран хĕррине пынă та, тĕпсĕр ҫырмана йăванса каяс пек тăратăп. Урана пĕрре ярса пуссанах, пĕтетчĕ пуҫ. Арҫури, мана аташтарса, Кĕтеснер ҫырмин икĕ юппине илсе пынă. Ҫав тĕпсĕр ҫырмана сиктерсе, арҫури мана вĕлересшĕн пулнă та, анчах автан авăтса ячĕ. Вилĕм ҫитмен-ха манăн, телей пур ҫапах. Аран-аран тăна кĕтĕм. Турра асăнса, сăхсăхса, аранах киле каймалли сукмак ҫине тухкаларăм та вара чиперех киле ҫитрĕм.

— Суятăн пулĕ, Кĕтеснер ҫырми таврашĕнче арҫури пур тенине илтмен-ҫке эпĕ,—терĕ Кавĕрле аппăшĕ.

— Суйса мар ара, хам куҫпа хам куртăм,—терĕ Тяпук ĕнентерсе. Каллех чĕлĕмне паклаттарса, хăй йĕри-тавра чĕлĕм тĕтĕмĕ сарса, Тяпук ҫаплах пакăлтатать.

— Арҫури ҫук, теҫҫĕ. Эпĕ хам та, ҫакна куриччен, ҫук теттĕм. Хăраса чутах вилмерĕм. Кĕтеснер ҫырми таврашĕнче арҫури курăнкаланине яланах калакалаҫҫĕ.



...ВАШСКАЯ
...КНАЯ ПАЛАТА
Чебокс... АССР

Елĕк-авал Çĕрпӳ тимĕрçи кайса вилнĕ, тет, çав çырмана, вăл халĕ те хăрататъ. Пуринчен ытла юнкун каç çумăр пулсан, пит алхасса çӳрет, теççĕ.

— Паян юнкун каç мар-и çак?—терĕ Кавĕрле амăшĕ. Кавĕрле шарламасăр итлесе ларать.

— Хăш чух çырмари чулсене мăлатукпа персе çӳрет, тет,—палкать Тяпук.

— Юмах юптаратăн эсĕ, Тяпук,—терĕ Кавĕрле ашшĕ.

— Кĕçĕр хуралтан арçури тытса кил,—терĕ амăшĕ,— курар арçурине, мĕнле тĕслĕ-ши вăл.

— Кăмзка çинче ларакан сӳтĕлнĕ карчăксен юмаххипех хăрас мар-ха,—терĕ Кавĕрле.

— Эпĕ хам нихăçан та курман çав арçури таврашне, курман япалана çуках, тетĕп. Кĕтеснер çырми хĕррине, колхоза кĕриччен, çĕрле пĕр пĕчченех лаша çитерме каяттăм, нихăçан та нимĕн те курман,—терĕ Кавĕрле ашшĕ, юсаса пĕтернĕ тепĕр аттине сакайне лартса. Вара Тяпук çине пăхрĕ те:

— Кала чăннипе, мĕн пустуй сăмахласа ларатăн, арçури куртăм тесе?—терĕ.

— Пустуй пулсан, пустуй пултăр. Эпĕ, арçурине эсĕ курнă, тесе каламастăп вĕт, хам курнă та, хам калатăп,— терĕ Тяпукĕ.

Кăшт калаçкаласа ларсан, Тяпук, сăхманне пĕркенсе, тухса кайрĕ.

Кавĕрле каллех хаçат вулама тытăнчĕ. Ашшĕ чӳречерен пăхса илчĕ.

— Э-э-э, çутăлса килет! Иртет ĕнтĕ çумăр,—терĕ вăл кăмăллăн.

Чăн та, кăшт тăрсан, çумăр чарăнчĕ. Хĕвеланăçĕенчен хура пĕлĕтсем сирĕле пуçларĕç. Пĕлĕт хĕрри çуттăн курăнчĕ, уяртать. Ав хĕвел те, пĕлĕт таткисене сирсе, Кавĕрлесен карташĕнчи чӳречинчен пăхать.

Çанталăк уяртни Кавĕрле ашшĕн ĕçлес килнине хăпартрĕ. Хăвăртрах района кайса килес те ыран ирех капан тума тытăнас тесе, сапласа пĕтернĕ аттисене тăхăнса, колхоз правленийĕ еннелле тухса утрĕ. Кавĕрле амăшĕ каçхи апат пĕçерме тытăнчĕ. Кавĕрле урама тухрĕ. Унта, çерем çинче, çумăр хыççăн ачасем пухăннă та лапталла выляççĕ.

III.

Хӗвел анса лариччен чылай маттан Кавӗрле, каҫхи апат ҫисе, хурала кайрӗ. Амӑшӗ, алкум вӗҫне тухса: „Ан хӑра, ывӑлӑм, астусарах ҫӳре“,—тесе юлчӗ.

Колхоз вышкийӗ тӗреклӗ, аван. Тӑррине хӑма витнӗ те, хӗвелтен те ҫумӑртан та хӳтлӗх пур. Пӗр урлӑ кашта ҫине чан ҫакнӑ. Чанпа юнашар фонарь ҫакӑнса тӑрать.

Кавӗрле, вышка ҫине хӑпарса, йӗри-тавра пӑхкаласа тӑма юрататъ. Вышка ҫинчен питӗ инҫе курӑнать. Ав Атӑл хӗрри халӗ кӑвакккӑн, уҫҫӑн курӑнать. Аваталла каякан пароход шап-шурӑ, ача тетти пек пӗчӗккӗ курӑнать. Хӗвеланӑҫӗ хӗп-хӗрлӗ. Хӗвел вакӑ пӗлӗтсем хыҫне анса ларать, вӗсене вут хыпнӑ пек хӗрлӗ ҫу хӗретет.

Ҫанталӑк тӳлек. Таҫтарах курак сасси илтӗнет. Вышка ҫинчен пӗтӗм колхоз хирӗ, ҫаранӗ, пахчасем, ферми, колхозӑн йышлӑ капанӗсем те ывӑҫ тупанӗ ҫинчи пек курӑнаҫҫӗ. Ферма хӗррипе юханшыв, авкаланса, хӗвеланӑҫ ҫуттинче хӗрелсе, юхса выртать.

Ҫаран ҫинче, шыв хӗрринче, хур-кӑвакал ушкӑнӗсем курӑнаҫҫӗ. Пӗр хурне тем пулнӑ, хытӑ какӑлтатса ҫухӑрать. Хур сасси, уҫҫӑн янӑраса, аякка илтӗнет. Ҫуртырри пуссинче колхозӑн сурачӗсем пит ҫӑра курӑнаҫҫӗ. Ав тулӑ сурачӗсем... Мӗҫе вӗсем? Куҫтан суса тухма ҫук, анчах Кавӗрле пӗлет: сакӑрҫӗр алла икӗ сурат.

Ав, Кӗтеснер ҫырмийӗ те кунтах. Тулӑ пусси лӑп Кӗтеснер ҫырмине перӗнет. Тискер Кӗтеснер ҫырми—пысӑк, темиҫе юплӗ, хӗрлӗ ҫыранлӑ ҫырма курӑнса, сарӑлса выртать. Хӗрлӗ ҫырӗ уйӑп юплӑ аш пек, такам ҫӗр кӑкрине пысӑк, улӑплӑ ҫӗҫӗпе касса суранлантарнӑ пек туйӑнать. Ҫырма варрипе кукӑркаланса ҫул каять, пӗчӗк ҫул аран-аран палӑрать. Ку ҫулпа чул кӑларма ҫӳрекелеҫҫӗ. Ҫав ҫула пӑхса, Кавӗрле ашшӗ сӑмахне—„Кӗтеснер ҫырми тӑрӑх кӗлтесене турттарса кайма пултараҫҫӗ“ тенине аса илчӗ. Тяпук пичче арҫури ҫинчен каласа кӑтартнине те аса илчӗ.

Хӗвел хуллен анса ларчӗ. Хӗрлӗ хӗмлӗ хӗвеланӑҫӗ майӗпен шупкалчӗ, сӳнчӗ. Тавралӑх сисӗнкӗсӗр тӗттӗмленет. Сапаланчӑк, унта-кунта таткаланса юлнӑ ҫумӑр пӗлӗт татӑкӗсем мал еннелле шӑваҫҫӗ, хӑйсен ушкӑнне хӑва-

ласа ҫитесшĕн васкаса чупнă пек туйăнать. Хура пĕлĕт таткисем хушшинчен янкăр кăвак пĕлĕт уҫăлса юлать те, ҫутă ҫăлтăрсем курăнма тытăнаҫҫĕ.

Кавĕрле вышка ҫинчен унталла-кунталла пăхкаларĕ, вышка ҫинче фонарь ҫунать, анчах ҫутти аякка ӳкеймест, пĕрункă ҫутă анчах курăнать. Халĕ пушшех тĕттĕм курăнать. Кичем, пĕччен юлсан. Фонарь ҫуттинче ҫĕрлехи лĕпĕшсем вĕҫкелесе ҫӳреҫҫĕ. Ниҫта ним сасă-чĕвĕ илтĕнмест.

Кавĕрле вышка ҫинче кăшт ларчĕ те йĕри-тавра пăхкаласа илчĕ. Вара, юман чукмарне хулпуҫҫи ҫине хурса, хуллен вышка ҫинчен анчĕ. Кăшт итлесе тăчĕ те утрĕ. Никам та ҫук. Пĕр пĕччен. Ялта хурал чанĕ вуннă ҫапрĕ. Пусăра шăпăрт.

Ҫав вăхăтра Кĕтеснер ҫырминчен пĕр ҫын хура мĕлкен тухрĕ те, пит хуллен ҫеҫ, куккук пек авăтса илчĕ. Ăна хирĕҫ часах тепĕр сасă ҫавнашкалах илтĕнчĕ. Пусă енчен ҫырмаран тухнă ҫын патне тепĕр ҫын пычĕ.

— Килтĕр-и эсир? Миҫен?—терĕ пусăран пыни.

— Ултă лавпа килтĕмĕр,—терĕ ҫырмаран тухнă мĕлке.

— Ҫурҫĕрччен икшер хутлама ĕлкĕрес пулать. Хурала килмелле ачана, Кĕтеснер ҫырми таврашĕнче арҫури пур, тесе каласа кăтартрăм. Ачи вара хăлхасене тăратсах итлесе ларчĕ. Паян ĕҫ тухать. Эсир тийĕр, эпĕ вышка патнерех кайса сыхлам. Ача киле пуҫласанах, эпĕ арҫури пек пулса хăрататăп ăна. Нумай кирлĕ мар ача-пăчана; килне каймасан та, вышка ҫинчех ларса иртterĕ. Ашшĕ килте ҫук, района тухса кайрĕ пулас.

— Ну, илсе килĕр лавсене, тийĕр. Эсир ĕҫлĕр, эпĕ ташлам,—терĕ те пусăран килнĕ ҫын, шăппăн кулса илчĕ.

Ҫапла калаҫса татăлса, икĕ ҫын уйăрăлчĕҫ. Пĕри кайрĕ ҫырма тĕпĕпе, тепри, сыхланса, суратсем хыҫĕпе вышка еннелле суланчĕ.

Ҫав вăхăтра Кавĕрле вышка патĕнчен Кĕтеснер ҫырми патнелле пĕр пĕччен утать. Ҫанталăк паҫăрхинчен ытларах уяртнă, сивĕрех пек. Пĕлĕт ҫинче ҫăлтăрсем халĕ йышлăрах, шултăрарах курăнаҫҫĕ, халĕ суратсем те лайăххăнах курăнаҫҫĕ!

Сасартăк, тулă сурачĕсем хыҫĕпе темĕн мĕкĕлтетсе, Кавĕрлене хирĕҫ пыни курăнчĕ.

— Мĕн-ши ку?—тесе, Кавĕрле шартах сикрĕ.

Ҫав самантрах хăйне хăй: „йытă пулĕ вăл“, тесе йăпатрĕ. „Павăл пиччесен пысăк, лапсака ҫăмлă хура

йытă пур, çавă пулĕ", тесе, Кавĕрле ăна шăхăрса чĕнчĕ. Ним сас-чĕвĕ те пулмарĕ. Хура мĕлке таçта суратсем хыçнелле пулчĕ. Каверле чаранса пăхса тăчĕ. Алливчи йывăр чукмарĕпе пеме хатĕрленсе, чукмарне икĕ аллипе хытă тытрĕ.

— Ши-и-ши!ши-у-ик!—шăхăрни инçе те мар илтĕнчĕ.

— Кам вăл?—терĕ Кавĕрле, хыттăн çĕрлехи шăплăхра сассине янтратса. Унччен те пулмарĕ, пысăк хура мĕлке, сурат хыçĕнчен Кавĕрле патне сиксе тухса, мĕкĕлтетсе пырать... Урисемпе тапăрт-тапăрт тугарса, сиккелесе илет. Пуçĕ çинче майрака пекки лăс-лăс тăвать. Кавĕрле патнелле сиксе пырать. Кавĕрле, пит хăранипе, пĕтĕм вăйĕпе мĕлкене чукмарпа яра пачĕ.

— Ай-ай-ай!—тесе хаярран йăнăшса ячĕ çын сасси. Çавăнтах мĕлке кайса ӳкрĕ. Кавĕрле, вĕриленсе кайса, шăла çыртса, мĕлкене тата темиçе хут чукмарпа çапса илчĕ. Хашкать, чăрсăрланса кайнă.

— Ай, урана хуçрăн! Ай, ан хĕне, тархасшăн, эпĕ ахаль вĕт,—терĕ Тяпук хăй сассипех.

— Мĕншĕн килтĕн эсĕ кунта?—терĕ Кавĕрле, çиленсе, хыттăн, сывлăшне çавăрса яраймасăр хашкаса.

— Ахаль, эпĕ сана хăратса пăхас, терĕм. Ай-ай-ай, эсĕ ман урана амантрăн! Ой, утма çук,—терĕ йăнăшса Тяпук. Ури çине тăма хăтланчĕ, тăраймарĕ, йăванса ӳкрĕ.

-- Ой, пĕтрĕм, пĕтрĕм! Ахалех чăрсăрланса кӳсекпе[1] петĕн эсĕ мана. Ой, ыратать,—йăнăшать Тяпук.

Çав вăхăтра Кĕтеснер çырми енчен тепĕр мĕлкĕ килнине курчĕ Кавĕрле. Сăнаса лăпчăнса пăхрĕ те вăл çулсăр çĕртенех лавсем пуссалла кĕвине курах кайрĕ. „Кĕлте вăрлама килеççĕ",—тавçăрса илчĕ вăл. Тяпука ним шарламасăр, суратсем хыçĕпе йăпшăнса, Кавĕрле лавсем çывăхнелле пырать. Пăхать,—лавсем чаранчĕç. Ултă лав. Çыннисене паллама çук. Çынсем хăвăрт тулă сурачĕсене тиеме тытăнчĕç. Кавĕрле те васкаса вышка патнелле чупрĕ. Чупса çитрĕ те, вышка çине хăпарса, чан çапса ячĕ.

— Тан! тан! тан!— вĕçĕмсĕр, пушар чавĕ пек вышка çинчен чан сасси илтĕнет. Ялтан та сасăсем илтĕнчĕç, йытăсем вĕрме пуçларĕç. Кăшт тăрсан, колхозран виçĕ юланутлă çын тата милиционер чуптарса çитрĕç.

— Мĕн пулнă?

---

[1] Кӳсек—пысăк патак, ал туйи, чукмар.

— Вăрăсем-и?

— Ăçта?—тесе кăшкăраша ыйтаççĕ.

— Вăрăсем... Улта лав. Кĕтеснер енче!—терĕ Кавĕрле вышка çинчен çĕрелле пăхса.

Юланутсем Кĕтеснер çырми еннелле çил пек вĕçтерчĕç.

Часах ялтан çуран çынсем те чупса киле пуçларĕç. Çынсем пухăннăçемĕн пухăнаççĕ. Пурте Кĕтеснер çырми еннелле чупаççĕ. Çăри-çари! Шай-шай! Такам пăшал персе ячĕ. Кăшт тăрсан, çынсем кăшкăрашни аякра илтĕнчĕ.

— Кунта! Кунта!—илтĕнчĕ ферма хуралçин сасси.

— Тытăр! тытăр! Пўлсе илĕр!—тет такам, хытă кăшкăрса. Такам такама хаяррăн кăшкăрса пăрахрĕ. Çăри-çари! турĕç. Вара сасăсем тата аяккарах кайрĕç, хуллентерех илтĕнме пуçларĕç, каярах ним илтĕнми те пулчĕ.

Çурçĕр иртсен, вăрăсене тытса тавăрăнчĕç. Икĕ çынна çеç тытма ĕлкĕрнĕ, ыттисем тарнă. Вышка патне колхозниксем нумай пухăннă. Тяпука та унта илсе пырса вырттарнă.

— Ну, Тяпук, паллатăн-и юлташусене?—терĕ милиционер.

— Çук, палламастăп,—терĕ Тяпук тарăхса.

— Пире Тяпук вĕт... Икĕ хутчен пычĕ пирĕн яла, кĕлте тиеме йыхăрса,—терĕ тытса килнĕ çынсенчен пĕри. Хăйĕн сăхманĕ хулпуççи çинче çурăлнă, шурă кĕпи курăнать, куçĕ-пуçĕ саланса кайнă; харавçăланса пăхкалать. Фонарь çуттинче пичĕ кĕл пек шурă курăнать. Унăн çамки урла юнлă йĕр курăнать, çара пуçăн, калаçна чух сасси чĕтрет. Тяпука тата икĕ ют çынна милиционерпа колхозниксем ялсоветне илсе кайрĕç.

Тепĕр икĕ кунтан пионерсен хăйсен отрядĕнче тухакан стена хаçачĕ çинче:

„МУХТАВ КАВĔРЛЕНЕ!"

ятлă статья кăларнă. Статьяра кĕлте вăррисене тытни çинчен, вĕсене суда пани çинчен тĕплĕн çутатса панă. Кавĕрлене вăрăсене курса тыттарнăшăн ырланă. Статья çак сăмахсемпе пĕтнĕ:

„...Кавĕрле хăй ççне тĕплĕ, вĕçне çитиччен тĕрĕс тунăшăн, класс тăшманĕ муталанă пулин те, колхоз пурлăхне çаратакансене курса тыттарнăшăн тав туса, колхоз правленийĕ маттур Кавĕрлене велосипед илсе пама йышăнчĕ".

---

1935.

## ПĔЧĔК КОЛХОЗНИКСЕМ

*Калав*

I.

Кăркуç çĕрле, вунă сехет тĕлĕнче, килне таврăнчĕ. Çыврăма выртнă амăшĕ Кăркуçа кăмăлсăр мăкăртатса, ахлатса, тăрса уçрĕ. Краççынне кăштăртатса пырса çутрĕ. Хĕсĕкрех куçĕсене уçса ярса çутта пăхаймасăр питне-куçне пĕркелесе илчĕ те Кăркуçа ӳкĕтленĕ сасăпа:

— Шартлама сивĕре те таçта чупса çӳретĕн. Тумтирру ытла та çӳхе. Шăнса пăсăлăн, ачам!

— Эпир урамра çӳремен вĕт. Шкулта пухăнса лартăмăр,—терĕ Кăркуç. Унтан саплăклă пиншакне хывса пăтана çакса ячĕ.

— Çĕрулми, ав, сĕтел çинчех, çи!—терĕ те амăшĕ вырăнĕ çине кĕрсе выртрĕ.

Кăркуç вуникĕ çулхи лутрарах, хура пуçлă ача. Мăйĕнче пионер галстукĕ. Шурă пир кĕпе, кăвак йĕм тăхăннă. Урине çĕтĕкрех çăмталапа çăпата сырнă.

Кăркуç аллине çуса сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ. Алшăллипе витсе хунă çăкăра касса илчĕ те сивĕ çĕрулмине тăварпа пусса çиме тытăнчĕ. Уй улми пек вĕтĕ çĕрулми, кăмакана хывса пĕçернĕскер, чĕн пек, пĕрре те тутлă мар. Шуратнă чух алла сыпăçать. Кăркуç ялхуçалăх выставкинче курнă çĕрулмине аса илчĕ. Мĕн тĕрлĕ шултăра, таса çĕрулмисем! Çиме те вĕсем тутлă, кĕрпеклĕ пулмалла! „Кĕл сапса лартнă çĕрулми", тесе çырса çапнăччĕ. „Эпир те колхозра килес çул çĕрулмине те, тырра та кĕл сапса туса пăхар-ха", терĕ Кăркуç хăй ăшĕнче. Хăйĕн шухăшне унăн амăшне пĕлтерес килчĕ.

— Анне...—терĕ вăл йăвашшăн.

— Мĕ-ĕн?—терĕ амăшĕ анаслакаласа.

— Эпир паян, колхоз ачисем, пурте пионерсем, шут туса лартăмăр. Пĕр ĕç тума тытăнас тетпĕр.

— Мĕн çинчен шут турăр апла? Халĕ эпир колхоза кĕни те икĕ эрне кăна вĕт?

— Эпир хамăрăн пухура тырпул тухăçне хăпартас тĕлĕшпе ĕçлессине сӳтсе-яврăмăр.

— Пĕчĕккĕскерсем мĕн тыра-пулă тума пĕлетĕр эсир? Пысăкрах чĕлĕ çăкăр касса тыттар сире, çавă çеç, урăх ним те мар,—терĕ амăшĕ.

— Чим-ха, апла ан кала, анне! Эпир хамăр мĕн тума пултарнине йышантăмăр. Пирĕн касра çичĕ ача вĕт. Çичĕ ача икĕ ушкăна уйарăлтăмăр. Мишша, Хветле, Таруç, эпĕ—пĕр ушкăн. Пирĕн бригада кĕл пухать. Пуçлăхĕ эпĕ. Маруç, Ксенти, Вавиле—тепĕр ушкăн. Кусем пасар урамĕнчи тислĕке пухаççĕ. Çурччен халĕ чылай тислĕк, кĕл пухма пулать. Халĕ пурте пекех улăм хутаççĕ вĕт.

— Тислĕкĕ ентĕ çĕре çемçетет, кĕле пухни мĕне кирлĕ-ши? Ку ĕмĕрте пулман япала. Улăм кĕлне ăна авалтанпах çырмана тăкнă. Улăм кĕл вăл никама кирлĕ мар, ура айĕнчи япала, эсир ăна пухас, тетĕр. Кĕле пухассине сире, ача-пăчана, кам та пулин суйса кăтартнă пулĕ,—терĕ амăшĕ пăшăрханнă сасăпа.

— Никам та суйман, анне. Кĕл тăпрана аванлатнине пире шкулта учитель каланă, хам та кĕнеке çинче вуланă. Выставкăра та кĕлпе лартнă çĕрулми раснах шултăра, йышлă, таса пулнине куртăмăр. Манăн шухăш ĕнтĕ мĕнле те пулин улăм кĕлне те, йывăç кĕлне те нумайтарах пухасси çинче çеç. Асту, хамăр кĕле пĕрре те çырмана ан тăк. Çĕршĕн кĕл питех те усăллă.

— Тăкман-ха ку таранччен. Пĕркун кĕле тăкас мар тесе кашни кунах йăнкăртатрăн та каткасем çине тултарас терĕн те... икĕ катка тулнă ĕнтĕ, урăх хывмалли савăт та çук.

— Ан тăк кĕле. Савăтне тупăпăр. Пирĕн бригада Вавилесен бригадине ăмăртăва чĕннĕ. Вавилесен пĕр пасар хыççăн та тислĕк пухмасăр ирттермелле мар. Пирĕн, тăватсăмăрăн, кашни ачан колхозниксенне пилĕкшер килтен кĕл пухмалла.

— Юрĕ ĕнтĕ, аппалаŀăрах. Ача-пăчан мĕн те пулин туса куна-çĕре ирттерес пулать,—терĕ амăшĕ анасласа.

Кăркуçа амăшĕ кун пек калани кăмăлсăрлантарчĕ. Çавăнпа та Кăркуçăн бригада ĕçĕсем çинчен амăшĕне малалла калаçасси те килмерĕ. Кăркуç çинĕ-çимен сĕтел хушшинчен тухрĕ. Çĕрулми çыпăçса пĕтнĕ пӳрни вĕçĕ-

сене алшăллине шăлкаларĕ. Урине салтма алăк патнелле кайса ларчĕ.

Амăшĕ çывăрса та кайнă. Пӳрт кĕтесси хӳлт! турĕ—сивĕ шаккарĕ. Ах, çав сивĕ çанталак! Мĕншĕн пулатьши çав сивĕ çанталăк? Кăркуçа хăш чух кивелсе, çӳхелсе кайнă пиншакпа ытла та сивĕ-çке!

Кăркуç ура салтса ларнă хушăрах, шухăшпа кайса, хура куçĕсене пĕр çĕре тĕллесе пăхса тăчĕ. Ашшĕне аса илчĕ. Тĕлĕкри пек кăна астăвать вăл ашшĕне. Пĕррe Кăркуçа ашшĕ çурăм çине лартнă та çĕклесе пырать. Ăшă, сап-сар хĕвел пăхать. Ашшĕ лаша пулса карташĕнче чупанçи пулать, сиккелеме хăтланать. Кăркуç „пахха" çинче, ахăлтатса кулса ларса, пырать. Ашшĕне хăлхинчен ярса тытнă. Кăркуç ун чухне пĕчĕккĕ пулнă,— те виççĕре, те тата пĕчĕкрех...

Тата астăвать: çумăр çунă кун ашшĕне тупăка хурса килтен турттарса тухса кайрĕç. Ун чухне амăшĕ питĕ хытă йĕчĕ...

Кăркуçа кӳршĕ арăмĕ: аçу ăçта? тесе ыйтсан—атте хулана кулачă илме кайнă, тесе калама вĕрентнĕччĕ. Ăс пĕлеччен Кăркуç ашшĕ хулана кайнă тесех пурăннă-и тен, анчах Кăркуç халĕ ашшĕ ял пуянĕсем персе вĕлернине пĕлет. Тĕттĕм кĕрхи çĕр, ашшĕ пухуран таврăннă чух, ял куштанĕсем ăна вăрттăн пăшалпа пенĕ. Кăркуç ашшĕ паллă активист, ялкор пулнă, теççĕ...

Çитмен, выçла-тутлă пурăнăçа Кăркуç пĕчĕклех туйса çитнĕ, хăш чух выçăхса çӳрени те темĕн чул пулнă. Тăхăр çулхи Кăркуç кĕтӳ те кĕтет, пахча хуралçи те пулать.

Пуринчен ытла Кăркуçа анисене сухаласа шуратса хăварасси мăйран каснă. Пĕр çур çитсен амăшĕне иккĕш йĕре-йĕре тенĕ пекех çынсенчен лаша ыйтса çӳретчĕç. Ах, канçăрччĕ-çке! Мĕн чухлĕ тархасласа пуççапнă пуяна! Хăш чух икĕ ятак анине те çурмалла акма тиветчĕ те—каллех выçăхса хĕл каçмалла! Кăçалтан ирттĕр, пĕттĕр асаплă пурăнăç! Кăçал колхоз пулчĕ. Кăркуç амăшĕ колхоза чăн малтан кĕчĕ. Кăçалхи çур *ĕнтĕ Кăркуçпа амăшĕн пуянсенчен суха тума лаша кĕлесе çӳрес çук! МТС-ран трактор килĕ те, колхоз çĕрне сухаласа та пăрахĕ. Мĕн тĕрлĕ ырă çав колхоз пулни!.. Кулаксен ĕнтĕ шăпи тулчĕ. Вĕсем текех хăратаймĕç. Тĕп вăй колхоз пулĕ!..

Урине салтма маннă Кăркуçăн шухăшĕсем тăван колхоз çине пырса тăрăнсан, куçĕсем те, тутисем те кулса

ячӗҫ. Вӑл, амӑшӗ хыҫне кӗрсе выртас тесе, сиксе тӑчӗ, вырӑн патнелле ярса пусрӗ, пӑхать—хӑрах урине салтнӑ, харах урине салтман. Кӑркуҫ урине салтса, тӑли-ҫӑпатине кӑмака ҫине пӑрахса, краҫҫынне лап сӳнтерчӗ те, вырӑн ҫине хуллен пырса выртрӗ.

II.

Тепӗр кун Кӑркуҫ шкула каймарӗ—канмалли кун пулчӗ. Шкула каяс вӑхӑтра Кӑркуҫ колхоз председателӗ патне, Петюк пиччӗш патне тухса чупрӗ.

Петюк сарӑ сухаллӑ, ӑша куҫлӑ вӑрӑм ҫын. Кӑркуҫ пырса кӗнӗ чух вӑл пӳртӗнче пӗчченех машинӑпа пичетленӗ хута пӑхса ларатчӗ.

— Мӗн хыпарпа вӗҫсе килтӗн, шӑнкӑрч,—терӗ Петюк, куҫне хут ҫинчен илсен.

— Ҫураки кампанине ирттерме эпир те, хамӑр колхоз ачисем, хутшӑнас, тетпӗр. Пирӗн лозунг—колхозри тырпулӑн тата ытти ҫимӗҫсен тухӑҫне хӑпартма пулӑшасси,—терӗ Кӑркуҫ шкулти пек уҫҫӑн. Хӑй Петюка хура куҫӗсемпе шӑтарас пек пӑхать. Сӑмахсене каланӑ чух пӗчӗк тутисем хӑвӑрт сикеҫҫӗ.

Петюк ача ҫине пӑхса тӑчӗ те ӑшшӑн кулса илчӗ.

— Лозунгӗ калама та ҫук хитре-е! Лар-ха сак ҫине!

— Эпир ҫак лозунга пурӑнӑҫа кӗртес тесе тислӗк, кӗл пухас тетпӗр. Эпир икӗ бригадӑна уйӑрӑлтӑмӑр,—терӗ Кӑркуҫ сак ҫине ларса. Пӗр бригадирӗ эпӗ, тепри—Вавиле.

— Маттурсем! Аван шутланӑ-ҫке эсир,—терӗ Петюк Кӑркуҫпа юнашар пырса ларса. Петюкӑн куҫӗсем ҫуталса хитреленсе кайнӑ пек пулчӗҫ. Кӑркуҫ ҫине йӑвашшӑн пӑхса ӑна сисӗнкӗсӗр савса илчӗҫ.

— Ӗҫлӗр, ӗҫлер! Тырӑ-пулӑшӑн кӗрешни—социализмшӑн кӗрешни...

— Ӗҫлес тетпӗр. Пире кӗл пухса хумалли вырӑн кирлӗ пулать, ҫавӑнпа килтӗм,—терӗ Кӑркуҫ.

Петюк кӑшт шухӑшласа ларчӗ те тӑрса кантӑк патне пычӗ.

— Кӗл пухса хумалли вырӑн пур пирӗн. Хитре вырӑн. Кӗл пухма ягнех темелле. Кил-ха кунта!

Кантӑкран, ҫырма леш енче, Ларик хуҫанӑн пулнӑ акӑш-макӑш вӑйлӑ ҫурт курӑнать. Икӗ хутлӑ пӳрт, ампарсем, витесем... Пӗтӗмпех чул. Ӗлӗк Ларик хуҫа хӑмлапа, тырӑпа сутӑ тунӑ. Ку ҫурта халӗ пӗтӗмпе колхоза

панӑ, анчах колхоз халӗ кӑна пуҫланнӑ пирки ҫуртпа усӑ курман. Халӗ унта вулав ҫурчӗ, ялсовет канцелерӗ. Пӳртӗнче яслӗ тума, пурӑнмалли пӳлӗм тума та вырӑн ҫитет. Ҫурт-йӗрӗ тавра улмуҫҫи пахчи... Пӗтӗмпе ывӑҫ тупанӗ ҫинчи пекех курӑнчӗ.

— Куратни, Ларик анкартинче, ҫырмара, карта хӗрринчех пӗр пӗччен ҫурт ларать?—терӗ Петюк ҫырманалла тӗллесе.

— Куратӑп,—терӗ Кӑркуҫ, пуҫӗпе сулса.

— Ҫавӑнта пухас кӗле. Унта ҫил те, юр та, ҫумӑр та кӗмест. Кӗл типӗ тӑма пултарать.

— Юрать, ҫаванта пухӑпӑр. Пире кӗле турттарса пыма та аван. Сӑртран лар та, тӳрех ҫырма тӑрӑх ҫунашкапа анкарти кӗтессине ярӑнса ҫитетӗн,—терӗ Кӑркуҫ ҫырманалла пӑхса.

— Ну вӑт, сире те аван. Анчах асту: вӗри кӑварлӑ кӗле кунта хума юрамасть. Пӗлес ҫук, таҫта хӗрлӗ автан та сиксе тухса ташласа илӗ. Вӗри кӗлтен хыта сыхланӑр.

— Ӑна астӑвӑпӑр, астӑвӑпӑр, Петюк пичче. Кӑварлине, вӗри кӗле кунта хума юраманнине пӗлетпӗр. Вӑт тата пӗр самах пур...

— Мӗн-ха тата?

— Кашни ачана тислӗк пухма та, кӗл пухма та пӗрер ешӗк кирлӗ пулать. Ларик хуҫан сарайӗнче ешӗксем туллиех, пысӑкки те, пӗчӗкки те пур.

— Юрӗ, юрӗ, парӑпӑр. Хӑшне кӑмӑллатӑр, ҫавна илӗр.

— Паянтан эпир кӗле пухма тытӑнатпӑр эппин,—терӗ Кӑркуҫ. Тухса каймa алӑк патне пычӗ.

— Ӑҫта васкатӑн? Лар-ха!

— Каяс-ха. Паян, шкула кайман кун, колхоз членӗсене бригада кӗл пухма пулни ҫинчен каласа ҫӳрес... Сывӑ пул!

III.

Хӗллехи ӑшӑ кунсенче, каҫ пула пуҫласан, тӑвайккинче вара ача-пӑча кӗшӗлтетет. Кӑшкӑрашаҫҫӗ, калаҫаҫҫӗ, кулаҫҫӗ. Ҫырма леш айккинче вӑрман пек курӑнса ларакан йӑмрасем хушшинче ача-пӑча сасси янӑрать! тӑвать. Ачасем хӑшӗ пӑркутпа, хӑшӗ ҫунашкапа, хӑшӗ йӗлтӗрпе ҫырма пуҫӗнчен, сӗвек ҫӗртен ярӑнма тытӑнаҫҫӗ те, ҫырма тӑршшӗпе кӗрлеттерсе Ларик анкартийӗ патнех ҫитеҫҫӗ. Анчах яланах, кашни ачах аван ярӑнса анаймасть. Ҫырмара ҫул

айккипе кӗл тӑкса кайнӑ. Илемсӗр. Хуп хура куранса выртать. Хӑш-хӑш тӗлте кӗл купи-купипех. Ҫунашка е пӑркут ҫӗмӗрен пек виркӗнсе аннӑ чух ӑнсӑртран кӗл куписем ҫине пырса кӗрсен, сасартӑк тап чарӑнать, йӑванса каять. Ларса пыран ачи тӑранса ӳкет. Мӑкӑл-макӑл йӑваланса ывтӑнса каять. Пиче-куҫӗ хуп-хура кӗл, пӑхма та хӑрушӑ, тумтирринчен кӗл вӗҫет. Ача вара кӑмӑлсӑрланса, хӑш чух ыратнипе йӗрсе, ҫунашкине сетӗрсе каялла хӑпарать, ӑшӗнче ҫав хура кӗле ятлать, кӗл пырса тӑкаканне курсан тем туса пӑрахӑччӗ. Кам тӑкать-ши кунта кӗле?—Пурте, кам кӗл хакне пелмест, кам кӗле пухса хумасть, пурте кунта ҫырмана килсе йӑвантараҫҫӗ.

— Ҫурхи шывпа юхса каять,—теҫҫӗ инкесем, аппасем, асланнесем! Шыв ӑсма ҫырмана аннӑ чух вара пурӑкна кӗлне те ҫаклатса тухаҫҫӗ. Хӑш чух яранма каякан ачине:

— Кӗле ҫунашка ҫине лартса тухса ҫырмана йӑвантарса хӑвар-ха,—теҫҫӗ.

Ачи вара кӗле ҫырмана илсе пырать. Пысӑккисем кӗле ӑҫта тӑкнӑ, вӑл та ҫавӑнта йӑвантарать. Яранса аннӑ чух тен хӑех ҫав кӗл ҫине кӗрсе ӳкет.

... Ёнерхи сивӗ кӑшт ҫемҫелнӗ. Ҫырмара ҫил те ҫук та, ӑшшӑнах туйӑнать. Тӑвайкки хӗрринче паян ача-пӑчасем пасар пек кӗшӗлтетеҫҫӗ. Ҫунашка сетӗрме пултаракан вӗтӗр-шакӑр паян пурте кунта пухӑннӑ.

Ачасем хӗрсе яраннӑ вӑхӑтра тӑвайккине Кӑркуҫ, Миша, Хветле, Таруҫ ҫитрӗҫ. Ҫунашкисем ҫине ещӗчксем лартнӑ, ещӗкӗсене чӑпта таткисемпе витнӗ. Ачасем, ещӗклӗ ҫунашкасене курсан, чылайӗшӗ яранма пӑрахсах Кӑркуҫсем патне чупса пычӗҫ.

— Мӗн ку? Мӗн ку?—тесе чӑптана сире-сире пӑхаҫҫӗ. Кӗл иккен. Улӑм кӗлӗпе хутӑш-явӑш йывӑҫ кӗлӗ те пур. Тӑвата ещӗкӗ те акӑ туп тулли.

— Кӗл тӑкма-и? Ӑҫтан тупрӑр кун чухлӗ кӗл?—ыйтаҫҫӗ ачасем.

— Кӗле ҫырмана тӑкмастпӑр,—тет Кӑркуҫ.

— Ӑҫта илсе каятӑр, мӗн тума?—тӗпчеҫҫӗ ачасем.

— Кӗл пухатпӑр, курӑр-ха ӑҫта илсе кайнине,—терӗҫ бригадирсем.

Кӑркуҫ малта. Вӑл ещӗкне тытса ҫунашки ҫине тӑчӗ те, урине пӗр-иккӗ тапса илсе, аялалла кӗрлеттерсе анса кайрӗ. Ун хыҫҫӑн Хветле, Таруҫ, Мишша тапранчӗҫ. Вӗҫе-

вӗҫӗн лавсем пек анса кайрӗҫ. Ачасем пурте пекех тӗлӗнсе пӑхса юлчӗҫ. Тӑвата ещӗклӗ ҫунашка умлӑн-хыҫлӑн анса кайни нумайӗшӗн кӑмӑлне килчӗ. Чӑн-чӑн лавсем пек пыраҫҫӗ. Мӗн пулать-ха, ӑҫта каяҫҫӗ-ха ку ещӗклӗ ҫунашкасем, тесе, ачасем пӑхса тӑраҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен ҫунашкисемпе аялах анса ҫитрӗҫ, унтан Ларик анкарти хапхине уҫрӗҫ те, ещӗкӗсене кӗлете сӗтӗркелесе, тӗккелесе илсе кӗрсе кайрӗҫ. Вӗсем нумай та тӑмарӗҫ, пуш ещӗксене ҫунашкасем ҫине лартса каялла хӑпара пуҫларӗҫ.

Пӗр ача йӗлтӗрпе ҫӗмӗрттерсе анать. Кӑркуҫпа унӑн юлташӗсем тӗлнелле ҫитеспе йӗлтӗрӗ ӑнсӑртран кӗл ҫинелле тӑрӑнчӗ, ача кӗрӗп ҫеҫ ҫӗре перӗнсе ӳкрӗ.

— Терентей ӳкрӗ! Терентей ӳкрӗ!—тесе кӑшкӑрашрӗҫ ачасем.

Ҫав хушӑрах хыттӑн йӗрсе·ҫухӑрса яни илтӗнчӗ. Аран-аран ача ура ҫине тӑчӗ. Пичӗ-куҫӗ хӗп хӗрлӗ юн.

Кӑркуҫ вара Терентей йӗлтӗрне илсе хӑй ҫунашки ҫине хучӗ те Терентее:

— Суранна халех ҫыхӑпӑр, таса мар аллупа ан тыт, атья Михаля пиччесем патне, аякра мар,—терӗ. Вӑл вара Терентее ҫавӑтса кайрӗ. Пӗр-иккӗ ярса пуссан, Хветлепе Таруҫ ҫине ҫавӑрӑнса пӑхрӗ те:

— Эсир шкул аптекне чупӑр, марльӑпа сулеме шывӗ унта илсе пырӑр,—терӗ.

Хветлепе Таруҫ ҫырма тӑрӑхах шкул патне тӳртен чупрӗҫ, хытӑ вӗҫрӗҫ. Пӗр пилӗк минут хушшинче каялла та ҫитсе тӑчӗҫ.

Суранланнӑ Терентее Кӑркуҫ часах Михаля пиччесем патнелле ҫавӑтса кайрӗ. Терентей хытӑ ӳкнипе пит хуллен утать, унӑн урисем те ыратаҫҫӗ пулмалла. Хӑй пӗрмай тути ҫинчи юна сурса пырса ӗсӗклет, йынӑшать.

Кӑркуҫ Терентее ҫавӑтса пынӑ хушӑра пӗр чӗнмесӗр шухӑша кайса утать. Терентей ӳксе аманни Кӑркуҫ пуҫне ҫӗнӗ шухӑш кӳртрӗ.

Паянах, халех, тӑвас...

Ҫапла шухӑшласа пынӑ чух Таруҫпа Хветле те кусене хуса ҫитрӗҫ.

— Эсир Терентей суранне ҫыхӑр, эпӗ тӑвайккине тухам-ха,—терӗ Кӑркуҫ хӗрачасене.

Лешсем ҫыхма пулчӗҫ. Михаля патне кӗрсе кайрӗҫ. Кӑркуҫ хӑйӗн ҫӗнӗ шухӑшӗпе тӑвайккинчи ачасен ушкӑнӗ патне вӗҫсе пынӑ пек ҫитсе тӑчӗ. Ҫунашки ҫинчи

ещёкне ӳпёнтерчӗ те хӑпарса тӑчӗ. Чӑн-чӑн ораторсем пек ҫӗлӗкне илчӗ, хӑюллӑн, ҫивӗччӗн малалла пӑхрӗ.

— Юлташсем!—терӗ вӑл, малтан ӳсӗрсе илсе, уççӑн.

Ачасем пӗр ҫӗрелле кӑр пуханчӗҫ, шӑпланчӗҫ, Кӑркуҫа куҫран пӑхса илчӗҫ.

Кӑркуҫ тепре ӳсӗрсе илчӗ те, уҫӑ сассипе сӑмах пуҫласа ячӗ:

— Ачасем! Пире шкулта тырӑ-пулӑшӑн, ытти ҫимӗҫсемшӗн кӗл усӑлли ҫинчен сахал каламан! Кашни шкулта вӗренекен ача ун ҫинчен илтнӗ. Кӗл усӑлли ҫинчен атте-аннесене калӑр, тенӗччӗ, кӗле пухса хума тӑрӑшӑр, тенӗччӗ! Анчах ҫапах та кӗле—паха япалана—эпир ура айне тӑкатпӑр! Ҫитменнине хӑмӑрӑн савӑнса ярӑнмалли вырӑна пӑсатпӑр! Ака, куртӑр ёнтӗ, Терентей ӳксе тутине, сӑмсине катса пӑрахрӗ!

— Эпӗ те ӳкнӗ, чӗркуҫҫине шӑйӑрттарнӑ!—терӗ пӗр ача.

— Эпӗ те алла сиктернӗ,—тесе кӑшкӑрчӗ тепри.

— Эпӗ кӗрӗке ҫурнӑ!

— Чарӑнӑр ха!—терӗ тӑваттӑмӗш,—Кӑркуҫ калатӑр. Юлташӗсене чавсапа тӗккелесе илчӗ вӑл.

Кӑркуҫ чарӑнса тӑнӑ хыҫҫӑн каллех усӗрсе илчӗ те тытӑнчӗ калама.

— Куртӑмӑр, хамӑрах пӗлетпӗр кӗле кунта тӑкни пире сиен тӑвать! Малашне, юлташсем, кӗле кунта тӑкас мар! Кам кӗле килте пухмасть, кама амӑшӗсем кунта кӗл тӑкма ярасҫӗ, кӗле кунта ан тӑкӑр! Куртӑр и, эпир кӗле ӑҫта кайса хутӑмӑр. Эсир те кӗле ҫырмана йӑвантариччен ҫавӑнта пырса хурӑр! Эпир колхоз валли кӗл пухар! Колхоз эпир пухнӑ кӗлпе тырпул, ҫимӗҫсем туса кӑтар ттӑр! Халӗ пирӗн атте-аннесем кӗл тырпулшӑн, ҫимӗҫсемшӗн усӑллине ӗненмеҫҫӗ, кӗнекере каланине йышӑнмаҫҫӗ! Колхоза кӗл пухса парса эпир аттесене кӗл уссине кӑтартар, ӑслӑлӑх хушнине йышӑнтарар! Кам, эпӗ каланипе килӗшсе, пирӗнпе пӗрле ӗҫлес тет, пурте ҫӗклӗр аллӑрсене!—тесе вӗҫлерӗ Кӑркуҫ сӑмахне.

— Эпӗ!

— Эпӗ!

— Эпӗ-ӗр!—тесе кӗрлесе ячӗ пӗтӗм вӗтӗр-шакӑр. Пӗчӗк аллисем нумай ҫӗкленчӗҫ. Ҫинҫе сасӑсем йӑмрасем хушшинче янӑраса кайрӗҫ.

Кӑркуҫ малалла тата ҫивӗчрех, хӑюллӑрах пӑхать. Питҫӑмартисем улма пек хӗрлӗ, хура куҫӗсем йӑлтӑртатаҫҫӗ.

— Ан сĕрлĕр-ха! Кăркуç каласа пĕтертĕр!—терĕ юлташĕсене чавсапа тĕкекен ача. Халĕ те пĕр малалла кĕресшĕн тăракан ачана татах чавсапа хирсе хучĕ.

Ачасем сĕрлеме чарăнсан, Кăркуç татах пуçларĕ.

— Ачасем! Малашне кунта пĕр пĕрчĕ кĕл те ан пултар! Халĕ мĕн пуррине те тасатар! Кам çывхарах, атьăр, кайса илĕр кĕреçесем!—терĕ юлашкинчен.

— Атьăр, кайса илер, илер!—илтĕнчĕç сасăсем. Вунăвуникĕ ача çунашкисене пăрахса килĕсене чупрĕç.

Кăркуç ещĕк çинчен пысăк çын пек хуллен анчĕ, çĕлĕкне тăхăнса пусса лартрĕ. Вăл вăхăтра Хветлепе Таруç хайхи Михаля патĕнчен тухса ачасем патне пычĕç. Вĕсем хыççăн Терентей шурăпа çыхса пĕтернĕ пигне тытса хуллен уксахласа утса пырать. Ачасем патне çитсе йĕлтĕрне илчĕ те килнелле салхуллăн утрĕ.

Çав вăхăтра виç-тăватă ача кĕреçесемпе персе те çитрĕç. Кăркуç патне пычĕç. Кăркуç пĕр ачинчен кĕреçине илчĕ те çул хĕрринчен пĕр икĕ утăм айккинелле кĕрсе юра чакалама тытăнчĕ. Кăркуçа кура ытти кĕреçеллĕ ачасем те çапла тума тытăнчĕç. Унччен те пулмарĕ кĕреçеллĕ ачасем тата чупса килчĕç.

— Эсир улăм кĕлне хырса эпир чакаланă çĕре йăвантарăр!—терĕ Кăркуç. Кунта та кĕле хăй хырса, çул айăккинелле ывăтса кăтартрĕ. Вунă-вуникĕ ача акă хĕрӳллĕн ĕçе тытăнчĕç. Юрпа кĕл сирпĕнеççĕ кăна. Кĕреçесем çивчĕ алăсенче вĕлт те вĕлт! сиккелеççĕ. Пĕчĕк пуççем, хĕрлĕ питсем ĕçленĕçемĕн йăлт та йăлт курăнаççĕ. Пĕр çур сехет хушшинче кĕле çул айккинчен хырса юр айне турĕç, хуран курăнакан тĕле таса юр сапрĕç. Тап-таса! Яп-яка! Ĕнтĕ ним шикленмесĕр тăвайккинчен кайăкла вĕçсе ан! Мĕн тĕрлĕ ырă!

Ĕç пĕтсен, ĕçленĕ ачасенчен пĕри:

— Ну, ачасем! Кам кунта кĕл тăкать, çавна кунта ярăнтармастпăр. Килтисене те кунта кĕл тăкма юраманни çинчен калăр!—терĕ.

— Тăкмастпăр!

— Тăкма юрамасть!

— Килтисене калас пулать çав!—тенĕ сасăсем илтĕнчĕç.

Каллех ача-пăча йăсласа ярăнма тытăнчĕ. Çунашкисем, пăркутсем кĕрлеттерсе аялалла ыткăнаççĕ. Пурте кăмăллă, аван. Кăркуç та, унăн юлташĕсем те ярăнаççĕ.

* * *

Çав каçран пуçласа тăвайкки текех кĕлпе вараланмарĕ. Карта çине хут çырса çапнă:

**„Кĕл çĕре çемçетет. Кĕлре калий текен тырпула, ытти çимĕçсене усăллă япала пур. Кĕле урайне пăрахса сая ан ярăр. Килте кĕле пухмастăр пулсан, колхоз кĕлетне кайса парăр. Колхоз кĕлечĕ икĕ сехетрен пуçласа тăватă сехете çитиччен уçă тăрать, кĕле дежурнăй бригадир илет.**

***Кĕл пухакан бригадир*".**

Çак хута Кăркуç тăвайккинелле аннă çĕре, карта çине, ирхине ирех пырса çапрĕ. Лаша шăварма каякан арçынсем, шыв кӳме тухнă хĕрарăмсем чарăнса тăрсах хута пăхаççĕ.

— Кам пĕлет... кĕлпе акса туса курман та, кĕле пухса аппалланас та килмест,—терĕ те пĕр ватăрах арçын лашине çавăтса анаталла утрĕ.

Виçĕ хĕрарăм чарăнса тăчĕç. Пĕри, ликпункта çӳрекенскер, çамрăкрах. Çавă калаçма тытăнчĕ.

— Эпĕ кĕл çĕре çемçетессине илтнĕ те, пирĕн, кĕле пухса хурас тесен, атте пит ятлаçать. Вăл, ватăскер, кĕнеке тăрăх пăхса тырă нумаях тăваймăн, тет. Кĕле ĕнте чăнахах та колхоз кĕлетнех анса леçес пулĕ, ахалех урама тăкса сая яратпăр,—терĕ юлашкинчен.

— Пирĕн Синкка паян кĕле урама тухса тăкма памарĕ вĕт, йĕрет, каçхине кĕле колхоз кĕлетне кайса паратăп, тет, пур ача-пăча та кĕле унта кайса параççĕ ĕнтĕ, тет. Хăй шкула тухса кайнă чух кĕле пурăкпах çунашки çине çыхса лартса хăварчĕ.

— Пирĕн Ванькапа Санькка тата паян ирхине ирех кĕле кăмакаран хăйсемех кăларса лартнă. Вĕсем те тем колхоз кĕлетне каятпăр, тетчĕç пулас,—терĕ виççĕмĕш хĕрарăмĕ.

Хĕрарăмсем пăхкаласа, калаçкаласа тăчĕç те шыв ăсма анса кайрĕç

Каç пулсан, ачасем тăвайккине пухăна пуçларĕç. Чылайĕшĕ çунашкисем çине хăшĕ пурăкпа, хăшĕ пĕчĕк ещĕкпе, хăшĕ хăрăк-харăк витрепе кĕл лартса пынă. Кĕле паян илекен дежурнăй Кăркуç. Вăл кашни кĕл илсе пыракан ачанне кĕлне вĕри мар-и, кăварли-мĕнли çук-и тесе тытса пăхать, вара тин пушатать. Ачасем

тӑвайкки ҫине ярӑнма пухӑнна вӑхӑтра вунсакӑр ача кӗл килсе пушатрӗ. Кашни кунах кӗл кун пек пухӑнсан чылай кӗл пулать...

Кӗл пухма тытӑннӑранпа пӗр-икӗ эрне иртрӗ. Кашни каҫах ачасем кӗл илсе пыраҫҫӗ. Колхозниксенне те бригадирсем пуха-пуха анаҫҫӗ. Кунран кун кӗлетре кӗл купи пысӑклансах пырать.

Пӗрре Кӑркуҫ кӗлетре дежурнӑй пулнӑ. Тӗттӗм пулас умӗн пӗр ача, пӗчӗкрехскер, кӗл илсе пычӗ. Кӗлӗ ҫинче пӑчӑр-пачӑр улӑм пӗрчисем те курӑнкалаҫҫӗ.

— Атте ҫак кӗле лаҫҫа тӑкма парса ячӗ.

Кӑркуҫ хавасланса:

— Юрать, тӑкас,—терӗ те, кӗлне алӑпа чавса пӑхрӗ. Кӗл шалта алла пӗҫерсех илчӗ. Сиркелесе тӑнӑ ҫӗртех улӑм пӗрчисене вут хыпса иле пуҫларӗ. Кӑркуҫ кӗле хӑвӑртрах илсе тухса юр ӑшне чӑмтарчӗ, ҫиеле юр купаласа таптарӗ. Кӑркуҫӑн алли-ури чӗтресе, хӑй шуралса кайрӗ.

— Аҫуна кала, ӳлӗм кун пек кӑварлӑ кӗл ан парса ятӑр,—терӗ Кӑркуҫ кӑмӑлсӑрланса кайнӑ пӗчӗк ачана. Ача хӑйӗн кӗлне йышӑнманшӑн йӗрес пек пулса ҫунашки ҫине хӑрӑк витрине вырттарса килнелле утрӗ.

Ку ача ашшӗ колхоза хирӗҫ пит вирлӗ пырать. Колхоз тӑшманӗ айван ачине кӑварлӑ кӗл парса хӗрлӗ автана асра тытса тӑнӑ, анчах сыхӑ тӑрать пӗчӗк бригадир. Кӑркуҫ колхоза хирӗҫ пыракан ҫын хӑтланни ҫинчен комсомолецсене калама шухӑшларӗ.

* * *

Хулленех хӗл иртсе кайрӗ. Ҫурхи кунсем—ӑшӑ та ҫутӑ кунсем майӗпех ҫывхарчӗҫ. Хӗлӗпех колхоз ачисен икӗ бригади те ӗҫлерӗ. Ӑмӑртура тума пулвине икӗ бригади те 100%-пех пурӑнаҫа кӳртсе пычӗҫ. Кӗл пухасси ӑнса пыни ҫинчен калас та ҫук,—пӗчӗк колхозниксем ӑна питех те лайӑх турӗҫ.

Кашни пасар пулмассерен тислӗк пухакан бригада ҫулӑксемпе, кӗреҫесемпе, шӑпӑрсемпе тухса ӗҫе тытӑнатчӗ. Ачасем урамри тислӗке хырса, шӑлса пухатчӗҫ те, пысӑк ещӗксем ҫине тиесе колхоз анкартине кайса йӑвантаратчӗҫ. Кӑҫал пасар урамӗ тап-таса, пӑхсан—куҫ савӑнать. Кӗл пухакан бригада ӗҫленӗ чух ҫынсем хӑшӗ-пӗри ачасене ырлатчӗҫ, хӑшӗ-пӗри, ачасен кӑмӑлне пӑсас текенсем, тӑрӑхласа илетчӗҫ. Ачасем никам тӑрӑхланине

те пăхмарĕç. Вĕсем хăйсен умне лартнă задачăна—тырпул тухăçĕшĕн тăрăшассине пĕлеççĕ, çавăншăн ĕçлеççĕ.

Хĕвел хĕртсе, ăшă çил вĕрсе çĕре типĕтсессĕнех МТС-ран Кăркуçсен колхозне трактор килчĕ. Праçник пек пулчĕ çав кун. Трактора хирĕç халăх ялĕпе тенĕ пекех тухрĕ. Митинг пулчĕ. Машин саслă çĕнĕ пурăнăç пуçламĕшне ыра сунса хĕрӳллĕ сăмахсем уçă çурхи сывлăшра янăрарĕç. Колхоза ĕçлеме килнĕ агроном хăйĕн саламлă сăмахĕнче бригадирсен ĕçĕсем çинчен те асăнчĕ.

— Кашни колхоз пур майсемпе те ăслăлăх хушнă тăрăх тырă-пула тухăçĕшĕн тăрăшни вăл—социализм çулĕпе туна утăм. Сывă пултăр наука хушнă тăрăх ĕçлессиl Сывă пултăр пĕрлешӳллĕ вăйлă ĕçl Сывă пулччăр ĕç паттăрĕсем!—тесе вĕçлерĕ вăл хăйĕн сăмахне.

Митингран халăх праçникрен саланнă пек саланчĕ, колхозниксем тытăнчĕç ĕçе.

Çул хĕрринче, колхоз хирĕ пуçланса кайнă çĕрте, икĕ пысăк купа курăнать: пĕри—кĕл купи, тепри тислĕк. Çак икĕ купи те ачасем ĕçленипе пулнă. Нумаях пулмасть, колхозниксем тислĕкне те, кĕлне те уя турттарса хучĕç.

Агроном кĕле тытса пăхрĕ те:

— Кĕле пит аван усранă, первăй сортl Пухасса нумай пухнă тата кирлĕ çĕре кĕл çителекле сапма çитет, —терĕ.

Унтан агроном кăтартнипе колхозниксем кĕле виçевиçе хурса уйрăм купасем туса хучĕç. Ăçта мĕн чухлĕ кĕл, фосфорит, тислĕк хумаллине агроном каласа кăтартрĕ. Колхозниксем ĕçлеççĕ, турттараççĕ, тăкаççĕ, салатаççĕ тислĕке. Фосфорита, кĕле çĕклеççĕ, сапаççĕ. Нумай пусăллă уйра кашни тырпул валли, çимĕç валли хăшне тислĕк, хăшне тата кĕл нумайтарах сапрĕç. Пуринчен ытла кĕл çĕрулми пуссине нумайтарах лекрĕ, агроном çапла хушнă.

— Çĕре юсамалли япаласем çителĕклĕ пулин те, атьăр, сăнамалăх кашни тырра, çимĕçе халичченхи пек кĕлсĕрнимсĕр акса пăхар,—терĕ агроном.

Колхозниксем агроном каланине йышăнчĕç. Пĕрер татăк тĕрлĕрен тырă кĕл, фосфорит, тислĕк хумасăр акрĕç тата гектарăн сакăр пайĕнчен пĕр пайне кĕлсĕрех çĕрулми лартса пăхма килĕшрĕç.

... Çанталăк уяр, ăшă. Хĕвел кăмăллă, çĕр питне ăшăтса пăхать. Колхоз ачисем çара уран, кĕпе вĕççĕн

ашшӗсене пулӑшса, чупкаласа ӗҫлесе ҫӳреҫҫӗ. Трактор мӗкӗрни вӗсене савӑнтарать, вӗсен трактор ҫине ларса пӑхас килет. Кӑркуҫ трактор ҫине ларса курчӗ курчех: тыра акса пӗтернӗ кун трактора вӑхӑтлӑха колхоз картишне илсе кайрӗҫ.

Тракторист Кӑркуҫа хӑйпе юнашар хӗсӗнкелесе ларт-рӗ те, Кӑркуҫ кӑмӑлне ҫӗклентерсе, хурҫӑ ут ҫинче ларса яла пырса кӗчӗ.

IV.

Хӗвел хӗртет. Сайра хутран ҫумӑрсем те пулкалаҫҫӗ. Колхоз хирӗсенче тырӑсем машинӑпа акнӑран пит тикӗс шӑтрӗҫ. Ҫӑра, хура-симӗс санла калчасем пӗр пек тикӗс хӑпараҫҫӗ. Ниҫта ҫумкуракӗ ҫук. Шыв пек тап-таса, пӗр тикӗс курӑнать колхоз калчи.

Вӑхӑт хулленех шăвать. Пусари тырӑсем ҫитӗнеҫҫӗ. Колхоз тыррисем малӑрах ҫитӗнчӗҫ—тырӑ вырма вӑхат ҫитрӗ.

Кӑркуҫсен колхозне тырӑ выракан машина илсе килсе лартрӗҫ. Ӑна майлаштарчӗҫ, унтан колхозниксем тырӑ вырма пуҫларӗҫ.

Хуларан тата авӑн ҫапакан машина илсе килчӗҫ. Вырса купалана ҫӗмелсене, суратсене пӗр ҫере турттарса машинӑпа ҫапсах пыраҫҫӗ. Колхозниксем пӗр виҫӗ эрне хушшинче тырра вырса, ҫапса пуҫтарчӗҫ. Ҫийӗнчех агрономпа шкул ачисем колхоз правленине тырӑ тухӑҫне шута илме пулӑшрӗҫ. Каҫалхи ҫул колхозӑнни пек тырӑ аван пулнине никам та астумасть. Ытти хресченсен тыррипе танлаштарсан, колхоз тырри гектартан 25—30 пӑта яхӑн мала тухнӑ.

— Колхоза кӗнисем тырӑран пуян,—теҫҫӗ колхозник маррисем.

— Манӑн та кӗмеллеччӗ колхоза,—теҫҫӗ хӑшӗ-пӗрисем.

Колхозӑн тырӑ пит ӑнса пулни ҫинчен ял хытӑ сӑмах ваклать. Кел ҫинчен, фосфорит ҫинчен ҫынсем калаҫма тытӑнчӗҫ. Курна вӗсем, колхоз хирӗнче те кӗл, фосфорит сапман тырӑсем начартарах. Халиччен кӗле ҫырмана тӑкакан ҫынсем, кӗл ҫинчен сӑмах тапратсан, пӗрре те чӗнмеҫҫӗ, вӑраххӑн кӑна сывласа илеҫҫӗ.

Кӗр ҫывхарать. Колхозниксем хире ҫӗрулми кӑларма тухрӗҫ. Кӑркуҫ тата ытти ачасем пусса малтан ҫитсе тӑнӑ. Кӗлсӗр лартнӑ ҫӗрулмине кӑларса пӑхреҫ. Ҫӗрулмийӗ вӗтӗ, ҫитменнине йышсӑр.

— Ай-яй, ай-уй, ытла вётё-çке çёрулмийё,—терёç тинерех çитсе тăна хёрарăмсем.

— Чимёр-ха, лешне кёлпе лартнине кайса чакаласа пăхар,—терёç ачасем. Кёреçисене тăраткаласа кёлпе лартнă çёрулми ани çине чупрёç. Вёсен хыççăн хёрарăмсем те утрёç. Тапратрёç кăларма. Шултра, таса çёрулмисем вăнк та вăнк! кёреçе айёнчен сике-сике тухаççё.

— Вăг, ку çёрулми! Пăхса савăнмаллăх пур!—теççё хёрарăмсем шакăлтатса.

Çанталăкё те уяр тăчё те, çёрулмине колхозниксем пурте кёр ёçлесе тăватă кун хушшинче кăларса, турттарса пётерчёç. Колхозăн чул подвалёсем таса, шултăра çёрулмисемпе тулчёç.

Каярах хёрлё кăшмана, выльăх çарăкне, кишёрне кăларса турттарса нӳхрепсене тултарчёç. Тырă-пулă, çёрулми тата ытти тымар-çимёçсем ăнса пулнăшăн колхозниксем пит кăмăллă, пит хёпёртеççё.

Пётём ёçе пуçтарнă хыççăн колхозниксен пуху пулчё. Колхоз правлени тырпул тухăçё çинчен отчет туса пачё. Государствăна тырă, çёрулми парасси çинчен тата ăратлă выльăхсем туянасси çинчен калаçса татăлчёç. Тёрлёрен ыйтусем çинче агроном çапла каларё:

— Сирён тырă ытти хресченсенпе танлаштарсан гектартан 25—30 пăт ытларах тухнă. Вăл акă мёнрен килнё: машинăпа ёçленинчен, фосфорит, кёл, тислёк тăкнинчен. Эпё тёплён сăнаса, пётёмпе шута илсе тухрăм. Ман шутпа сирён гектартан 25—30 пăт тырă çав тислёке, кёле пула ытларах пулчё. Çёрулми мёнпур пуссипе кёл сапса лартнăран 500 пăт ытларах тухнă. Астуса илёр-ха, кама пула пухăнчё сирён кёлпе тислёк? Пёчёк пионерсене, пёчёк ёç паттăрёсене пула мар-и? Çав кёлпе тислёке ача-пăчасем пухнине пула эсир государствăна ытларах тырă, çёрулми пама пултаратăр. Ытларах тырă панипе пирён государство тата та вăйлăрах пулё. Эпё çак ачасене парнелеме сёнетёп: кама мён пит кирлё, çавна çав япалана илсе памалла.

Колхозниксем агроном каланине кăмăллăн, алă çупса йышăнчёç.

V.

— Ыран Кăркуççен колхозёнчен станцăна хёрлё обоз каймалла. Петюк пиччёш Кăркуçа лав çинче хёрлё ялав тытса пыма каларё. Ытти ачасем те пыраççё.

Сивӗ кӗрхи ир. Хӗвел хӗрелсе тухнӑ вӑхӑталла ялтан хӗрлӗ обоз тухса кайрӗ. Кӑркуҫ малтанхи лав ҫинче Петюк пиччӗшӗпе юнашар ларса пырса хӗрлӗ ялавне вӗлкӗштерет. Ҫаклӑ урапасем лачӑртатса пыраҫҫӗ. 15 лав ҫӗрулмипе, 10 лав тырӑпа. Ялтан обоз вӑрӑмӑн тӑсӑлса тухса кайрӗ. Малти лав ҫинчи хӗрлӗ ялав илемлӗн явӑнкаласа вӗҫсе пырать.

Кӑнтӑрлапа хӗрлӗ обоз станцӑна ҫитрӗ. Лавсем пысӑк ампарсем патне пырса чаранчӗҫ. Колхозниксем тырра пӗр ампарне, ҫӗрулмине тепӗр ампарне пушатрӗҫ. Пирӗн ачасем кунта та ӗҫсӗр мар: пысӑккисене тырӑ, ҫӗрулми пушатма пулӑшрӗҫ, лашасене пахрӗҫ. Пушатса пӗтерсен пурте апатланма столовӑйне кайреҫ. Апатлансан Петюк ачасене:

— Ну, ачасем! Атьӑр райпо лавкине! Унта ача-пӑча пальти нумай. Кам хӑш пальтона килӗштерет, кама хӑшӗ юрать, тӑхӑнса виҫсе пӑхар та илер!—терӗ.

Ачасем Петюк пиччӗшне сӑранса илчӗҫ. Шакӑлтатса калаҫаҫҫӗ, кулаҫҫӗ, сиккелеҫҫӗ. Кӗшӗлтетсе райпо лавкине кӗрсе тӑчӗҫ. Петюк прикащике хут тыттарчӗ. Прикащик хутне пахрӗ те:

— Ҫичӗ ача-пӑча пальти, пӗр мӑшӑр атӑ!—терӗ. Хутне ытти хутсен ушкӑнне тирче те, пальтосене тата пӗр мӑшӑр атта илсе пачӗ.

Ачасем малтан пальтосене хӑюсӑртарах тыткаласа, тӑхӑнкаласа пахрӗҫ.

— Эпӗ ҫакна илетӗп,—терӗ Кӑркуҫ, хура, хӑйне лӑп юракан пальтона тахӑнса ярса. Ҫӗтек пиншакне миххе персе чикрӗ. Ыттисем Кӑркуҫа кура хӑюллӑрах ҫаваранкалама пуҫларӗҫ.

— Эпӗ ҫакна, кӑваккине,—терӗ Вавиле.

— Эпӗ ҫакна, хурине, Кӑркуҫӑн пеккине,—терӗ Мишша.

Хӗрачасем те хӑйсене килӗшкине суйласа илчӗҫ. Пальтисене тыткаласа пахса пӗр-пӗринпе пӑшӑлтатаҫҫӗ, йӑл-йӑл кулса илеҫҫӗ.

— Сана, Кӑркуҫ, пӗр мӑшӑр атӑ парас тетӗп,—терӗ Петюк.

Кӑркуҫ хӗрелсе кайрӗ, нимӗн те чӗнмерӗ.

— Ачасем, эсир эпӗ Кӑркуҫа сиртен уйрӑм пӗр мӑшӑр атӑ панӑшӑн кӑмӑлсӑрланмастӑр пулӗ вӗт?

— Кӑмӑлсӑрланмастпӑр, ҫук!—терӗҫ ачасем.

— Кӑркуҫ бригадӑсен ӗҫне пуҫарса яраканни пулнӑ вӗт!—терӗ Вавиле.

— Кăркуç атта тивĕçлипе илет!—терĕç Ксентипе Миша.

— Ил, Кăркуç, атта! Юлташусем те ав, эпĕ калавипе килĕшсе, атта сана парасшăн, сана тивĕç,—терĕ Петюк. Атта илсе Кăркуçа пачĕ. Кăркуç хĕрелсе кайса атта илчĕ.

— Тахăнса пăх-ха, тăхăнса пăх, тен, юрамасть!—терĕç ачасем, Кăркуçа сыранса илсе.

Кăркуç тăхăнса пăхрĕ. Атти лăпах юрать...

— Ну, шăнкăрчсем! Атьăр, вĕçтерер килелле,—терĕ Петюк.

Кăркуç тăли çăпатине те миххе персе чикрĕ те, пурте пĕрле лавкаран тухреç. Пушă лавсем çине ларса килелле чуптарчĕç.

... Кăркуç амăшĕ ачине кĕтсе урама темиçе хутчен туха-туха пăхрĕ. Каçалапа çанталăк сивĕтрĕ. Çурçер енчен сивĕ çил вĕрет. Кăркуç станцăна çӳхе пиншакпа кана кайнăшăн амăшĕн чĕри вăркать. Шăнса пăсăласран хăрать. Крăççын çутсан Кăркуç яшт пырса кĕчĕ. Пальтопа, атăпа,пăллас та çук! Амăшĕ ывăлĕ çине тимлĕн пăхса илчĕ, тĕлĕнсех кайрĕ.

— Ара, Кăркуç, кам тумтиррине тăхăннă эсĕ? Шăнмарăн-и?

— Пĕрре те шăнман, анне. Пальтийĕ те, аттийĕ те хамăннах. Кĕл пухса тылпул, çĕрулми тухăçне хăпартма пулăшнăшăн парнелерĕç. Астăватăн-и, эпĕ кĕл пухасси çинчен каларăм та, эсĕ мана çапла каларăн: кĕле ăна авалтанпах çырмана тăкнă. Кĕл вал никама кирлĕ мар, ура айĕнчи япала, терен.

— Çапла каларăм çав,—терĕ амĕш ӳкĕнне сасăпа.

— Ура айĕнчине эпир пухрăмăр, уссине курăмăр,—терĕ Кăркуç. Амăшĕ умĕнче пальтине, аттине кăтартса çăмăллăн çаврăнкаласа илчĕ.

1931.

---

## КИЛЙЫШ

*Калав*

Васса кухньӑра кӑмакаран вӗретнӗ сӗт кӑларса тӑратчӗ. Ҫав самантра яр уҫа алӑкран унӑн ҫитӗннӗ хӗрӗ Валентина, чӑпар саттин кӗпине варкӑштарса, килсе кӗчӗ, амӑшӗ патне васкаса пычӗ.

— Молотов юлташ радиопа сӑмах каланине те илтеймесӗрех юлтӑн пулӗ эсӗ?—терӗ вӑл, таҫта кайма васкана пек, хӑвӑрттӑн.

— Нимӗн те илтмен эпӗ. Володь ҫывӑрать те, вӑранӗ тесе радиона яман,—терӗ Васса, хӗрӗн хумханулла пит-куҫне тӗлӗнсе пӑхса.

Валентина лара-тӑра пӗлмест. Амӑшӗнни пекех, хура, чие ҫырли пек ҫаврака куҫӗсем канаҫсӑррӑн пӑхкаласҫӗ. Валентина чӳрече патне пычӗ, такама кӗтнӗ пек урамалла пӑхса илчӗ, вара каллех сӗтел патне пырса тӑчӗ.

— Анне, эсӗ ан хӑра,—тытӑнчӗ калама Валентина кӑшт чӗтрекен сасӑпа,—Молотов каларӗ... пӗлтерчӗ вӑл... Германи пирӗн ҫине вӑрҫӑпа тухнӑ, темиҫе хула ҫине бомбӑсем парахнӑ, ҫынсене амантнӑ, тет.

— Ай тур-тур! Чӑнах-и?—хыпаланса ӳкрӗ Васса. Аллинчи вӗри чӳлмеке чутах ҫӗре ӳкеретчӗ вӑл: пӗтӗм ӳт-пӗвӗ сӑрӑлтатса, ала-ури вайӗ пӗтсе кайрӗ. Валентина амӑшӗ сӗт чӳлмеккине сак ҫине лартрӗ те питне аллипе хупларӗ.

— Ых, ҫав Гитлер текеннине! Ҫӗр ҫӑттӑр ӑна!—куҫҫульпе ылханчӗ Васса.

Валентина амӑшне йӑпатма тытӑнчӗ, юлашки сӗт чӳлмеккине кӑмакаран кӑларчӗ. Ҫав самантра ача сасси илтӗнчӗ. Валентинӑпа амӑшӗ калаҫнипе Володя вӑранчӗ пулмалла. Валентина ҫӗнӗ шурӑ тапочкипе ҫӑмаллӑн пусса кухньӑран пысӑк пӳлӗме кӗчӗ, карнӑ чӳрече умӗнче тӑракан ача кровачӗ патне пычӗ. Кровать ҫинче, шурӑ ҫиттисем айӗнче, ури-аллине ҫӳлелле тӑратса, вунӑ уйӑхри мӑнтӑркка ача йӑваланать, тӑрса ларма хӑтланса пуҫне ҫӗклет. Валентинӑна курсан, ача малти икӗ шӑлне

кăтартса йăл кулчĕ. Хăйĕн чĕлхипе тем çинчен пакăлтатма тытăнчĕ.

Валентина ачана çĕклерĕ те, савса çемçе çÿçлĕ лĕпкинчен чуптуса, кухньăна йăтса тухрĕ.

— Асанне, сĕт ĕçтер мана, те... варарах пăтăкка çийĕп, те,— чĕвĕлтетрĕ Валентина ачан аллисене, питне-куçне шывпа йĕпетнĕ таса питшăллипе шăлса.

Володя мăнтăр кĕске аллисене кăтартса асламĕш патнелле туртăнчĕ, пĕчĕк тутисене сиктерсе, ам-ма-ăм маĕмме-ĕм-ме-е, тесе калаçма тытăнчĕ.

Васса, усал хыпар илтнипе вăйран кайса ларнăскер, аран-аран вырăнтан тапранчĕ, Володя валли хатĕрленĕ сĕте шкапран илсе ĕçтерчĕ.

— Ĕнтĕ эпир митинга каятпăр, анне, эсĕ те тух. Пиччепе инке те çитеççĕ пулĕ митинга,—тесе, Валентина пиччĕш ачине урамалла йăтса тухрĕ.

Васса ахлата-ахлата кăмакаран сарă питлĕ кукăльсене кăларчĕ, вĕсене çу сĕрсе шкапа хучĕ.

Усал хыпар чĕрене каскалать, чăрмавлă шухăшсем пуçа ватаççĕ.

— Ах-х,—тесе Васса вăраммăн сывла-сывла илет.

Пÿрте шурă пуçлă старик, Васса хуньашшĕ, кĕчĕ.

— Ки-ин, мĕн терĕ çав Валентина? Ампар умĕнче выртнă чух хăлха патĕнчех пĕр нăрă нăрлатса çÿрерĕ те, эсир калаçнине эпĕ илтеймерĕм,—терĕ старик.

Васса сассине хытăрах кăларса (старик начар илтет) вăрçа тухни çинчен, çав вăрçа Гитлер пуçлани çинчен каласа пачĕ.

Старик, пĕр самантлăха шăлсăр çăварне карса тăчĕ те, пуçне чĕтретсе пит çиллĕллĕ: „Тьфу! собага!..“—терĕ, вăра кăштăртатса кăмака çинчен чосăнка илсе тăхăнчĕ. Вăл виç-тăватă çултанпа хĕртсе хĕвел пахнă чух та чосăнкă тăхăнать, ура шăнать, тет, çăм кипке тăхăнса çÿрет.

Яланхи пек тумланса, старик хуллен тухса кайрĕ.

— Ăçта кайрăн, ати?—ыйтса юлчĕ Васса.

— Урама!—илтĕнчĕ алкум вĕçĕнчен старик сасси.

Васса та халех тухĕччĕ урама, анчах кăмакаран çимĕçсем пурте тухса пĕтмен-ха: икĕ хăпарту пиçеймен. Вĕсем сĕт чÿлмеккисемпе юнашар пулнă та, кăштах çемçерех. Васса хăпартусем пиçессине кĕтсе сĕтел умне ларчĕ, чавсипе сĕтел çине таянса янаххине тĕрелентерчĕ, шухăша кайрĕ.

... Вăрçă, вăрçă, ах, хăрушла япала вăрçă! Нумай хуйхă кӳнĕ Вассана 1914 çулхи вăрçă та. Васса качча килсен икĕ эрнеренех унăн упăшкине ăшă вырăн çинчен тăратса вăрçа илсе кайрĕç. Çамрăк пуçпа Васса „салтак матки“ ятне илтме тăрса юлчĕ. Çулталăк ытларахран Васса упăшки вăрçăран аманса килчĕ, ури аманнăччĕ, вара виçĕ çула яхăн ĕçлеймерĕ: аманнă ура шăтан-юханлă пулса тĕртлентерчĕ, уксахах пулса юлчĕ вĕт Антун. Асаплă пурăнăç пулчĕ: çиме çитмест, хăйсем çĕтĕк-çатăк, пĕр выльăх чунĕ усрайман... Вунă-вуник çултанпа, колхоза кĕнеренпе тин пурăнăç майлашса кайрĕ. Тырпул çиме çитсе пыма мар, çултан çул ытлашши юлса пырать, акă пĕлтĕр илнĕ тырра çиме те тытăнман-ха. Выльăх-чĕрлĕх те пур: ĕне, сыснасем, сурăхсем. Кайăк-кĕшĕк кашни çул усранă, пурне те ĕнтĕ мамăк минтер, тӳшек туса панă, хăй валли те Васса, ватăлмалăх кунта шăмшак кантăр тесе, мамăк тӳшекпе минтер тунă. Ачасем çĕнĕ пӳрт тăвас терĕç. Ашшĕпе аслашшĕ хĕпĕртесе ывăлĕсемпе пĕрле платник ĕçне тытăнчĕç. Кивĕ пӳртрен кухня турĕç, ун çумне сыпса пураса çĕнĕ пысăк пӳрт лартрĕç, ав епле çап-çутă пӳрт, тап-таса, часси шакканипех янăраса ларать.

Вассапа Антунăн асла ывăлĕ Лекçей халĕ колхозра счетовод пулса ĕçлет, çартан килсенех кайăк-кĕшĕк комбинатĕнче бухгалтерта ĕçленĕччĕ. Лекçей арăмĕ, Маруç, çак ялтах—фельдшерица. Антун хăйĕн вăталăх ывăлĕпе, Микулапа, колхозра икĕ бригадăнне лаша пăхать. Кĕçĕн ывăлĕ Макçăм иртнĕ кĕркунне вăтам шкултан вĕренсе тухса Хĕрлĕ Çара кайрĕ. Владимир-Волынск хулинче пурăнать. Нумаях пулмасть Макçам пĕр çыру янăччĕ.

Васса çак çыру килнĕ хыççăн ик-виçĕ çĕр канлĕ çывăраймарĕ: шухăшсем пĕрмаях Макçăм çинче. Акă халĕ, Валентина вăрçă тухни çинчен пĕлтерсен, Васса каллех Макçăм пирки шухăша кайрĕ: мĕнле-ши вăл?

— Тен Лекçейĕн те çара кайма тивĕ? Вăрçă мĕн пулсан, Лекçейĕн чăн малтан кайма тивет, тетчĕç-ха пĕркун, комсостав теççĕ-и-ха, çав,—хускавлă шухăш кĕрсе ӳкрĕ амăшĕ чĕрине.

Микулана виçĕмçул Хĕрлĕ Çара илмен: вăл пĕчĕккĕ чухне, хăй пит хăраманскер пулнипе, лаша çинчен ӳксе аллине амантнă; сулахай алли чавса сыппинче питех вылямасть, хăй çапах кирек мĕнле ĕçе тума та кансĕрлемест. Лекçей Хĕрлĕ Çара кайсан та, Микула юлать,—

малалла шутарчĕ шухăшне хумханнă чĕреллĕ амăшĕ.
Антунпа Вассан кĕçĕн ачи—Валентина кăçал çуркунне вăтам шкул пĕтерчĕ, учительсен институтне кайма хатĕрленет.

— Ах, тем курас пулĕ, тем курас пулĕ ку вăрçăпа. Лекçейпе кин часрах килччĕр пĕреххут,— терĕ Васса, хăй, чӳречерен пуçне кăларса, уй еннелле пăхрĕ. Лекçейпе арăмĕ паян, канмалли кун, кӳршĕ яла—„хуньăм кассине" хăнана кайнă, Лекçей хунĕ кин кĕртет, тет, пулас.

Васса шухăша кайса ларнă çĕртен тăчĕ, камакаран юлашки хăпартусене кăларчĕ. Урамра нумай саслăн калаçни илтĕнчĕ. Васса тепĕр хут чӳречерен пăхрĕ. Хĕрарăмсем, ача-пăчасем пахча-çимĕç картинчен çум çумласа килеççĕ, шавлăн калаçса хăвăрт утаççĕ. Тури Матюк—ĕлĕк активлă делегатка пулнăскер, тăшман çине тарăхса, ăна хаяррăн çапса пăрахасси çинчен хыттăн калаçса пырать.

Васса та урама тухса çынсем хыççăн митинга утрĕ.

Каçалапа пĕтĕм килйыш пухăнчĕ. Лекçейпе арăмĕ вăрçă хыпарĕсене илтсенех хăнаран киле килме васканă, митинга çитрĕç. Антунпа Микула лашасене çарана ярса киле апата килчĕç. Валентина митинг пĕтсенех киле таврăнчĕ, халĕ Володьăпа пакăлтатать, ăна астарать. Аслашшĕ улмуççи пахчинчен кĕчĕ.

Килйышĕ пĕтĕмпех пуханнă пек чух апат çитерес тесе Васса кухньăри сĕтел çине пасланман çуллă яшка лартрĕ. Хуньашшĕпе Антун сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕç, Лекçейпе унăн арăмĕ тата Микула шалти пӳртре тем çинчен пит хĕрсех калаçаççĕ, иккĕ чĕнсе те тухмарĕç-ха. Валентина та, Володьăча аслашшĕ арки çине пырса лартрĕ те, лешсем патне кĕрсе кайрĕ, уçă алăка тачă хупса хăварчĕ.

Илтет Васса: Лекçей калать-калать те, вара Микулапа Валентина калама тытăнаççĕ, Маруç кăшт-кашт çеç сăмах хушать. Тем çинчен калаçаççĕ, сăмахĕсене уйăрса илме çук.

Васса виççĕмĕш хут чĕнсен тин ачисем кухньăна тухрĕç, сĕтел хушшине ларса апатланма тытăнчĕç. Яшка хыççăн çиме Васса нӳхрепрен сивĕ турăх илсе тухрĕ, çăмарта кукли касса лартрĕ.

Калаçса апат çинĕ хушăра уçă чӳрече патне ялсовет технички Кĕтерне пычĕ.

— Лекçей Антончă, сана телефонпа райвоенкомата чĕнчĕç, халех каймалла.

Çапла каласа, техничка урамăн тепĕр енне каçрĕ, курăнми пулчĕ.

Лекçей яшт сиксе тăчĕ. Унăн хура куçĕсем пысăкланса кайрĕç, пĕтĕм пит-куçĕ çуталса çивĕчленнĕ пек пулчĕ. Лекçей арăмĕ çине, унтан сетел пуçĕнче таракан амăшĕ çине пăхса илчĕ.

— Çи-ха, çи,—терĕ амăшĕ, чĕтрекен тутисене аллипе хупласа.

— Вара çийĕп, анне,—тесе Лекçей аллинчи кукăль таткине ывăс çине хучĕ, Маруçпа Валентинăна тăратса, сĕтел хушшинчен тухрĕ. Унпа пĕрле Микула та çĕкленчĕ, пиччĕшпе пĕр пек сăнлăскер, пĕр пек шăмшаклăскер, вăл, кулкаласа, Лекçее çупăрларĕ:

— Эпĕ те пыратăп-ха санпа пĕрле... Станцине каймаллаччĕ-ха манăн.

— Ара, Микула, пирĕн иксĕмĕрĕн паян каçхине кĕтӳ патĕнче тăмалла-çке?—терĕ Антун улшăннă сасапа, кĕреçе пек сарлака хура сухалне кăмалсăр сиктеркелесе.

— Каçчен килетпĕр пулĕ эпир?—ашшĕ кăмăлсăрланнипе кулма пăрахса ыйтрĕ Микула.

— Килетпĕр, килетпĕр, велосипедсене хатĕрлес,—терĕ Лекçей, малти пӳртелле кĕрсе кайса. Вăл сĕтел ещĕкĕнчен çар билетне илсе брюки кесъине чикрĕ, унпа пĕрле Маруç халĕ çеç çырнă хут таткине илчĕ.

— Пиçиххи çых, Лекçей, кĕпе çухавине тӳмеле тата, —терĕ Маруç. Унăн çаврака пичĕ тӳлек, ăшă та илемлĕ куçĕсем шухăшлăн пăхаççĕ.

Лекçей тĕрлĕ кĕпи çухавине тӳмелерĕ, анчах та васканипе йăнăш тӳмеленĕ: çӳлти тӳмми валли йăлă çук, тӳмме пĕчченех кăнтарса тарать. Маруç васкаса упăшки çухавине салтса тепĕр хут тӳмелерĕ, сисĕнкĕсĕр унăн кăкри çине пуçне ачашшăн тайрĕ.

— Хатĕр-и?—ыйтрĕ Лекçей, алăк урлă ярса пусса.

— Хатĕр!—илтĕнчĕ алкумĕнчен Микулан уçă сасси.

Тепĕр минутран хапха уçăлни илтĕнчĕ те, Лекçейпе Микула хăйсен машинисене хăвăрт кустарса чӳрече умĕнчен иртсе кайрĕç.

Киле юлнисем, çăмарта куклипе тураха çинĕ-çименех, сĕтел хушшинчен тухса саланчĕç. Антун, алкум вĕçне ларчĕ те, тем мăкăртатса, чĕлĕмне чĕртсе ячĕ. Унăн ялан шăнакан ашшĕ ампар умне, хĕвел çине вата шăмшакне кантарма кĕççе сарса выртрĕ. Маруç ачине йăтса улмуççи пахчине тухрĕ. Унта сирень йываççи айне ларса,

Володьӑна шупкаланнӑ, юлашки сирень чечеккисене татса пачӗ, ачине хӑй ҫумне тытса, шухашлӑн уялла пӑхма тытӑнчӗ.

Апат ҫинӗ хыҫҫӑн Валентина яланах амӑшне чашӑк-тирӗк ҫума, тирпейлеме пулӑшаканччӗ, паян вӑл ку ӗҫе тытӑнмарӗ; пиччӗшӗсем кайсанах урама сиксе тухрӗ, урамӑн аял енелле, ҫӳл вӗҫнелле пӑхса илчӗ, итлесе тӑчӗ, вара каллех пӳрте чупса кӗчӗ.

— Анне, леш урам витӗр станцинелле автомашинӑсем ирте-ирте каяҫҫӗ, хӗрупраҫсем нумайӗшӗ станцӑна ларса кайрӗҫ, эпӗ те каям-и?—ыйтрӗ Валентина, хумханса.

— Каях,—терӗ амӑшӗ. Вӑл паян чашӑк-тирӗк пуҫтармасӑрах сӗтел хушшинче шухӑша кайса ларать.

* *
*

Кун иртрӗ, ял ҫине каҫ тӗттӗмӗ анса хупӑрларӗ, анчах ял халиччен пек лӑпланмарӗ. Ял ҫывӑрмасть: кашни килте пӗкех ҫутӑ пур. Ялсовечӗ умӗнче ҫынсем пухӑнса тӑнӑ. Ял витӗр станца еннелле грузовиксем ирте-ирте каяҫҫӗ. Паян кӗпер ҫине вӑйӑ тухмарӗ, унта парӑппан ҫапса, алӑ ҫупса никам та ташламарӗ. Савӑнаҫла юрӑ, илемлӗ пурӑнаҫӑн юрри, илтӗнмерӗ. Таҫта, ял вӗҫнелле ҫеҫ пӗр илемлӗ сасӑ, арҫын сасси, пӗр ҫавра юрларӗ те чарӑнчӗ. Пӗр-пӗр танкист, халех е ыран ҫара тухса каяканскер, савнипе сывпуллашса, ӑна юрласа пачӗ пулӗ.

Антун киленче Володьӑран пуҫне кӗҫӗр никам та ҫывӑрма выртман. Тӗттӗм пулас умӗн Лекҫей станцӑран таврӑнчӗ.

— Ыран ирех ҫара тухса каймалла, пилӗк сехетре ирхине поезд ҫине ларатпӑр,—тесе пӗлтерчӗ вӑл.

— Валентинӑпа Микула мӗншӗн санпа пӗрле килмерӗҫ? Аҫу кӗтӳ кӗтме пӗчченех кайрӗ вӗт,—терӗ Васса.

Лекҫей, сӗтел ҫинчи графинран шыв ярса ӗҫрӗ те амӑшӗ ҫине кӑшт хӑюсӑррӑн пӑхса илчӗ:

— Паян килеймеҫҫӗ вӗсем... Мӗншӗн килменнине ыран калӑп, халь манӑн правленине кайса ӗҫсене ҫӗнӗ счетовода парас пулать.

Ҫапла каласа, Лекҫей килтен тухса кайрӗ, ире хирӗҫ тин килчӗ. Пӳрте кӗрсен вӑл ача кроватӗ патне пычӗ те ҫывракан ачи ҫине чылайччен пӑхса тӑчӗ, вара ӑна

хуллен, вăратмасăр кровачĕ çинчен илчĕ, пысăк кровать çине вырттарчĕ, хăй салтăнмасăрах ачапа юнашар выртрĕ.

Вассапа Маруç çĕр каçах ĕçлерĕç. Ывăлĕн ыран ирех каймаллине пĕлсен, Васса каçхи ăшă сĕт çине чуста хыврĕ, чăх пусса тĕкне çăлчĕ, тасатрĕ, вўхрепрен какай, хăйма, çу илсе тухса хатĕрлерĕ. Çурçĕр тĕлĕнче Вассапа Маруç вут хутса ячĕç, тул çутăличчен апат çимĕç пĕçерсе те кăларчĕç. Васса пăшăрхава-пăшăрхана ывăлĕ валли шур кутамккана ăшалана чăх, шăрттан, вĕт пашалусем, булкăсем чикрĕ.

Тул çутăлнă-çутăлман Антун патне Лекçее ăсатма тăванĕсем, хурăнташĕсем, куршĕ-аршăсем пухăнчĕç. Сĕтел тулли ĕçме-çиме. Шавлă калаçаççĕ çынсем. Акă автомашина кĕрлени илтĕнчĕ. Антун пўрчĕ тĕлĕнче чарăнчĕ. Лекçей, карт туртăнса, чўречерен пăхрĕ.

— Мана кĕтеççĕ,—терĕ вăл.

Васса, авалхи йăлана тытса, сĕтел çине аякри çул апачĕ—сĕтлĕ пăтăваскаса лартрĕ. Лекçей пăтта пĕр-икĕ кашăк сыпрĕ те ура çине тăчĕ. Тухма пуçланă хĕвел, уçă чўречерен кĕрсе, Лекçей пичĕ çине ўкрĕ, Лекçей йăлтăртатакан куçĕсемпе пўртри çынсене пăхса çаврăнчĕ. Шавласа калаçакан çынсем Лекçей сăмах калассине сиссе шăп пулчĕç.

— Асатте, атте-анне, тăвансем! Тăшман килчĕ, тапăнчĕ пирĕн чечекленекен çĕршыв çине,—терĕ Лекçей, тикĕс шурă шăлĕсене хытă çыртса илсе, вара, ăшра пухăннă çиллине шăнарса, хуллентерех калама тытăнчĕ: —Эпир тăшмана хирĕç çапăçма çак килтен виççĕн: шăллăм, йăмăк, эпĕ каятпăр, каярах акă манăн арăм та пырĕ. Ача пĕчĕкрех пирки военкомат ăна халех мобилизацилеме шутламан. Анчах Маруç, вăрçăра аманакансене пулăшма тесе, хăй ман урлă заявлени пачĕ. Ан кўренĕр, атте, анне, асатте, Микулапа Валентина ĕнер килтен сире хăйсем каяссине пĕлтермесĕрех тухса кайнăшăн. Вăхăт питех те хĕрў: килте пĕр сехет те тытăнса тăмалла мар. Шăллăмпа йăмăк хăйсем каяссине сире малтанах пĕлтерсе чармантарас мар, терĕç. Микула Хĕрлĕ Çара кайма ирĕклĕн çырăнчĕ, тăшман пирĕн çĕршыва тапăннă кунах Хĕрлĕ Çар ретне тăрасчĕ, тесе васкарĕ. Валентина донор пулма, хăй юнне вăрçăра аманнă çынсене пама пулчĕ, медсестра пулса фронт çывăхĕнче ĕçлес, терĕ. Вăл каçхине Шупашкара медсестрасен курсне кайрĕ. Макçăм, кĕçĕн шăллăм, ĕнер ирхинех çапăçă-

ва кӗнӗ пуль ӗнтӗ. Вӑл пирӗн Владимир-Волынск хулинче пуранатчӗ... Савӑнать манӑн чӗре хаман тӑвансемшӗн... Ҫак харушӑ тапхӑрта, хаяр тӑшман тапӑнна вӑхӑтра, кашни сывӑ ҫын килте канлӗ ларса юлма пултараймасть.

— Ҫапла, ывӑлӑм, ҫапла. Урӑхла пулма та пултараймасть,- сухалне сиктерсе каларӗ Антун.—Микула та, Валентина та кайччар, пурин те тӑшмана хирӗҫ тӑмалла!

— Би-и ию, би-и ю!—кашкартрӗ шофер чӳрече умӗнче.

Лекҫей, уҫа кантӑка пешкӗнсе, кабинаран пӑхакан шофера аллипе кашт сулчӗ:

„Халех, ан васкат“.

— Хамӑрӑн тӑван ҫӗршыва тӑшманран сыхласси кашни ӗҫҫыннишен пит пысӑк хисеп, калама ҫук чаплӑ ӗҫ! Рахмат сире, атте, анне, асатте, пире сывлӑхлӑ ӳстернӗшӗн, ҫӗршыв тӑшманне хирӗҫ тӑма пултаракан ҫынсем тунӑшӑн. Эпӗ хам Хӗрлӗ Ҫара кайма пултарнӑшӑн савӑнатӑп.

— Тӗрӗс сан сӑмах, ачам... Пил пултӑр сире пурне те тӑшманран вӑйла пулма, ӑна ҫӗнтерме, киле чипер ҫавранса килме,—терӗ Васса, куҫӗсене шӑлса. Унпа пӗрле хӗрарӑмсем те ӗсеклеме тытӑнчӗҫ.

Васса ӗнер те, паян та йӗнӗ, анчах ҫак самантри куҫҫуль—ачисем уйрӑлса кайнӑшӑн чун хурланнипе тухмарӗ, Лекҫей калани ытла черене ҫыпӑҫрӗ, халиччен хускалман туйӑмсене хускатрӗ.

— Кӗяс пуль, вӑхӑт минутпа шутланакан пулчӗ,—терӗ Лекҫей, стена ҫумӗнчи сехет ҫине пӑхса.

— Кай хӑвартрах, кая юлӑн,—терӗ Маруҫ, паҫӑрах вӑранна ачине Лекҫее тыттарса. Володя ашшӗ патне кула-кула туртӑнчӗ. Урамра каллех машина сасси илтӗнче.

Лекҫей васкавлӑн пуринпе те сывпуллашрӗ, пӳртрен хӑвӑрт тухрӗ, машина ҫине ларчӗ. Ҫав самантрах мотор кӗрлерӗ, машина туртӑнчӗ, малалла хытӑ ывтӑнчӗ.

Ӑсатма килнӗ ҫынсем саланчӗҫ.

Лекҫее ӑсатсан, Антунӑн пушанса юлнӑ пӳрте кӗрес килмерӗ. Вӑл тӳрех колхоз картишӗ еннелле утрӗ. Ӑна хирӗҫ бригадир пырать.

— Антун пичче, Микула Хӗрлӗ Ҫара кайрӗ, ӗнтӗ ун вырӑнне юлташ кама тупса парас-ши сана?

Антун пысӑк сухалне якаткаларӗ, шухӑша кайнӑ пек, пӗр тӗле пӑхса тӑчӗ те каларӗ:

— Мана Микула выранне çын кирлех мар пуль, ун выранне те хамах ĕçлетĕп. Заводсенче, фабрикăсенче рабочисем темиçе станоксемпе ĕçлеççĕ-çке, манăн мĕнма икĕ бригада лашине пăхас мар?

— Ой, Антун пичче, пит аван, эсĕ икĕ бригадăнне пăхма аванах ĕлкĕретĕн, сан çине шанмаллăх пур,—хавас пулчĕ бригадир.

* *
*

Çав кунах, каçхине, Васса хуньашшĕ, старик, тĕплене çăмат, ваткăллă фуфайка, çĕлĕк тăхăнчĕ.

— Эпĕ каятăп,—терĕ вăл кăмака умĕнче кăштăртатакан Вассана.

— Ăçта каятăн тата, ати?—ыйтрĕ Васса.

— Ферма хуралне каяс тетĕп. Виç çултанпа хурала тухман та... Каçал тухас, терĕм, сĕт тултарса пар-ха,— терĕ старик, камака кукрине пырса.

Пĕр курка ăшă сĕт ĕçсе, кукăль татăкĕ илчĕ те старик, хурала тухса кайрĕ.

* *
*

Маруçăн каймалли повестка килнĕ кун çанталăк сивĕтрĕ. Иртеннех кĕркуннехи пек хăмăр пĕлĕтрен çумăр сапать, çутçанталăк куççуль тăкнăн туйăнать, урса кайнă фашизм халах юнне тăкнăшăн йĕрет темелле, сивĕ, кичем кун пулчĕ.

Маруç каймалли кун та хăй ĕçне ĕçлерĕ. Пилĕк сехетре киле килчĕ те аякри çула кайма пуçтаранчĕ, сакăр сехетре каçхине кайма хатĕрленчĕ. Васса вут хутса тĕрлĕ тутлă çимĕçсем пĕçерчĕ, кинĕ чемоданне тултарчĕ. Каçа хирĕç Маруç çумăр витĕрех колхоз ăйăрне кӳлнĕ тарантас çине ларса кайрĕ.

Васса Володьăна амăшĕнчен алкум вĕçĕнче илсе юлчĕ. Пӳрте кĕнĕ чух Васса ачана хăй çумне чăмăртаса тытрĕ.

— Кайтăр аннӳ те, тăшмана пĕтерме хамăр çара пулăштăр. Пурин те пĕр çын пек харăс çĕршыва хӳтĕлеме тăмалла, тенĕ, урăхла пулма та пултараймасть,—аса илчĕ вăл ывăлĕн сăмахне.

Тăшмана хирĕç кĕрешме ытти килсенчен те икшерĕн те виçшеррĕн тухса кайрĕç. Хаяр вăрçă, нихăçан курман-илтмен вăрçă пуçланчĕ.

— Çĕнтерӳ пирте пулмалла!—тесе çĕкленчĕ халăх.

1941.

---

## ПИРĔН САВĂНĂÇ

*Калав*

I.

Электричество лампи паçăрах çутăлнă, анчах пӳртре никам та курăнмасть. Шăп. Чăлан çумĕнчи сехет кăна майĕпен шаккать тата кăмака çинче такам ассăн сывласа выртни илтĕнет.

Пӳрчĕ ăшă, таса. Пӳртри япаласем пурте тирпейлĕ, аван,—харпăр хăй вырăнĕнче тăраççĕ. Чӳречисене шурă̆па карнă. Кăвак клеенка сарнă сĕтел çинче пĕр айăккинче кĕнекесем, тепĕр енче тетрадьсем купаланса выртаççĕ, варринче—тăваткал чернил кĕленчи. Ун умĕнче ручка, карандаш, готовальня выртаççĕ. Сĕтел тĕлĕнчи стена çумĕнче Ленин, Сталин, Мичурин, Тимирязев сăнĕсем. Вĕсен айне шинель тăхăннă çывнăн фотоӳкерчĕкне çыпăçтарнă. Ун çине аяла: „Юратнă хĕрĕме Нинăна—юратакан ашшĕнчен асăнмалăх. 1942 çул, фронт", тесе çырнă.

Стена çумĕнче йăлтăркка сăрлă таса пукансем, вĕсем çине нихăçан та тусан пĕрчи ларман пулĕ, темелле. Сарă сăрлă урай йăлтăртатса выртать. Кăмака çумĕнче шупкакăвак утиял витнĕ, шурă минтерлĕ кровать ларать.

Чăлан çумĕнчи сехет хыттăн янăратса саккăр çапрĕ. Кăмака çинче çын ӳсĕрчĕ, кăштăртатрĕ, анасларĕ, кăштăрсан пуçне çĕклесе кăмака çинчен карчăк пăхрĕ.

— Нина, эсĕ килнĕ-и?

Карчăка хирĕç никам та чĕнмерĕ. Вăл тарăхса кайрĕ. Хăй пуççĕн ятлаçать:—Сакăр сехет çитнĕ, халĕ те килмен! Ах чарусăр! Тухать те чупать, тухать те чупать. Патакчĕ!.

Карчăк кăмака çинчен кăштăртатса анчĕ. Пуçĕ çинчи чалăшса кайнă шурă тутрине юсаса çыхрĕ. Хĕрлĕ улача кĕпи çинчен кивĕ, вылькăх патне тăхăнса тухакан пальтоне уртса ячĕ, чăлха вĕççĕнех алăкран тухса кайрĕ.

— Çав чупкăна кĕтсе çенĕк алăкне питĕрмесĕрех выртса çывăрнă. Килсен—уçас мар-ха. Шаккатăр, тарăх-

тăр. Ăçта чупать-ши вăл? Мĕнле хăрамасть-ха çĕрле çӳреме? Шкултан килсен, кăкарса лартмах тивет пуль чупкăна.—Карчăк хăй пуççĕн çапла мăкăртатса çенĕк алăкне кĕле хывса кĕчĕ, пальтоне пăтана çакрĕ, хуллен кăштăртатса каллех кăмака çине хăпарчĕ. Кăмака çинчи ăшша хĕрĕнсе карчăк тин майлашса выртнăччĕ, кĕçех çенĕк алăкне шаккани илтĕнсе кайрĕ.

— Йыт турташшĕ ачи!—шăл витĕр вăрçса илчĕ те карчăк кăмака çинчен васкаса анма тытăнчĕ. Алăка шакăртаттарни хытăрах илтĕнет.

— Чим-ха, чим! Тăхта ĕнтĕ кăштах! Кĕтнĕ чух килмест,—чупкăн! Халь пур—сывлама та памасть!

Карчăк вăрçа-вăрçах алăка тухса уçрĕ. Ун хыçĕнчен пӳрте пĕр вунă-вуникĕ çулхи хĕрача кĕрсе тăчĕ. Кĕрсенех вăл, кăвак пустав пальтоне карчăк пальтопе юнашар çакрĕ, хура çăматтисене хывса кăмака хыçнелле лартрĕ, пуçĕнчи хăмăр мамăк тутрине тăваткăлласа кровать пуçĕ çине хучĕ. Хĕрачан пичĕ сивĕпе кĕренленнĕ, йăлтăркка хурлăхан пек куçĕсем савăнăçлă пăхаççĕ. Икĕ айăккинелле кăнтарса тăракан пуклак çивĕчĕсене якаткаласа, хĕрача сĕтел умнелле пычĕ.

Карчăк хĕрача çине сиввĕн пăхса тăчĕ те çиллессĕн каласа хучĕ:—Ăçта çӳрерĕн-ши ĕнтĕ?.. Аçу-аннӳ çук. Ман сăмаха кĕрĕшместĕн! Шутламастăн мана. Ах тур! Хăçан чарăнĕ-ши ку вăрçă? Хăçан аçу килĕ-ши? Пăсăлса кайрăн ĕнтĕ эсĕ, ачам. Чупкăна тухса кайрăн. Кунашкал чупсан, вĕренесси те пулаймасть санăн.

— Ан хăра маншăн, мăнакай,—терĕ хĕрача, карчăк çине йăлтăркка куçĕсемпе ăшшăн пăхса.—Ан тарăх, ан кӳрен. Эпĕ...

— Кашни шăматкун кайса çухалатăн-çке-ха эсĕ!—хĕрача сăмахне пӳлсех, хыттăн каларĕ карчăк. Хăй çаплах хĕсĕк те çилĕллĕ куçĕсемпе шăтарса пăхса тăрать.

— Эпĕ...

— Ан калаç! Чарусăр! Таçта çӳретĕн! Аçу патне çырса ярам-ха...

Нина кăмăлсăрланчĕ. Йăлтăркка куçĕсене мăнаккăшĕ çинчен илсе айăккинелле пăхрĕ, пĕчĕк тӳтисене шăт тытрĕ, чĕнмерĕ.

— Ах, терт!.. Нихăçан та ятламăттăм эпĕ сана, Нина. Чунăм тӳсмест,—терĕ карчăк, хăй çиллине кăштах сӳрĕлтсе.

Нина икĕ чӳрече хушшинче тăракан юман рамăллă тĕкĕр патне пычĕ. Тĕкĕр çине пăхса, чалăшма тытăннă хĕрлĕ галстукне юсаса çыхрĕ, кĕскерех кăвак бумазей кĕпине турткаларĕ, пăхкаларĕ, çанă çине çыпăçнă шурă çăм тĕввине илсе пăрахрĕ, вара чăлана кĕрсе шуç рукомойникри шывпа аллисене çурĕ.

— Чупса çӳренипех хырăм тăранмасть пуль, çиес килетех пуль-ха?—терĕ карчăк тăрăхлас кăмăлпа, Нина çине кăшт ăшăраххăн пăхса.

— Çиесех пулать ĕнтĕ. Паллах, кашни чĕрчун çиет, —терĕ Нина, мăнаккăшĕ ятлаçма пăрахнине кура илемлĕ тутисемпе кулкаласа.

— Ах, Нина, хĕрĕм,—çемçелсех калаçма тытăнчĕ карчăк,—хăратăп-çке-ха эпĕ сана мĕн те пулин аван мар пуласран. Эсĕ куç умĕнче çук пулсан, эпĕ ялан саншăн шикленсех ларатăп. Начар вĕренесрен хăратăп. Эсĕ начар вĕренме тытăнсан, аçу мĕн калĕ вара?

Нина мăнаккĕш патнерех пычĕ, ăна куçран ăшшăн пăхса каларĕ:

— Мăнакай, эпĕ начар вĕренесрен эсĕ нимĕн те ан хăра, ан çилен мана. Эпĕ чупкăн, чарусăр тесе атте патне ан çырса яр тата!

Карчăк тата та ытларах çемçелчĕ. Унăн хĕсĕк куçĕсем ăшăнса, аванланса кайрĕç.

Нина мăнаккăшне майран çакăнчĕ. Мăнаккăшĕ ăна çурăмран лăпкарĕ.

— Ах, Нина, хĕрĕм, юратса ятлатăп эпĕ сана, ырă сунса... Апат кăларса парас-и кăмакаран? Эсĕ час килмерĕн те, эпĕ хам паçăрах çирĕм. Хур ашĕпе пĕçерне пăтă тата сĕт пур.

— Эсĕ ан чăрман мăнакай. Апатне эпĕ хамах кăларса çиетĕп, тирĕк-чашăка çăватăп. Эсĕ çывăрах. Кун каçа ĕçлесе ывăнтăн пуль, çывăр.

— Юрĕ, хĕрĕм. Апатна çи те—эсĕ те çывăр,—терĕ ăна мăнаккăшĕ. Сăмахне каланă хушăрах вăл айлаткаласа кăмака çине хăпарчĕ.—Саватсене çуса вăхăта ан иртер, ыран хам çăватăп,—хушса хучĕ вăл, кăмака çине майлашса выртсан.—Çилĕ килсен, ятлаçас килет çав... Аçу мĕн каласа хăварчĕ-ха мана хăй фронта тухса кайнă чух: Нинăна аван усра, асту, ан чирлетĕр, аван вĕрентĕр, терĕ. Эсĕ вĕт аçун пĕртен-пĕр тĕпренчĕкĕ, пĕртен-пĕр çăлтăрĕ...—Карчăк сасси çемçелсе, вăйсăрланса çитрĕ те юлашкинчен шăпах пулчĕ.

Нина, апат çисе савăт-саписене тирпейленĕ хыççăн, чăлантан тухса сĕтел умне пырса ларчĕ, шухăша кайрĕ.
„Ыран канмалли кун. Ыран каçхине отряд сборĕ, татах каймаллисем пулаççĕ. Каллех чарусăр, каскăн ятне илтме лекет ĕнтĕ ку мăнакайран",—шухăшлать вăл хăй ăшĕнче.

Акă вăл тетрадь купи çинчен расписани илсе пăхрĕ. Тунтикун 6-мĕш класра пĕрремĕш урок—вырăс чĕлхи пулать. Имя числительное. 272-мĕш упражнени парса янăччĕ. Нина ку урока паçăр шкултах хатĕрленĕ, халĕ тепĕр хут пăхса тухма тытăнчĕ. Вырăс чĕлхи Нинăн чи юратакан урок. Нина малалла 273, 274-мĕш упражненисене вуласа, çырса хучĕ. Алгебрăпа икĕ задача панăччĕ. Нина вĕсене шутлама тытăнчĕ. Икĕ задачи те пит аван шутланчĕç. Нинăн татах шутлас килет. Малалла татах çичĕ задача шутларĕ. Задачи йывăр пулсан, тухмасан, пушшех шутлас килет. Тухман задачăна шутласа кăларсан, ыррăнрах туйăнать: çĕнтертĕм сана вĕт! теес килет савăннипе.

Алгебра хыççăн Нина географипе, историпе вуларĕ. Физикăпа панă заданисене эрнекун каçхинех хатĕрленĕччĕ. Çапла вара тунтикун валли пĕтĕм уроксем пурте хатĕр.

Нина сехет çине пăхрĕ—вунă сехет çине кайнă, çывăрма вăхăт. Анчах çапах та çывăрма çук-ха. „Ыран ирех тăмасан та юрать,—шутларĕ Нина.—Мăнакай çывăрнă чух, çав ĕçе те пĕтерсе пăрахам-ха". Нина кăмака еннелле пăхса илчĕ, унтан пальти патне чĕввĕн пусса пычĕ те кĕсъинчен шурă çăмран çыхма пуçланă пĕчĕк алшишсем кăларчĕ; ăнсăртран, алшишсемпе пĕрле, çăмхи те сиксе тухса çĕре—пат! сиксе ӳкрĕ. Кăлтăр-кăлтăр кусса кайрĕ. Нина çивĕчĕсене ласт-ласт тутарса çăмăллăн сикрĕ, çăмхине хăвăрт ярса илчĕ, сĕтел çине хучĕ, алшишсене илсе чăлана кĕрсе кайрĕ. Нина хуллен самовар лартса ячĕ, самовар труби ӳксе сасă тăвасран Нина ăна пит астуса тытсах тăчĕ. Самоварĕ часах вĕресе тухрĕ. Нина алшишсене шăвăç таз çине ячĕ. Ун çине шыв юхтарчĕ. Пĕçернипе аллисене вĕркелесе алшишсене супăньпе сĕрсе çума тытăнчĕ. Супăньпе çунă хыççăн, вĕсене ик-виçĕ хут тăрă шывпа чӳхерĕ. Алшишсем çепçемçе, шап-шурă пулчĕç. Нина алшишсене ывăç тупанĕ çине хурса, хăй ĕçĕпе хăй савăнса кайрĕ. Çак вăхăтра кăмака çинчи мăнаккăшĕ кăштăр-кăштăр турĕ, ӳсĕрсе илчĕ.

— Нина, халĕ те сӳнтермен-ҫке эсĕ электрицăна?— кăмăлсăр сасăпа каларĕ карчăк.

— Вăхăт нумай иртмен-ха, мăнакай,—терĕ Нина. Хăй хăвăртрах кăмака тĕпне хаҫат татки сарчĕ те алшишсене кăмакана пăрахрĕ, ăна питлĕхпе хупласа хучĕ; пăртак итлесе тăчĕ. Карчăк йăшăлтатви илтĕнмерĕ; кăмака ҫинчен анмасть пулмалла, шăп пулчĕ, каллех ҫывăрса кайрĕ пулас.

Нина ҫывăрма шутламасть-ха. Никам кансĕрлемен чух вăл татах тепĕр ĕҫ тума тытăнасшăн. Вăл пальто кĕсъинчен чăлха ҫыхмалли йĕпсене илчĕ, паҫăр сĕтел ҫине хунă шурă ҫăм ҫиппи ҫăмхине илсе пĕчĕк чăлха ҫыхма пуҫларĕ. Хăвăрт ҫыхать Нина. Мăнаккăшĕ кăмака ҫинчен анасран,—алшишсене, чăлха ҫыхма тытăннине курасран хăрать вăл. Мĕн ĕҫленине пĕлсен, мăкăртатсах тарăхтарать ҫак карчăк вара Нинăна, текех ятлаҫать. Пĕрре Нина, шкултан таврăннă чух, хăйсен кӳршĕнчи карчăка тĕл пулнă. Карчăк шкул хыҫĕнчи ҫырмаран шыв кӳрсе хăпарать. Ҫумăр ҫунă та сукмак пылчăкланса кайнă, карчăк ури шунипе утаймасть.

— Кӳр, асанне, хам йăтса хăпартам витрӳсене,—терĕ Нина. Сывлайми пӳлĕнсе ҫитнĕ, вăйран сулăннă карчăк шыв ҫĕклемне хавассăнах Нинăна пачĕ. Нина карчăк шывне, ҫырмаран ҫеҫ мар, килнех йăтса ҫитерсе унтан татах тепĕр ҫĕклем те кӳрсе пачĕ.

— Спаҫипах сана, ачам, мана пулăшнăшăн. Аҫу вăрҫăран ырă, сывă таврăнтăр. Хăвна аван вĕренме, сывлăхлă пулма турă пулăштăр. Кин тăвар илме станцăна кайрĕ те, килмерĕ-ха. Ҫул ҫинче ҫумăр пусрĕ пуль... Килте шыв пĕр тумлам та ҫук. Кӳрем-ха хамах пĕр ҫĕклем, терĕм. Вăй ҫук. Ватăлтăм. Петр вăрҫăра вилни ҫинчен хут килнĕренпе пушшех те вăйран сулăнтăм... Пысăк тав сана, хĕрĕм, спаҫипах!

Нина карчăка пĕчĕк пулăшу панăшăн килнелле хаваслanса чупрĕ.

Карчăка шыв кӳрсе панине Нина мăнаккăшне каламан. Анчах мăнаккăшĕ таҫтан, такамран пĕлнĕ ăна. Мăкăртатма тытăнчĕ Нинăна: тарҫа кĕрĕшрĕн-и-мĕн! тесе тарăхтарать текех.

Нина васкасах ҫыхать. Пĕчĕк чăлха хăвăрт ӳсĕнет. Ҫыхнăҫемĕн Нина ашшĕ сăнĕ ҫине пăха-пăха илет, ун ҫинчен шухăшлать. Ашшĕ фронта тухса кайнă чух ҫапла каларĕ: Сывă пул, хĕрĕм. Тăрăшса вĕрен. Кама пулăшма

пултаратăн—пулăш! Кирлĕ вăхăтра пулăшу пани—пархатарлă ĕç. Тимурпа унăн команди çинчен пĕлен,—çавсем пек пул, терĕ. Нинăна çĕклесе чуптурĕ, хăй çумне хĕстерчĕ, шывланнă куçĕсене мăчлаттарса илчĕ те, хĕрне хăй ытамĕнчен ярса пўртрен тухса кайрĕ. Фронта кайиччен Нина ашшĕ колхозра бригадир пулнă. Вăл колхозра пуян, культурăллă пурăнăç тăвассишĕн нумай ĕçленĕ, хăй килйышĕ валли çав пурăнăçа тунă. Тăван амăшне Нина тĕлĕкри пек çеç, вăл тупăкра выртнине кăна астăвать. Çакăн хыççăн вара ăна амăшĕн аппăшĕ, Селле карчăк, пăхса ўстернĕ. Пĕчĕк чăлха çуррине яхăн çыхăнна ĕнтĕ. Нинăн паян ыйăхи те таçта вĕçсе кайнă. Халиччен вăл вунă сехетре çывăрма выртаканччĕ, халĕ ыйхă килмест... Çап-çутă çунакан лампочка сасартăк мăч! турĕ, хĕрелме тапратрĕ, тепĕр самантран сўнсе те ларчĕ. Колхоз электростанцийĕ вуникĕ сехетчен çеç çутă парать. Çамхипе чăлхине мăнаккăшĕ курасран Нина ниçта пытарма аптрарĕ, кирек ăçта хурсан та вăл тупассăн туйăнать.

„Хамăн пальто кĕсъине чикем те, ыран ирхине ирех Тамарăсем патне кайса хуратăп,“—шутларĕ Нина. Çамхапа чăлхана сĕтел çинчен илсе, вăл тумтирсем çакăнса тăракан çĕре пычĕ. Тĕттĕмре хыпашлакаласа пальто кĕсъине малтан çăмхине ячĕ, ун хыççăн вăрăм йĕпĕсемлĕ чăлхине чиксе хучĕ. Йĕпписем ан кăнтарса тăччăр тесе, Нина вĕсене пускаларĕ, анчах вĕсем ăшăх кĕсъене аванах вырнаçаймарĕç. Тытса пăхсан, йĕпĕсем кăнтарса тăни çаплах алла лекет. Нина хăвăрт салтăнса утиялпа витĕнсе выртрĕ, паян тунă ĕçсемшĕн кăмăллă пулса, канлĕн çывăрса кайрĕ.

## II.

Сехет тăваттă çапсан, Нина мăнаккăшĕ, Селле, вăранчĕ. Пўртре тĕттĕм; тул çутти пиллĕк сехетре тин килет. Кăвак сурăх пăруламарĕ-ши, ире хирĕç пăруламалла пекчĕ, тесе аса илчĕ карчăк. Вăл кăштăртатса çăматтине тăхăнчĕ, камака çинчен анчĕ, пуçри çўхе тутри çинчен тата çăм тутар çыхрĕ те пальтоне тăхăнса тухса кайрĕ. Çенĕкенче Селле кĕтесре çакăнса тăракан хунара хыпашларĕ, хунарĕ алла лекмерĕ, Нина ăна урăх çĕре çакнă пулмалла. Сурăххи пăрулана пулсан, хунарсăр та чухлăп тесе, Селле карташне тухрĕ.

Çанталăк сивĕ, уяр. Тўпери çăлтăрсем, куçĕсене чарса пăхнă пек, çуттăн курăнаççĕ. Юра качăртаттарса Селле

вите патне пычĕ, сурăхсен вити алăкне кăшт хыпашларĕ, итлерĕ. Витере шăп. Сурăхсем канлĕн кавлесе выртни илтĕнет. Çын пыниче туйса пулĕ, витери ĕне пĕр-икĕ хутчен ĕнĕрлесе илчĕ. Ăна кăшт апат парас тесе, Селле пусма тăрăх сарайĕнчи сайхалăх çине хăпарчĕ. Хулайне утă хĕстерсе вăл анма тăнăччĕ, ури теплерен шуса кайнипе карчăк кăштах ӳкеймерĕ, хутланса ларчĕ, вара хуллен шуса пусма çине ярса пусрĕ.

Анма тытăнсанах Селлене пальто аркинчен темскер туртнă пек туйăнчĕ. Селле шартах сикрĕ, хăй çапах каялла çаврăнса пăхрĕ. Анчах та тĕттĕмре нимĕн те кураймарĕ. Карчăк хăвăртрах анма тытăнчĕ. Сасартăк хыçалтан татах туртăнчĕ те карчăк пуçĕ çине темскер сиксе ларчĕ. Сехри хăпнă Селле аллипе хăвăрт çапкалашса, тискер япалана çĕрелле ывăтса ячĕ.

— Ах, турах! Пĕтрĕ пуç! Мĕскер шуйттанĕ ку! — çухăрчĕ Селле. Юлашки пусма картлашки çинчен ансанах, хул хушшинчи утине çĕре пăрахса, карчăк пӳртелле талкăшрĕ. Каллех хыçран туртăннă пек туйăнать. Селле çаврăнса пăхрĕ. Хыçалтан хайхи темĕскер, хăй пысăках та мар, юр çийĕпе сиккелесе пыни курăнать. Ураллă, мăйракаллă пек вăл, чăк-чăк туса сикни илтĕнет. Селле чĕтресе, сывлăшсăр пулса, пӳрчĕ патне çитрĕ, васкасах алкум картлашки çине хăпарчĕ. Лешĕ, темĕскер, Селле хыççăн сикрĕ, ăна уринчен тапнă пек туйăнчĕ. Шари! çухăрса ярса, Селле çенĕке тарса кĕчĕ, алăка шалт! хупса лартрĕ, хăй пӳртелле тăсăлса ӳкрĕ...

— Нина-а! тăр ха, тăр! хыçалтан темскер хăвалать, — кăшкăрса ячĕ Селле. Нина туймарĕ. Селле ыратакан чĕркуççине аллипе сăтăркаларĕ, аран-аран ура çине тăчĕ, пальтоне хывса пăтана çакрĕ те кăмака патне пычĕ. Кăмака çинчи ăшă вырăнĕ çине хăпарса выртсан та Селле лăпланаймарĕ, çаплах чĕтрет, чĕри кăлтлатса сикет. „Ах, турах, вилĕм хăваларĕ пуль мана! Çывхарать пуль вăл. Нинăна ӳстерсе хăвараймарăм. Ашшĕ вăрçăран киличчен те пулин пурăнаясчĕ хуть“. Çакнашкал хурлăхлă шухăшсем пуçра çаврăннипе Селлен ыйхи килмерĕ. Электричество лампи çутăлсан, Селле кăмака çинчен кăштăртатса анчĕ. Ирхи апат хатĕрлемелле. Выльăхсене апат памалла, вут хутмалла; ĕç нумай, кăмака çинче выртса пулмасть. Чи малтан Селле вут çĕклесе кĕресшĕнччĕ, анчах тул çутăлман-ха. Селле картишне вутă тухса илме шикленчĕ. Малтан лучче яшкалах, шарккулăх çĕрулми

шуратса хатĕрлес тесе, Селле чăлана кĕрсе витрери çĕрулмине шуратрĕ, çурĕ, турарĕ. Пĕр кишĕр тасатса турарĕ, вара палан иртме тытăнчĕ. Шурăпа карнă чÿречесене кĕрен çутă çапрĕ, электричество сÿнчĕ. Селле, вут йăтма тухас тесе, пальтоне тăхăнма пычĕ, урайĕнче шурă çăм çиппи выртнине курах кайрĕ. Мĕнле çип ку, ăçтан тухнă тесе, Селле урайĕнчи çипе илме пикенчĕ. Çипĕн пĕр вĕçĕ алак айне хĕсĕннĕ, тепри Селле пальтăвин кĕсъинчен усăнса тăрать. Селле аллине кĕсъене чикрĕ, унта çăмха пур. Мĕнле çăмха ку? Аçтан вăл килсе лекнĕ ман кĕсъене тесе, Селле çăмхана çавăркаласа пăхрĕ. Çиппи хулăн, аван пĕтĕрнĕскер. Селле çипе çăмха çине çăмхаласа алăк патне çитрĕ, алăка уçрĕ. Çип çенĕк тăршшĕпех тăсăлса, тулаллах тухать. Çиппине çăмхаласа вăл çенĕк алăкне те уçрĕ. Пăхать—картлашка çинче çыхма пуçланă пĕчĕк чăлха, йĕпĕсемпе тармакланса выртса парать. Селле пĕççине шарт! çапрĕ.

— Акă-çке вăл манăн вилĕм! Мана хăратса хыçалтан тимĕр урисемпе чăклаттарса пыраканни!—тĕлĕнчĕ Селле. Чăлхана илсе Селле пÿрте кĕчĕ. Тĕлĕнсе те пĕтерейместь.—Ăçтан килсе лекнĕ ку япала пирĕн пата?! — тесе, Селле чăлхипе çăмхине сĕтел çине хучĕ.

Селле карташне тухса вырьăхсене апат пачĕ, пÿрте кĕнĕ чух пĕр çĕклем вутă йăтса кĕчĕ. Кăмакана вутă хурас тесе, Селле питлĕхе уçрĕ. Каллех пĕççе шарт! çапрĕ: кăмакара хаçат татки çинче пĕчĕк те шап-шурă алшишсем!

— Акă япала! Тĕлĕнтермĕш ку паян! Ăçтан килсе лекнĕ-ха кăмакана ку алшишсем?—каллех тĕлĕнет Селле. Вăл алшишсене илчĕ, пăхкаларĕ те сĕтел çине хучĕ, вара вут хутма тытăнчĕ.

Ĕçленĕ хушăра та Селле çăмхапа чăлха çинчен, алшишсем çинчен шухăшлать, тĕлĕнет. Çак япаласем пирки вăл часрах Нинăпа калаçасшăн. Паллах, Нина ĕçĕ ку.

Вут çуннă хушăрах, тем аса илсе, Селле алкумĕнчи чăлана тухрĕ, чăланта пăтаран çакăнса тăракан пĕрне ăшне пăхрĕ. Пĕрнере пысăк çăмха, çăм çиппи çăмхи пурччĕ. Ку çăма Нинăна фермăри путексене шефа илсе аван пăхнăшăн паначчĕ. Селле çав çăмран Нина валли фуфайкă çыхтарасшăнччĕ, кÿршĕ карчăкне арлаттарчĕ. Анчах Нина, кирлĕ мар мана фуфайка, манăн кивви те лайăх-ха тесе, фуфайка çыхтармарĕ. Çăм çиппи урăх çĕре те кирлĕ пулма пултарать, унпа эпĕ хам мĕн çыхас

тетĕп, çавна çыхма пултаратăп, тесеччĕ вăл. Мăнаккăшĕ, çак сăмахсене илтсен, Нина çине сиввĕн пăхрĕ, анчах ăна Нина асăрхаймарĕ. Мĕншĕн çăмхана арчанах питĕрсе хумарăм-ши тесе, Селле хытă пăшăрханать. Пысăк çăмхаран çурри те юлман, вĕт! Ăçта хурса пĕтернĕ-ши ку çăм çиппине путсĕр ача, тесе, хуйхăрать Селле. Ырă енне мар Нина кашни шăматкун таçта кайса çухални. Пăсăлса кайрĕ ача. Кам та пулин илĕртет пуль ăна: çавна пар, куна пар, тет пулĕ. Пăх-халĕ ăна, килти япаласене сĕтĕрме тытăнчĕ. Мĕн калĕ мана ашшĕ! Ват супнă, ачана асăрхайман, пăсса янă; вăрă пек, килти япалана таçталла сĕтĕрме вĕрентнĕ, тейĕ.

— Ах, вăл—ăш хыппи!

Çапла ăшчикне çунтарса Селле пӳрте кĕчĕ, кăмакари çунса пĕтме тытăннă вуттине турчăкапа пăлхатрĕ, çӳлти юшкине кăшт тайрĕ. Нинăна ятлас килнипе Селле, Нина вăрантăр тесе, унăн кроватьне хуллен силлерĕ. Нина вăранчĕ, сиксе тăчĕ, хăвăрт тумланать. Сĕтел çинче алшишсем тата çăмхапа чăлха йĕпĕсене тăратса выртнине курсан, Нина пĕчĕк хĕрлĕ тутисене çыртрĕ, хура куçĕсемпе йăпăшшăн мăнаккăшĕ çинелле пăхрĕ.

„Пĕтерет ĕнтĕ мана мăнакай. Лекрĕм! Хам айăплă: нумай çывăрнă. Мăнакай вăраниччен алшишсене кăларса пытармалла пулнă",—шухăшларĕ Нина.

Мăнаккăшĕ сивлек куçĕсемпе Нинăна тĕлленĕ.

— Йыт турташшĕ ачи! Хăраса вилеттĕм паçăр, сурăх пăхма тухсан! Мĕншĕн ман пальто кĕсъине çыхма пуçланă чăлхапа çăмха чиксе хунă-ха эсĕ?—хирме тапратрĕ Селле.

Нина, малтанах мĕн пулнине ăнланмасăр, мăнаккăшĕ çине тĕлĕнсе пăхрĕ, пуçне сулларĕ.

— Акă çак чăлхапа çăмха ман кĕсъере, пальто кĕсъинче пулнă,—сĕтел çине тĕллесе кăтартрĕ Селле.—Кам чикнĕ ăна? Эсĕ вĕт?

— Эпĕ хам кĕсъене чикрĕм терĕм-çке, сан пальто кĕсъине чикнĕ-шим вара?—терĕ Нина, мăнаккăшĕ çине ним пулман пек кăмăллăн пăхса, мăнаккăш çиллине сĕвĕртесшĕн пулса.

— Каскăн выльăх пек, каçпала таçта чупса çӳрени çитмест, килти япаласене çухатма тытăнтăн-и-ха тата? Ăçта хыврăн пĕрнери çăм çиппине? Çак алшишсемпе чăлхана мĕншĕн çыхрăн? Кам валли? Ытти çăм çиппи ăçта?—ятлама тытăнчĕ Селле.

— Ку алшишсемпе чăлхана Марине аппа ачисем вăл-ли çыхатăп. Унччен икĕ мăшăр перчатка çыхса фронта янăччĕ,—терĕ Нина, мăнаккăшĕ ятлаçма тытăннăшăн кăмăлсăрланса. Нина чăлана çавăнма кĕчĕ. Мăнаккăшĕ çав вăхăтра сĕтел çинчи алшишсемпе чăлхана илсе тула тухса кайрĕ. Нина çăвăнса шăлăннă вăхăтра мăнаккăшĕ кĕчĕ, усал пит-куçпа Нина умне пырса каларĕ:

— Ан та шыра, тупас çук! Акă мĕнле вĕреннĕ-ха вăл килти япалана салатма!.. Патакчĕ сана!

Ятлаçа-ятлаçах Селле кăмакаран кăвар туртрĕ, хатĕрленĕ апатсене кăмакана лартрĕ. Хăй çавах Нина çине сиввĕн пăха-пăха илет. Ирхи апат валли çатма çинче ăшалана çĕрулмине чăланти сĕтел çине лартрĕ.

— Çи,—терĕ Селле кăмăлсăрланса тăракан Нинăна.

— Эпĕ сана, пăсăлса кайнăскере, итлеттерес çук; аçу килтĕрччĕ; куртăр ачи пăсăлса кайнине.

Ирхи апат çисен, Нина виçĕ çĕклем шыв кӳчĕ, урайне нӳрлĕ çĕтĕкпе сăтăрчĕ, çенĕке шăлчĕ. Нина пит кичемлĕ. Ăçта хучĕ-ши мăнакай алшишсемпе чăлхана? тесе тарăхать вăл.

Паян Нина алшишсене Марине аппăшĕн ачине, Михаçа, кайса леçетчĕ. Ташлатчĕ куншăн пиллĕк çулхи Михаç, илемлĕн çавăрăнкаласа çӳресе урисемпе тапăртаттаратчĕ.

— Гопак, Михаç, гоп-гоп!—тет ăна хăш чух амăшĕ. Михаç вара кĕске аллисене çӳлелле çĕклесе, вĕçме хатĕрленнĕ чăх чĕппи пек çĕкленкелет, тем çӳллĕшех сикессĕн туйăнать пулĕ хăйне хăй, анчах кĕске урисем çĕр çумĕнчен те хăпаймаççĕ, тăпăртатса тăнипех Михаç „гопак" ташшине ташласа ирттерет. Михаçа алшиш пама пулмарĕ.

Мăнаккăшĕ Нинăпа калаçмасть те ĕнтĕ, куç айĕпе çеç сиввĕн пăхать. Нина юлташĕсем патне каясси çинчен асăнсан, мăнаккăшĕ шăл витĕр:—Каях!—терĕ çеç. Нина кичемĕн тухса кайрĕ.

Нина тухса кайсанах, Селле сĕтел çинче выртакан тетрадьрен чĕрĕк листа хут çурса илчĕ те сĕтел умне ларса çырма тытăнчĕ. Çилĕллĕ пит-куçпа çырать вăл. Пуçлана чĕрĕк хута çырса пĕтерчĕ, татах тепĕр чĕрĕк çурса илчĕ, ăна та çырса тултарчĕ. Çырса пĕтерсен, Селле хăй çыруне пăшăлтатса вуласа тухрĕ, вара ăна виçĕ кĕтеслĕн хутласа, ун çине Нина ашшĕн адресне:

„Полевая почта 11680. Турбаеву Давыду Александровичу“, тесе çырчĕ.

Çыру хатĕр. Паян каçхине вăл станцăна çитет, вунă кунран ăна Нина аршĕ илсе вуламалла.

— Чарăнтăр кăштах. Унсăрăн йĕрки çук,—тесе мăкăртатса, Селле тумланчĕ те çырăва почта ещĕкне яма тухса кайрĕ.

III.

Нина алшишсемпе чăлхана Марине ачисем валли çыхнă, терĕ. Кам-ши вăл Марине?

Вăрçă пуçланнă çул, кĕркунне, пĕрре Нина урок хатĕрлесе ларнă. Мăнаккăшĕ тaçта тухса кайнă пулнă. Сисмен хутран алăка такам хуллен уçрĕ, пӳрте хурлăхлă, ырхан сăн-питлĕ, çĕтĕк-çатăк тумланнă хĕрарăм кĕчĕ. Вăл сылтăм аллипе консерв банкинчен тунă кружка тытнă, хăрах алли саппун айĕнче пытанса тăрать. Нина, çак хĕрарăма курсан, хăраса кайрĕ. Хĕрарăм Нина хăранине сисрĕ пулас.

— Эпĕ—Марине... Маринка, тетчĕç мана Украинăра. Эпĕ, нумаях пулмасть, ачасемпе Украинăран, нимĕçсенчен тарса килнĕ çын... Эпĕ хам ку ялсемех пулнă, чăвашах... Кириле арăмĕ эпĕ,—терĕ хĕрарăм.

— Иртĕр тĕпелерех,—терĕ Нина, Маринене пукан парса.

— Кĕçĕн ача, Михаç, чирлесе ӳкрĕ. Нимĕн те çимест. Ача валли кăштах та пулин сĕт çук-ши тесе килтĕм,—терĕ Марине кружкине кăтартса.

— Пур-çке, пур,—терĕ Нина. Вăл чăлана кĕрсе чӳлмекпе сĕт илсе тухрĕ, Марине кружкине тултарчĕ. Марине Нинăна сĕтшĕн тавтурĕ. Вăл Нина çине пĕр икĕ хутчен хурлăхлăн пăхса илчĕ.

— Манăн Аля пекех эсĕ,—терĕ Марине чĕтрекен сассипе.—Аляна нимĕçсем вĕлерчĕç. Сана курсан, Аляна курнă пекех туйăнчĕ. Ах, манăн хĕрĕм, чĕппĕм Аля! Çук ĕнтĕ халь эсĕ!—йĕрсе ячĕ Марине.

Нина Маринене питĕ хĕрхенчĕ.

— Сĕт ĕçер-ха хăвăр та,—терĕ те Нина, Маринене стаканпа сĕт тултарса пачĕ. Марине кружкине чӳрече умне лартрĕ, стакана илсе сĕте пĕчĕккĕн сыпма тытăнчĕ.

— Аляна тата Украинăри хамăр пурăнăçа аса илетĕп те чĕре çурăлсах каять. Хам акă хăрах алсăр тăрса юлтăм.

Çапла каласа, Марине саппун айӗнчен сылтӑм аллине кӑларчӗ. Алӑ сыппи таран çук, пат татӑк, вӗçне марле татӑкӗпе кӑшт чӑркаса çыхнӑ. Нина Маринен татӑк аллине хӑраса пӑхрӗ.

— Аля пӗтессине, хам чӑлах пулассине, çакӑн пек килсӗр, пурлӑхсӑр юлассине эпӗ нихӑçан та шутламан. Ах!..

Марине, çак сӑмахсене каланӑ хыççӑн вӑраххӑн сывларӗ те, хӑрах аллипе пуçне тытса, пӗр самантлӑха нимӗн те чӗнмерӗ. Нина татах Маринене сӗт тултарса пачӗ. Марине ӗçрӗ, тавтурӗ, вара хӑй мӗнле Украинӑна кайса лекнине, унта пурӑннине, нимӗçсем çитсен вӗсене хурлӑх кӑтартнине каласа пачӗ.

Нина Маринепе ун упӑшки Кирле çинчен халиччен те илтнӗ пулнӑ, ваттисем каланӑ тӑрӑх, вӗсем кам иккенне, ӑçта пурӑннине те кӑшт пӗлнӗ пулнӑ.

Кирле Украинӑна çамрӑклах кайса лекнӗ, унта пурӑннӑ. Вӑл ӑста платник, столяр, механик пулса ӗçленӗ. Кашни çулах Кирле хӑй çуралнӑ яла, Атӑлта шыва кӗме, пулӑ тытма, хӑй юратнӑ хӗрӗн мӑйӑрне çиме килнӗ. Хӑйӗн амӑшӗ вилнӗ çул, Кирле ялта икӗ уйӑх пурӑнчӗ, кӗркуннепе вара хӑй савнине, йӑрӑм пӳллӗ, шапшурӑ та тикӗс шӑллӑ хитре Маринене хӑйпе пӗрле илсе кайрӗ. Украинӑра вӗсем мӑшӑрланса пурӑннӑ. Вунпилӗк çул çитнӗ ӗнтӗ вӗсем çуралнӑ яла таврӑнманни. Юлашки вӑхӑтра Кирле МТС-ра механикре ӗçленӗ. Марине колхозра ӗçлесе пурӑннӑ.

— Аван пурӑнаттӑмӑр... калама çук аванччӗ,—ассӑн сывласа калать Марине.—Пирӗн пурӑнӑç пуринчен те çителӗклӗччӗ. Хамӑрӑн пӳрт, сӗтлӗ ӑратлӑ ӗне, çур гектар çырла пахчи пурччӗ. Ӑратлӑ мӑнтӑр сыснасем çуллен виçшер-тӑватшар пусаттӑмӑр; хур-кӑвакал усранӑ. Мӗн çиес, ӗçес, тумланас тесен—пурте пурччӗ. Виçӗ ачаччӗ пирӗн. Тулӑхлӑ пурӑнӑçпа ачасене савӑнса ӳстереттӗмӗр. Аван пурӑнаттӑмӑр вӑрçӑччен. Нимӗç çитрӗ те—пурлӑха пӗтерчӗ, тӗп тӑвасшӑн пулчӗ пире. Ах, çӗршывӗ тесен, ытарма çук çӗршывне! Украина çӗршывӗ, ӗмӗр манмӑп сана! Пирӗн ял пысӑк, çутӑ шывлӑ кӳлӗ хӗрринче ларатчӗ. Кӳлӗ хӗррипе шурӑ пӳртсем, хата теççӗ унта, чие çырли пахчисем тасҫта çитиех тӑсӑлса курӑнатчӗç; урамсенче çӳллӗ топольсем пурччӗ. Кӳлӗ тепӗр енче вӑрманччӗ. Халӗ ӗнтӗ пирӗн ял ларнӑ

вырăна палламалла та мар, теççĕ. Пĕр пӳрт те, пĕр пахча та юлман, тет. Нимĕç пĕтĕм яла çунтарса ишсе тăкнă, йывăççене касса пĕтернĕ, çара тискер вырăн çеç тăрса юлнă, тет. Ах, мăнтарăн ялĕ. Пĕрре те пулин курайрасчĕ çав яла тепĕр хут; илтесчĕ каçхине ял тăрăх, кӳлĕ çийĕпе юрă янраса кайнине. Украина çыннисен юрри-сăввисем халĕ те чĕремрех. Çыннисем те лайăхчĕ. Вуникĕ çул пĕрле колхозра ĕçленĕ, тусланнă, тăванланнăччĕ вĕсемпе. Пĕр сивĕ сăмах илтмен вĕсенчен. Ăçта-ши халĕ вĕсем, ытарайми этемсем? Эпир Кирлепе иксĕмĕр те Атăл хĕрринчи çĕршывран килнипе, вĕсем пире „волгари“ тетчĕç. Пысăк хаваслăхпа пурăнса, ачасене аван пăхса ӳстереттĕмĕр, савăнса ĕçлеттĕмĕр, савăнса пурăнаттăмăр. Ох, тӳсейми, çĕклейми пысăк хурлăх кӳчĕ пире нимĕç!

Маринен каллех куçĕсем шывланчĕç, вăл вĕсене тутăр вĕçĕпе шăлса типĕтрĕ.

— Аляна мĕнле вĕлерчĕç тата?—ыйтрĕ Нина, Марине каласа панипе хурланса кайнăскер.

— Йĕркипе каласа парам-ха. Ах, Аля хĕрĕм çинчен аса илсен, хам та вилес пекех пулса каятăп,—терĕ Марине. Вăл, йĕрсе ярас килнипе, тутисене турткалантарса илчĕ те малалла калама тытăнчĕ.

— Вăрçă тухсан икĕ эрнерен Кирлене армине илчĕç. Тепĕр эрнерен нимĕçсем пирĕн паталла çывхарчĕç; тупă сассисем илтĕнеççĕ. Яла нимĕçсем пырса кĕриччен виç-тăватă кун малтан, эпир, вăкăрсене кӳлсе лавсем çине çимелли япаласене, тумтирсене тиесе, выльăх-чĕрлĕхе хăваласа ялтан тухрăмăр. Пĕр-икĕ кун вăрманта пытанса пурăнтăмăр. Нимĕçсем вăрман çине асар-писер пеме тытăнчĕç. Çакна пула çĕрле вăрмантан тарса тухрăмăр. Хамăр енне, Хĕрлĕ Çар хӳттине, каçса ӳкес тесе, çĕрĕпе выльăхсене лавсем хыççăн хăваласа пытăмăр. Ире хирĕç пĕр совхоза çитрĕмĕр. Совхоз çумĕпе хĕвел тухăçнелле аслă çул каять. Çав çулпа вĕçĕмсĕр халăх куçать. Пурте хĕвелтухăçнелле шăваççĕ. Эпир, хамăр ял колхозникĕсем, çапла шутларăмăр: совхоза кĕрсе выльăхсене шăварар, ĕнесене суса ачасене апат çитерер, терĕмĕр. Вăкăрсем кăшт канччăр тесе, вĕсене тăварса çерем çине ятăмăр. Эпĕ, ĕнене сăвас тесе, пĕр пушă витене кӳртрĕм, сума лартăм. Сасартăк такам:— нимĕçсем!—тесе çухăрчĕ. Витерен пуçа кăларса пăхрăм: нимĕç салтакĕсем мотоциклетсемпе вĕçтерсе килеççĕ, хыçалта гру-

зовиксем. Мотоциклетсем халӑх каякан ҫула пӳлчӗҫ, ҫаратма тытӑнчӗҫ. Йӗрӳ-кӑшкӑру! Чӗре ҫурӑлсах каять. Нимӗҫсем часах совхоз карташне те кӗчӗҫ. Чи малтан вӑкӑрсене хӑваласа тухрӗҫ, вара пирӗн сыснасене грузовиксем ҫине тиеме тытӑнчӗҫ. Манӑнне икӗ каска пек сыснана тӑватӑ нимӗҫ аран-аран грузовик ҫине хучӗҫ. Эпӗ, ӗнене ан курччӑр тесе, вите алӑкне хупрӑм. Хам чӗтресе ҫатан карта хыҫӗнче тӑратӑп. Ик-виҫӗ куштан нимӗҫ манӑн лав патне пычӗҫ. Тулли лав ҫинче ларакан ачасене алран-ураран тытса ҫӗрелле сирпӗтрӗҫ, унтан лав ҫинчи япаласене тустарма тытӑнчӗҫ. Ачасем йӗреҫҫӗ. Бидон ҫинче вунтӑватӑ кило сарӑ ҫу пурччӗ, михӗре икӗ пысӑк окорок, сало, виҫӗ михӗ тулӑ ҫӑнӑхӗ тата кӗрпе пурччӗ,—ҫавсене пӗтӗмпех, пӗр тӗпренчӗк хӑвармиччен туртса илчӗҫ. Юлашкинчен ачасен кӗпи-йӗмне арчипех йӑтса кайрӗҫ. Пӗтӗм япалана грузовиксем ҫине васкаса тиеҫҫӗ. Шӑй-шай ҫухӑрни, унта-кунта пӑшал сасси, ӗнесем мӗкӗрни, сыснасем ҫухӑрни сывлӑша ҫурса тӑрать. Ман ачасем виҫҫӗшӗ те пушанса юлнӑ урапа патне, пӗр ҫӗре чӑмӑртаннӑ та йӗрсе тӑраҫҫӗ. Пуринчен хытӑрах аслӑ хӗрача, Аля, йӗрет; питне аллисемпе хупласа сывлӑшне ҫавӑрса яраймасӑр, ӗсӗклесе йӗрет.

— Мама! Мама!—илтӗнет унӑн хурлӑхлӑ ҫинҫе сасси, вӑл манӑн чӗрене касать.

Куратӑп—пӗр тӗлте икӗ нимӗҫ такам ӗнине пусса пӑрахрӗҫ. Теприсем пычӗҫ те, ӗнене вакласа грузовик ҫине тиерӗҫ. Хайхи ӗне пусакан нимӗҫсем ман пата та ҫитрӗҫ. Пӗрин аллинче хӑрушла пысӑк ҫӗҫӗ, теприн—пуртӑ. Ҫӗҫӗлли вите алӑкне урипе тапса уҫрӗ. Эпӗ, ӗнене памастӑп, тесе хытӑ ҫухӑрса ятӑм, пӗр аллипе ӗнене мӑйракаран тытрӑм, тепӗр аллипе вите алӑк янаххинчен тытса тӗреленсе тӑтӑм.

— Ти, матка, не кричайт! Марш!..—терӗ пуртӑллӑ нимӗҫӗ. Эпӗ ҫаплах тӑратӑп. Вӑл ман ҫине куҫӗсене чарса тискеррӗн пӑхрӗ те, манӑн алӑк янаххинчен тытнӑ ал ҫине пурттине лач! лартрӗ... Пӗҫерсе кайнине ҫеҫ туйса илтӗм, ман алӑ сыппи ҫӗре татӑлса та ӳкрӗ. Эпӗ ҫухӑрса янине илтсе ман пата Аля ыткӑнса пычӗ, ӗнене мӑйӗнчен ыталарӗ:—Памастпӑр!—тесе ҫухӑрать. Ҫӗҫӗллӗ нимӗҫ Аля ҫине пӑхса темӗн пакӑлтатрӗ, мӑшлатрӗ, ҫӗҫҫипе хӑмсарчӗ. Аля ҫаплах ӗне мӑйӗ ҫинчен аллине вӗҫертмерӗ. Хай нимӗҫ тискеррӗн, хаяррӑн кӑшкӑрса, ҫӗҫҫине тӳрех ача мӑйӗ ҫинелле сулчӗ. Ҫав самантрах

Аля хăрлатса ячĕ, аллисем лĕпсĕр кайрĕç,—ача çĕре тĕшĕрĕлсе анчĕ. Хам сурана манса кайсах, эпĕ сывă аллăмпа ачана тытрăм, пуçне çĕклесе пăхас, терĕм. Анчах та хĕрĕм, кăшт турткаланса чĕтресе илчĕ те, çавăнтах вилсе кайрĕ.

Çак хăрушă ĕçсем калама çук хăвăрт пулса иртрĕç. Аля вилнине курсан, эпĕ хам та çавăнтах ӳкнĕ, вара астуми пулнă, тепле вилсе кайман. Ман сурана хамăр ялти учительница, Валентина Васильевна Кичкевич, çыхнă. Ăнран кайнипе эпĕ ăна туйман. Нумай выртнă-и, сахал-и, пĕлместĕп. Каярахпа алă ыратнине туйса кайрăм, тӳсме çук ыратать! Аса илтĕм мĕн пулнине. Ах, Аля! Аля! Пуçа çĕклесе пăхас терĕм, пуç тӳсейми ыратать. Галяпа Михаç хам çумма тĕршĕнсе ларнă. Галя йĕрет. Михаçĕ, пĕчĕкскер, хам çине таяннă та ларнă çĕртех çывăрать. Карташĕнче çаплах чĕрене çуракан сасăсем илтĕнеççĕ. Аран-аран пуçа çĕклесе пăхрăм, Аля кĕлеткине, такам çатан карта хĕррине вырттарнă та, михĕпе витнĕ. Ура çине тăтăм. Аля вилли патне пырса, питне уçса пăхрăм. Шăп выртать ман ача. Тутисем кăн-кăвак. Куçĕсене хупман, çӳлелле пăхнă. Пичĕ икĕ тĕлтен юнпа вараланнă... Çатан хĕрринчех, инçе мар, икĕ карчăк йĕрсе ларнине куртăм. Пĕрин аллинче икĕвиçĕ уйăхри ача пур, тепри, çӳçне-пуçне салатнăскер, çухăрсах йĕрет.

— Пирĕн ялсем, ыттисем кайрĕç-и-мĕн? Пире пăрахсах кайрĕç-им?—ыйтрăм эпĕ.

— Кайрĕç вĕсем, аякка,—аллипе хĕвеланăçнелле сĕлтсе каларĕ çухăрса йĕрекен карчăк.—Кайрĕç!..

— Пĕтĕмпех, акă халь эсĕ тăриччен çеç хăваласа кайрĕç вĕсене нимĕçсем,—Германие. Манăн кине те илсе кайрĕç, кăкăр ачипе юлтăм. Ăçта кайса кĕрес? Ватти-вĕтти çеç юлтăмăр ĕнтĕ, пĕтĕмпех илсе кайрĕç...

— Ман Ганнăна, ман чечекĕме, чĕкеçĕме, мăйĕнчен кантрапа кăкарсах, аллисене хыçалалла çыхсах илсе кайрĕç. Вунçичĕ çула çеç кайнăччĕ... пĕтрĕ!

Çавăнтах икĕ хĕрача, пĕр арçын ача чупса пычĕç. Хăйсен куçĕсем хĕрлĕ, пичĕсем хура, куççуль юхнă йĕрсем çаплах палăраççĕ.

— Валентина Васильевнăна вĕлерчĕç!—терĕ пĕр хĕрачи.—Авă хапха патĕнче. „Пымастăп эпĕ сирĕнпе. Эпĕ совет çынни, сирĕн тарçă пулмастăп“,—терĕ Валентина Васильевна нимĕççене. Нимĕç тытма пырсан, вăл ăна

кăкринчен тытса силлерĕ. Нимĕç вара ăна çавăнтах персе пăрахрĕ. „Ирĕкре вилетĕп, тарçăра мар!—тесе кăшкăрчĕ Валентина Васильевна. Йăванса кайрĕ те—вилчĕ...

— Пĕтрĕ ытарайми çыннăмăр! — тесе йĕрсе ятăмăр пурте.

— Каяр-ха унталла,—терĕç карчăксем. Валентина Васильевна вилли патне пытăмăр. Карташĕнче çын сахалланнă. Ăçта пăхнă—унта вată-вĕтĕ, ача-пăча çеç. Унта-кунта вилнĕ çынсем выртаççĕ. Валентина Васильевна вилли патĕнче хамăр ял ваттисем, ача-пăчасем тăраççĕ. Пĕр старикпе вунвиç-вунтăват çулхи ывăл ача шăтăк алтаççĕ.

— Хамăр ял çыннисене пурне те пĕр шăтăках пытарар. Илсе кил Аляна та,—терĕ мана шăтăк алтакан старик, тарлă çамкине шăлса.

Эпир Аляна йăтса çитнĕ çĕре шăтăк патне ытти вилĕсене те йăтса пынă, речĕпе вырттарнă. Ах тур, тур! кам-кам çук-ши кунта?! Нумай пулмасть пĕрле ĕçленĕ, кулнă, калаçнă, юрланă çынсем—халĕ вилнĕ, выртаççĕ. Вĕсене пурне те пĕр çĕрех пытартăмăр. Пурĕ вăтăр çичĕ çын.

— Вилнисене пытарнă хыççăн, пурте йĕрсе, мĕнпур вată-вĕтĕ, вĕтĕр-шакăр совхозран тухса утрăмăр. Ачасене йăтса, çавăтса, хуллен пыратпăр. Чăн хăрушшине курса ирттертĕмĕр паян, ĕнтĕ кунашкал хăрушлăх татах пулма пултарĕ-ши? тетпĕр. Хуллен, вăрманпа утсах, çĕрле хамăр енне каçса ӳкрĕмĕр.

Чуна хăратакан тупă сассисем айăкран илтĕнеççĕ. Эпир каçнă тĕлте шăпăртах,—чĕре лăштах кайрĕ. Вăрман хĕрринче хамăр боецсене тĕлпултăмăр. Вĕсем пире хапăл турĕç: яшка, пăтă çитерчĕç, мана çывăхри яла санбата ячĕç. Кунта ман алла перевязка турĕç. Ман телее кура, санбатран станцăна каякан грузовик тĕл пулчĕ. Мана ачасемпе çав грузовик çине лартса ячĕç. Çапла эпĕ вара хамăр ял çыннисенчен уйăрăлтăм. Тепĕр ирхине поезд çине ларма май пулчĕ, виçĕ кунран Чернигов хулине çитрĕмĕр. Кунта ман суранран тепĕр хут юн сăрхăнма тытăнчĕ. Эпĕ больницăна кайрăм. Унта мана выртма йышăнчĕç, ачасене вăхăтлăха детсада ячĕç. Эпĕ больницăран тухас вăхăтра тăшман Чернигов çывăхнелле çитрĕ. Черниговри халăх тылалла куçса кайма тытăннă. Кунне темиçешер эшелон каять. Эпĕ те, ачасемпе пĕр эшелонĕ çине лексе, Куйбышева çитрĕм, унтан пароходпа хам çуралнă яла, тăвансем патне

çитрĕм. Асапне çул çинче нумай курнă, тарăхнă, анчах чăн хăрушли маншăн, чăн асапли, ĕмĕр манми хуйăх— Аля вилĕмĕ. Ашшĕ фронтра, чĕрĕ-ха. Аляна вĕлернĕшĕн, мана чăлах тунăшăн, пирĕн ытарайми Вышенко ялне пĕтернĕшĕн нимĕçсене вăл тавăрĕ-ха! Эпир йĕнĕ пек нимĕçсем хăйсем йĕччĕр, хăйсем вилччĕр, хăйсен ялĕсем, хулисем пĕтчĕр. Чĕререн тарăхнă эпĕ, чĕререн ылханатăп çав тискерсене... Аля! Аля!

Марине уласа йĕрсе ячĕ.

Çав кунах каçхине Нина, отрядăн сборне кайсан, Маринепе ун ачисем çинчен каласа панă. Отрядри пионерсем Маринене пулăшма йышăнчĕç, Нинăпа ун звенине Маринене пулăшма уйăрчĕç. Çакăнтанпа ĕнтĕ виççĕмĕш çул Нина хăйĕн звенипе Маринене пулăшса тăрать.

IV.

Селле Нина ашшĕ патне çыру çырни икĕ эрне иртсен, шкул директорĕ Васса Павловна Нина ашшĕнчен пысăк çыру илчĕ. Акă мĕн каланă вăл çак çырура:

„Хисеплĕ Васса Павловна!

Виçĕмкун эпĕ килтен çыру илтĕм. Ăна вуланă хыççăн хурлантăм. Манăн ача Нина пĕтĕмпех пăсăлса кайнă иккен: чупкăна, чарусăра тухнă. Манăн чĕре Нинăшăн хуйхăрнипе çурăлса каяс пек пулчĕ. Акă часах ĕнтĕ тăшмана çĕнтеретпĕр, киле таврăнатпăр. Çĕнтерӳшĕн савăнатпăр... Анчах манăн пысăк хуйхă—хĕрача пăсăлса кайни чĕрере. Вăл мана канăç парас çук. Эпĕ Селлерен çыру илнĕренпе куç хупман: тӳсейми хуйхăратăп. Тилмĕретĕп, тархаслатăп Сире, Васса Павловна: калаçса пăхăр ман хĕрачапа, тĕрĕс çул çине тăратсамăрччĕ ăна. Итлетĕр вăл мăнаккăшне, хисеплетĕр ăна. Нина карчăка питех те тарăхтарать иккен. Нина хăй те ман пата çыру ярсах тăрать. Анчах хăй мĕнле вĕренни, мĕнле пурăнни, мĕнле ĕçлени çинчен нимĕн те çырмасть. Вăрçăччен пĕр çул малтан эпир Нинăпа иксĕмĕр, Гайдар çырнă „Тимурпа унăн команди" ятлă кĕнекене вуларăмăр. Ун чух Нина хăй, Тимур пек пулса, çынсене пулăшасшăнччĕ. Кӳршĕри ревматизмлă карчăка яланах вут çĕклесе пама каятчĕ. Халĕ ун пек ĕçсем туни çинчен пĕрре те çырмасть.

Эпĕ Киев патĕнчи çапăçусенче хамăр ял çыннине, Кирлене, тĕлпултăм. Халĕ нимĕçсене Кирлепе пĕрле шаккатпăр, хăвалатпăр ирсĕрсене хамăр çĕршывран.

Кирле патне унăн арăмĕ Марине çыру янă. Çырура вăл пĕр пионеркăна ырласа çырать. Марине хăй ĕçлеймест, чăлах, тет вăл. Çапах та таса, тирпейлĕ пурăнатпăр, тесе çырнă. Пĕр пионерка юнкунпа шăматкунсем урай çуса парать, тет. Çав пионеркăх пĕррехине Маринене ачисен çетĕлсе пĕтнĕ кĕпе-йĕмне, тумтирĕсене отряда илсе кайрĕ, тет, те вĕсене часах çуса, сапласа, якатса пырса пачĕç, тет. Çав пионерка фронта пулăшас ĕçре те хастар. Вăл звеновожатăй. Хăй звенипе вăл, колхозниксенчен çăм пухса, ăна пĕр карчăка арлаттарнă, вара звенипех боецсем валли нускисем çыхнă. Танксен колонни валли çав хĕрача 8800 тенкĕ пухнă. Çулла, колхозра ĕçленĕ чух, вăл колхозниксене хаçат вуласа панă, бригадирпа пĕрле стена хаçачĕ кăларнă. Юрататăп çав пионеркăна, ăмсанатăп унăн ĕçĕсене!

Васса Павловна, тархаслатăп Сире: ман Нинăна çав хĕрачапа пĕрлештерме пултараймăр-ши? Отрядра авантарах ĕçлеттерччĕр Нинăна, юсантăр вăл. Сирĕн çине, пионер организаци çине çеç шанатăп. Васса Павловна, тӳрлетĕр манăн пĕртен-пĕр ачана!

1944 ç. ноябрĕн 25-мĕшĕ. Фронтри салампа *Д. Турбаев.*"

Васса Павловна кăвак çӳслĕ, ăшă пит-куçлă ватă учительница. Вăл Турбаев çыруне шкултан каяс умĕн илчĕ. Çавăнпа та ăна вăл килне çитсен тин уçса вуларĕ. Малтанах шухăша кайса, сĕтел кĕтессине тĕллесе пăха тăчĕ. Вара, тепĕр хут вуларĕ те, сĕтелрен хут кăларса Турбаев патне çыру çырма тытăнчĕ. Акă мĕн çырчĕ вăл ун патне:

„Давыд Александрович!

Сирĕн çырăва илсе вуларăм. Питĕ тĕлĕнтĕм. Хăвăр Нина пирки Сирĕн ăш çуннине эпĕ пĕлетĕп, анчах Эсир хуйхăрни вырăнлă мар. Эсир, Марине çырнă тăрăх, пĕр пионерка—патриоткăна ăмсанатăр. Çав пионерка вăл, никам та мар,—шăп та лăпах сирĕн Нина пулать. Нинăшăн ан хуйхăрăр. Вăл нимĕн чухлĕ те пăсалман: аван вĕренет, обществăлла ĕçре нумай ĕçлет, пирĕн шкулта вăл чи примерлă пионерка. Нина хăй аван вĕреннине, мĕн-мĕн ĕçленине Сире халех пĕлтересшĕн мар. „Халĕ эпĕ сахал ĕçленĕ-ха. Тăшмана çĕнтерсе атте киле киличчен нумайрах ĕçлес, аванрах ĕçлесчĕ. Атте килсен савăнтăр"—тет Сирĕн Нина. Вăл Сире хăй аван вĕреннипе, нумай ĕçленипе кĕтмен çĕртен савăнтарасшăн.

Селле карчăк Сире Нина çинчен пачах урăхла çу-татса панă. Селлешĕн пулсан—Нина урок хатĕрлетĕр те шкула çÿретĕр тата килте ĕçлекелетĕр; обществăллă ĕçсене тумаллине ăнланмасть вăл, юратмасть, Нинăна муталать çеç. Ун çинчен Нина мана хăй те калаçнăччĕ. Нинăна общесгвăллă ĕçсенче чарма юраманни çинчен эпĕ Селлепе калаçнă. Ан ĕçлетĕр Нина сыншăн. Мĕн усси пур ун пек ĕçрен? Нина ашшĕ хăй килсен кирек те мĕн тутăр,—терĕ çеç мана Селле. Вăл хăйне майлă этем. Нина—пирĕн савăнăç, ашшĕ савăнăçĕ.

Сывă пулăр. Нимĕçсене хăвăтрах пĕтерĕр. Çĕнтерÿпе киле таврăнăр. *В. П. Макарова.*

1944 ç. декабрĕн 12 мĕшĕ".

... Пĕр шăматкун каçхине Селле выльăхсене хупса, карташĕнчи ĕçсене пĕтерсе пÿрте кĕчĕ. Селле карташне тухнă чух Нина урай çуса юлнăччĕ. Селле пÿрте кĕнĕ çĕре Нина çук та.

— Йыт турташшĕ ачи! Каллех тухса вĕçнĕ пулас. Ан кай, терĕм. Каятăп мăнакай, каяс пулать, тет. Кайнă вĕт!—ятлаçма тытăнчĕ Селле.

Тарăхса çитнĕ карчăк тумтирне хыврĕ, тĕпленĕ çăматтисене кăмака хыçнелле тăратрĕ, çурăмĕпе ăшă кăмака çумне тайăнса тăчĕ.

Пÿртре каçхи тĕттĕм палăрнă. Шăп. Часси шаккани çеç халичченхинчен хытăрах пек илтĕнет. Кичемĕн туйăнчĕ карчăка Нинăсăр. Куç умĕнчен çухатас килмест Селлен юратнă ачине. Кăмăлсăрланать вăл Нина яланах килте пĕр тикĕс кĕнеке вуласа е алă ĕç туса ларманшăн. Ним тăвайманнипе хăй ăшĕнче çапла калама тытăнчĕ.

— Эпĕ чарас çук ĕнтĕ ăна. Ашшĕ пĕлет ачи мĕнле пăсăлса кайнине. Çырнă эпĕ ашшĕ патне, пĕлтернĕ ăна, пытарса тăман... Мĕншĕн-ха ашшĕ Нинăна ятласа çыру çырмарĕ? Ашшĕ Нинăна çырура кирлĕ таран ятласан, Нина юсанĕччĕ, чупмĕччĕ асар-писер. Пĕр шухăшласан—ак, патакчĕ! Анчах алă çĕкленмест çав ачана çапма. Аçта-ши вăл?..

Çапла шухăшласа Селле кăмака çине хăпарса выртма хатĕрленчĕ, çăм тутрине мăйĕнчен салтса пăтана çакрĕ, унтан саппунне салтрĕ, пиçиххине пушатрĕ те чăлха вĕççĕн çемçен кăмака çине хăпаракан картлашка çине ярса пусрĕ. Сасартăк алкумĕнче ура сасси илтĕнчĕ. Нина килчĕ пулĕ тесе, Селле хĕпĕртерĕ. Алăк уçăлчĕ те пÿрте пысăк çын кĕчĕ.

— Селле аппи килте-и?—ыйтрĕ хĕрарăм сасси.

— Пÿртрех-ха,—терĕ Селле, пуштă салатса çÿрекен Варварине сассинченех палласа.

— Сире çыру пур, фронтран килнĕ,—терĕ Варвари, Селлене çав самантрах çыру тыттарчĕ те тухса та кайрĕ.

Селле чунтан хĕпĕртерĕ. Тинех çитрĕ пит кĕтнĕ çыру. Нина ашшĕ чылайранпа çыру çырманччĕ-ха. Нина пăсăлса кайни çинчен çырнă çырăва ответлеменччĕ вăл. Мен тĕрлĕ ятласа çырнă пулĕ ĕнтĕ Нинăна. Чарăн, Нина, мăнакуна тарăхтарма, вăл сан аннÿ вырăнĕнче, ан кÿрентер ăна, хисепле ăна, ун сăмахĕнчен ан тух тесе çырнă ĕнтĕ вăл. Нина, ку çырăва вуласан, тен, ÿкĕнĕ, йĕрĕ, малашне ман сăмахран тухмĕ... Сĕтел тĕлĕнче лампочка чăлт çутăлчĕ. Пÿрт ăшчикки тасалăхпа çиçсе кулса янă пек пулчĕ. Селле васкаса сĕтел умне пырса ларчĕ. Çыру адресне пăхрĕ—çыраканĕ Нина ашшех. Мĕн ыррине çырать-ши кĕрÿ тесе, Селле çырăва уçса вулама тытăнчĕ. Вуланăçемĕн Селлен савăнăçлă пит-куçĕ улшăнма пуçларĕ: кăмăлсăрланнипе кÿренни палăрчĕ. Çырăва вуласа пĕтернĕ çĕре Селле пуçĕ усăнчĕ. Ашшĕ пĕpре те Нинăна ятласа çырман, ырланă ăна. „Савăнатăп Нина хăйĕн вăйĕ çитнĕ таран фронта пулăшнăшăн, хăй аван вĕреннĕшĕн. Ачана пионер ĕçĕсене тума ан кансĕрле, тĕрĕс çул çинчен ан пăр ăна", тесе çырнă. „Нина пăсăлса кайнă тесе çырнă çырăва илсен, пит нумай шухăшларăм, чĕре çунсах тухатчĕ. Васса Павловна çыруне илсен вара эсĕ ача çинчен тĕрĕс мар шухăшланине пĕлтĕм", тесе çырнă.

Кĕрÿшĕ çырăвĕ Селлене калама çук пăшăрхантарчĕ. Селле пуçĕнче тĕрлĕ шухăшсем пăтранма тытăнчĕç. Ăшĕ вăркама пуçларĕ. Çанçурăмĕ çÿçенсе кайрĕ. Селле каллех кăмака çине хăпарса выртрĕ. Кăмака çийĕ те ăшă пек туйăнмарĕ. Халиччен часах çывăрса каяканччĕ, халĕ ĕнтĕ унăн ăйхи те вĕçрĕ.

Часси саккăр çапсан, Нина килчĕ.

— Апат çиетпĕр пулĕ, мăнакай,—яланхи пек кăмăллă сасăпа каларĕ Нина. Селле çывăрнăн çи пулса Нинăна хирĕç чĕнмерĕ. Нина мăнаккăшне канлĕх сунса, чалана чĕрне вĕççĕн утса кĕчĕ, кăмака питлĕхне хуллен уçса апатне каларчĕ, çирĕ, кайран, яланхи пек, тирĕк-чашăкне çурĕ, шăлчĕ—тирпейлĕ, таса. Нина, чалантан тухса сĕтел патне пырсан, ашшĕ çыруне курах кайрĕ. Калама çук савăнса Нина çырăва хăвăрт вуласа тухрĕ. Унăн йалтăркка куçĕ-

сем стена çумĕнчи фотоӳкерчĕкĕ çине юратса хисеплесе пăхрĕç. Пĕчĕк тутисем: атте, атте, тесе пăшăлтатрĕç. Нина çырăва тепĕр хут вуларĕ, вара сĕтел çинче выртакан чăваш литератури хрестоматийĕ ăшне тирпейлĕн хыврĕ. Урок хатĕрлеме ларсан та Нина çыру çинченех шухăшлать, ăна кĕнеке ăшĕнчен иле-иле пăхать. Пит паха вăл фронтран килнĕ çыру. Ашшĕ ку таранччен сывăшăн Нина чĕререн хĕпĕртет. Ашшĕ фронтран таврăнассине Нина пит кĕтет. Тăшмана пĕтерсен, çĕнтерӳ хыççăн Нина ашшĕне хăйĕн çитĕнĕвĕсемпе кĕтсе илесшĕн. Аван вĕренес, пур предметпа — малта пырас, отрядра, халăх хушшинче, колхозра аван ĕçлес, тет Нина. Çĕнтерӳпе килекен ашшĕн тивĕçлĕ ачи пуласшăн пионерка Нина. Ĕнтĕ мăнаккăшĕ Нинăна ятлас çук, çынсене, фронта пулăшнăшăн ăна хирĕçӳ пулас çук. Нинăн шухăшĕ çунатланса малалла вĕçет. Унăн хăйĕн юратакан мăнаккăшне те фронта, çынсене пулăшакан çын тăвас килет. Ĕнтĕ, ашшĕ çыру янă хыççăн, мăнаккăшĕ фронта пулăшма тытăнмалла. Акă Хĕрлĕ Çар кунĕ валли фронта парне яма япаласем пухма тытăнаççĕ. Нинăпа мăнаккăшĕ вăл кун валли тем те тепĕр хатĕрлеççĕ ĕнтĕ... Вунпĕр хур пуçламанни пур, пилĕк-ултă пăт туртакан сысна пуснă, пыл та пур, колхозран ĕçкунĕпе илнĕ... Мăнаккăшĕпе Нина нумай паха япаласем пама пултараççĕ.

— Хĕпĕртерĕн пулĕ ĕнтĕ аçу мана ятласа çырнăшăн,— илтĕнчĕ Селле сасси, кăмака çинчен сасартăк, кĕтмен çĕртен. Нина, мăнаккăшĕ çывăрать тесе шутланăскер, шартах сикрĕ.

— Тем усал кăтартăн ĕнтĕ эсĕ мана ху çинчен аçуна илĕртсе çырнă тесе. Ĕнтĕ пăсăлса кайнăскер, эсĕ урса хаярланса килти япаласене сĕтĕрме, салатма тытăнатăн. Этем чарас çук сана. Анчах пурĕ-пĕр килти япаласене салатма памастăп. Пĕр пĕрчĕ япала та килтен ан тухнă пултăр. Эсĕ ĕçленипе пурăнмастпăр-ха эпир. Шăтас çăмарта пек пăхса ӳстертĕм сана, сая кайрĕ манăн тăрăшни. Преххут килмелле марччĕ çак киле... Аннӳ вилсен, сана хĕрхенсе килтĕм... Ах, терт!..

Нина, мăнаккăшĕ ятлаçма тытăнсан, тĕлĕнсе, хăраса кайрĕ. Унăн пичĕ хĕп-хĕрлĕ пулчĕ. Йалтăркка хура куçĕсем темĕнле тĕлĕнмелле япала тупнă пек, пĕр çĕре тĕллесе пăхрĕç. Мăнаккăшĕ юлашкинчен ĕсĕклеме тытăнсан, Нина çинçе пӳрнеллĕ аллисемпе пуçне тытса сĕтел çинелле ӳпĕнчĕ. Кăшт тăрсан, Нина хăвăрт тăчĕ те тум-

ланса хăйĕн учительници Васса Павловна патне тухса кайрĕ.

Нина пĕр кана чупсах Васса Павловна патне çитрĕ. Алăка хуллен шаккарĕ.

— Кĕме юрать-и?

— Кĕрĕр,—çемçен илтĕнчĕ пӳлĕмрен. Нинана учительница ăша кăмăлпа йышăнчĕ. Вăл ачасен тетрачĕсене тĕрĕслесе пăхса ларнă. Хăй ĕçне парахсах Васса Павловна Нинăна юнашар лартса калаçма тытăнчĕ. Нина ăшшĕ çырăвĕ çинчен, мăнаккăшĕ ăна ятлаçма тытăнни çинчен Васса Павловнăна каласа пачĕ.

— Ах! — тĕлĕнчĕ Васса Павловна. — Мĕнле этем вăл санăн мăнаку? Аçу çырăвĕ те ăна витмест. Мĕнле-ха унăн кăмăлĕ улшăнмасть?

Нина мăнаккăшĕ çинчен хуйхăллăн çапла карарĕ:

— Мăнакай пит хытă: пĕр тĕпренчĕк япалашăн та таçта кайса кĕрет. Фронта пулăшас ĕç хальхи вăхăтра чăн пысăк, чăн кирлĕ ĕç пулнине ăнланмасть...

— Фронта пулăшма кирли çинчен эсĕ ăна ăнлантарнă-и?. Уйрăм сынсем, фронта парнелесе, танксем, самолетсем хăйсен укçипе илсе янине каласа панă-и?—ыйтрĕ учительница.

— Ун пек ĕçсем çинчен нумай каласа та, вуласа та панă. Акă ĕнер çеç Головатый самолечĕ çинчен каларăм,— терĕ Нина.

— Улшăнать акă мăнаку кăмăлĕ, вара вăл та хутшăнĕ фронта пулăшас ĕçе, анчах вăл пирĕнтен, санран килет. Мăнаку ятлаççан та эсĕ ан кирĕç, ан тарăх, ăшă пул, этем кăмăлĕ ăшша юрататъ. Хĕвел ăшшинче сивĕ пăр та ирĕлет,—терĕ юлашкинчен Васса Павловна.

Нина учительница патĕнчен темĕнле улшăннă кăмăлпа тухса чупрĕ. Киле çитсен, мăнаккăшĕ те Нинăна тек ятламарĕ. Çутă сӳниччен кăшт та пулин вулас тесе, Нина ĕнер вулама тытăннă „Мои университеты" ятлă кĕнекене уçрĕ, ун çине чикĕнчĕ.

Нина, çывăрма выртсан, Васса Павловна патĕнче пулнипе савăнса шухăшласа выртрĕ. Васса Павловнăн пӳлĕмне Нина пит юратать. Пӳлĕм тасалăхĕ çинчен калас та çук—витĕр таса! Маччăна çитекен илемлĕ фикуссем, пальмăсем. Пӳлĕмĕн пĕр стени лапкăшĕпех пĕтĕмпе кĕнекесем, ах! Мĕн чухлĕ кĕнеке! Нина ӳссе çитсен, е учительница, е писатель пулсан, хăй пуранакан пӳлĕмне Васса Павловна пӳлĕмĕ пек тăвать.. Унăн та

кӗнеке пит нумай пулать: хӑшне вулас килнӗ, ҫавна вула... Малалла Нича шухӑшӗ ыранхи кун ҫине куҫрӗ—мӗнле пулӗ-ши ӗнтӗ ыран мӑнакай? Ятлаҫӗ-ши, ҫук-ши? Хуть кирек те мӗнле пулсан та, Нина мӑнаккӑш кӑмӑлне ҫавратех... Васса Павловна каланисене шута илсе, Нина ыран хӑй мӗн тумаллине, мӗнле пулмаллине шутласах, план тусах хыврӗ, вара канлӗ ҫывӑрса кайрӗ.

Селле ҫав ҫӗр куҫ хупмарӗ. Ӑна пурӑнаҫӗ пысӑк хӑрушлӑха кӗрсе ӳкнӗ пекех туйӑнать. Ятлаҫма тытӑнсан, Нина тухса кайни те Селлене пит ҫилентерет.

— Хаярланать ӗнтӗ Нина эпӗ ашшӗне ун ҫинчен ҫырса пӗлтернӗшӗн. Нина ӗнтӗ мана шутлами, итлеми пулать, ӗнтӗ вӑл манран хӑрамасть, пӑхӑнса пурӑнма шутламӗ ӗнтӗ вӑл мана. Ака ыранах хаярран кашкӑрма тытӑнӗ. Ӗнтӗ Нина мана килти ӗҫре пулӑшма пӑрахӗ...

Ҫакнашкал пӑтранчак шухӑшсемпе Селле ҫӗр каҫах муталанчӗ, ире яхӑн тин кӑшт тӗлерчӗ.

Нина ирхине мӑнаккӑшӗнчен малтан вӑранчӗ. Тул ҫутӑлсан, Нина икӗ ҫеклем шыв кайса кӳчӗ. Аслӑк ҫинчен урпа уламӗ антарса ӗнепе сурӑхсене пачӗ. Витере сысна ҫухӑрать. Нина ӑна ӗнер пӗҫернӗ ҫӗрулмиве витрипех тухса силлерӗ. Мӑнаккӑшӗ ӗнерех нӳхрепрен пахча-ҫимӗҫӗсем илсе тухмалла тенӗччӗ. Нина нӳхрепе анса кишӗр, купӑста илчӗ. Пӗр чӗрес тӑварланӑ хаяр, помидор тултарчӗ, вун-вунӑк хӗрлӗ кӑшман ҫӳлелле ывӑтрӗ. Ҫак пахча-ҫимӗҫӗсене Нина хӑшне витрепе, хӑшне чӗреспе, хӑшне пурӑкпа пӳрте йӑтса кӗчӗ, вара хӑшне тӗп-сакайне, хӑшне ҫӳлӗк ҫине лартса тирпейлӗ вырнаҫтарчӗ, унтан каллех тула тухрӗ. Келете уҫса чӑхсене, хурсене сӗлӗ сапса пачӗ. Тата мӗн тумаллаччӗ-ха? Нина карташ йӗритавра пӑхрӗ. Хӳме ҫумӗнче ҫунашка ӳпӗнсе тӑрать. Ун ҫумӗнче лысӑках мар ещӗк. Нина ҫунашкана илсе ун ҫине ещӗкне лартрӗ, вите умне туртса пычӗ. „Тап-таса хырам-ха", тесе, Нина вите урайӗнчи тислӗке тимӗр кӗреҫепе хырса ещӗк ҫине тултарчӗ, вара ҫунашкине пахчана туртса тухрӗ, тислӗк купи ҫине ещӗкне ӳпӗнтерсе тислӗке тӑкрӗ. Пуша ҫунашкине Нина карташне чупса туртса кӗчӗ. ҫунашкине, ещӗкне ӑҫтан илнӗ, унтах вырнаҫтарчӗ. Нина пӳрте кӗвӗ чух вутӑ йӑтса пычӗ, чӑлана кӗрсе кӑмака умне хуллен пӑрахрӗ. Селле ҫав вӑхӑтра кӑмака ҫинчен анчӗ, кӑштӑртатса утса чӑлана кӗчӗ. Унӑн пичӗ сарӑхнӑ, тӗссӗр тутисем кӑмӑлсар пӑрӑннӑ, куҫӗсем сивлӗклӗ. Нина ҫине Селле халӗ те ҫиленсе пӑхрӗ.

Ӗнерхи пекех ятлаҫма тытӑнассӑнах туйӑнать. Халиччен мӑнаккӑшӗ Нина ҫине ҫиленсе пӑхсан, Нина хӑй те кӑмӑлсӑрланса пӑхма тытӑнатчӗ, мӑнаккӑшӗ вара ытларах ҫиленетчӗ. Васса Павловна каланине асра тытса, Нина мӑнаккӑшӗ ҫине ним пулман пек тӳрӗ пӑхрӗ.

— Ҫилӗ иртсе кайнӑ пулӗ Нинӑн,—шухӑшларӗ Селле, ҫав самантрах унӑн кӑмӑлсӑр пӑрӑннӑ тути хӑй вырӑнне ларчӗ, куҫӗнчи сивлӗклӗх иксӗлчӗ.

Ҫавна кура Нина мӑнаккӑшӗ ҫине ӑшӑ куҫӗсемпе пӑхрӗ, тутисемпе кӑшт ҫеҫ йӑл кулчӗ. Селлен пичӗ-куҫӗнче салхулӑх пӗтӗмпех ҫухалчӗ.

— Мӑнакай, сывах-и эсӗ? Пуҫ ыратмасть-и санӑн? Кан-ха паянлӑха, эпӗ хам ӗҫлетӗп,—терӗ Нина мӑнаккӑшне куҫӗнчен ырӑ кӑмӑлпа пӑхса.

Селле, ҫӗр каҫа хӑйне хӑй тулашса, Нина ҫинчен ырӑ маррине ҫеҫ шухӑшласа асапланса пӗтнӗскер, Нина унпала ҫавнашкал ӑшӑ, уҫӑ кӑмӑллӑ пулнинчен тӗлӗнсе кайрӗ. Хаяррӑн кӑшкармасть Нина. Аттене ман ҫинчен мӗншӗн илӗртсе ҫырса ятӑн тесе хирӗлмест.

Селле пит ҫуса шӑлӑннӑ вӑхӑтра Нина паян хӑй мӗнмӗн ӗҫленине каласа пачӗ.

— Ӗҫлессе те халиччeнхинчен ытларах ӗҫленӗ паян. Нина, ҫиленмест вӑл мана,—шухӑшларӗ Селле, унӑн пичӗ-куҫӗ калама ҫук ӑшӑ кӑмӑллӑ пулса кайрӗ. Нина улшӑнман иккен, Нина ӗлӗкхи пекех ытарайми аван...

Селле сакай хуппине уҫрӗ, сакайне ҫӗрулми илме кӗресшӗн.

— Хам кӗрсе илетӗп, мӑнакай,—терӗ Нина, унтан мӑнаккӑш аллинчи пуша витрене илсе сакайне ҫӑмӑллӑн сикрӗ, ҫивӗчӗсем лӑс турӗҫ.

— Ах, чӗкеҫӗм, кайӑкӑмҫӑм!—пӑшӑлтатрӗ Селле хӑй тӗллӗн.

Нина сакайӗнчен часах тулли витре ҫӗрулми йӑтса тухрӗ. Мӑнаккӑшӗпе иккӗш улма шуратма тытӑнчӗҫ.

— Ухмаха ертӗм хама-хам ача ҫинчен ашшӗ патне ҫырса,—ӑшӗнче ӳкӗнӗҫлӗ шухӑшларӗ Селле. Нина паян ниҫта та каймарӗ, пӗрмай мӑнаккӑшӗпе пӗрле. Ирхи апат ҫисен ҫеҫ таҫта хӑвӑрт чупса кайса килчӗ, каллех мӑнаккӑшӗпе пӗрле, шӑкӑлтатаҫҫӗ иккӗшӗ. Селле ача ҫине пӑхса савӑнать. Ҫӗрле хӑй шухӑшласа муталанни халӗ пӗтӗмпе усал тӗлӗк пек туйӑнать.

Кӑнтарла ҫитеспе Нинӑпа мӑнаккӑшӗ вырӑхсене шӑварчӗҫ, тепӗр хут апатларӗҫ, вара пӳрте кӗчӗҫ. Селле

ялаҥхи пек, тултан кӗрсен, салтӑнчӗ те, ӑшӑ кӑмака ҫумне ҫӳҫенкелесе пырса тӑчӗ. Нина та мӑнаккӑшӗ ҫумне тӑчӗ, пӗчӗкҫӗ чухнехи пек ун ҫумне шӑвӑнчӗ. Мӑнаккӑшӗ ачана пуҫӗнчен шӑлчӗ...

Пӗррехинче, темиҫе кунтан, выльӑхсене апат-ҫимӗҫ парса тӑрантарсан, пӳртри ӗҫсене туса ҫитерсен, Нина мӑнакӑшӗнчен ыйтрӗ:

— Мӑнакай, халӗ ӗнтӗ пирӗн килте ним ӗҫ те ҫук вӗт?—терӗ.

— Ним ӗҫех те ҫук-ха ӗнтӗ,—каларӗ мӑнаккӑшӗ.

— Мӑнакай, эпӗ сана пӗр сӑмах каласшӑн...

— Кала, мӗн?

— Плаки аппа чирленӗ. Ӗнер те вӑл вут хутман. Ачисем, сивӗ пӳртре вӗри апатсӑр лараҫҫӗ. Айта иксӗмӗр Плаки аппасем патне кайса пӑхар. Эпӗ пӗрер ҫӗклем шыв кӳрсе парам, эсӗ вут хутса яшка пӗҫер, пирӗн халӗ ӗҫ ҫук вӗт?—терӗ Нина. Хӑй мӑнаккӑшӗ мӗн калӗши ӗнтӗ тесе шикленсе тӑрать.

Мӑнаккӑшӗ пӗр самантлӑха ним чӗнмерӗ. Нинӑшӑн ку самант вӑрӑм туйӑнчӗ.

— Ача кӑмӑлне татас мар пулӗ, ачи пит аван,—шухӑшларӗ ҫак самантра хӑй ӑшӗнче Селле.

— Юрӗ, кайӑпӑр,—терӗ Селле, Нинӑна пуҫӗнчен тепӗр хут шӑлса.

Нина мӑнаккӑшӗ умӗнче тапӑртатса илчӗ, мӑнаккӑшне ыталарӗ:

— Айта, айта хӑвӑртрах, мӑнакай! Пӳрчӗ тул пек сивӗ. Ачисем сивӗ кӑмака ҫинче тӗршӗнсе ларнӑ. Плаки аппи хӑй пуҫне те ҫӗклеймест.

Нина мӑнаккӑшне васкатса хӑвӑрт тухса кайрӗ.

Селле виҫӗ кун хушши чирлӗ выртакан Плакине вут хутса апат пӗҫерсе панӑ. Нина шыв кӳнӗ, урай ҫунӑ, амбулаторинчен эмель кайса илнӗ. Плаки, хӑй сывалсан, Селлепе Нинӑна калама ҫук тавтунӑ. Селле вара кӑмӑллӑ пулчӗ. Ҫапла ҫав ырӑ ӗҫ туни, ҫынна йывӑр вӑхӑтра пулӑшни яланах кӑмӑла ҫӗклет.

Пӗр шӑматкун каҫ Нина киле пит пашкаса чупса килчӗ. Мӑнаккӑшӗ ачине апат ҫитересшӗн, Нина васкать, вара ҫийӗп, тет.

— Мӗн пулнӑ вара? Мӗншӗн пит васкатӑн?—ыйтрӗ Нинӑран мӑнаккӑшӗ.

— Отряд сборне каймалла тата Марине аппасен мунчи пулса ҫитнӗ, манӑн унта ачисене ҫума каймалла. Мӑ-

макай, кайман-ши эсĕ ман вырăна? Марине аппасен ачисене мунча кўртме, пулăш-ха мана!—терĕ Нина мăнаккăшĕ çине ытарайми уçă кăмăлпа пăхса.

Селле хирĕçлесе, туртăнкаласа тăма вăтанчĕ.

— Пулăшас пулĕ сана, каяс пулĕ,—килĕшрĕ вăл.

Нина, мăнаккăшĕ çине çакăнса, ăна питĕнчен чуп турĕ те, пит хавассăн тухса чупрĕ.

Вăл отряд сборне кĕриччен малтан Васса Павловна патне кĕчĕ, мăнаккăшĕ Марине ачисене мунча кўртме килĕшни çинчен каласа пачĕ.

— Маттур, маттур, çапла кирлĕ. Икĕ çĕнтерў пур санăн. Виççĕмĕшне тума тăрăш: тем пулсан та, мăнакуна фронта пулăшас ĕçе явăçтар,—терĕ Васса Павловна. Хăй Нинăна юратса, хĕпĕртесе пăхать. Унăн ăша пит-куçĕ савăнăçла.

— Вăл явăçать ĕнтĕ,—терĕ Нина.

Васса Павловна патĕнчен Нина çунатланнă кăмăлпа отряд сборне кайрĕ.

... Çакăн хыççăн уйăх çура яхăн вăхăт иртрĕ. Селле кашни шăматкун Марине ачисене мунча кўртме çўрет. Плаки патне те хăш чух кайкаласа килет. Плаки халĕ ĕнтĕ сывах, колхозра ĕçлет. Селле Плакине пĕр кило çăм арласа панă. Плаки çавăншăн Селлене укçа тўлес, тенĕ. Селле укçана илмен. Хăй вара Плаки ăна укçа сĕннĕшĕн пит кăмăлсăрланнă.

— Çав пĕчĕк, ним мар ĕçшĕн укçа тўлесе мана намăса ан кўртĕрех. Хальхи вăхăтра, вăрçă вăхăтĕнче, кашни çын канçăр пурăнакан çынсене хăйĕн ĕçепе пулăшмалла,—тесе хучĕ Селле. Çакна вăл, Нина каланă сăмахсене аса илсе, каларĕ. Карчăкан шухăшĕсем Нинăн шухăшĕсемпе те, сăмахĕсемпе те килĕшрĕç.

Пĕр кунхине Нина шкултан час таврăнмарĕ. Кăнтăрлахи апат çиме кĕтсе тăракан мăнаккăшĕ Нинăна кĕтсе ывăнчĕ. Нина тĕттĕм пулсан тин киле чупса килчĕ.

— Мĕншĕн час килеймерĕн? Е урокне начар пĕлнипе апатсăр хăварчĕç-и мен?—ыйтрĕ мăнаккăшĕ кулкаласа.

— Çу-ук, пионерсен ĕç пулчĕ,—терĕ Нина, салтăнса алă çурĕ те апат çиме ларчĕ.

— Мĕнле ĕç?—интересленет Селле.

Нина апат çинĕ хушăрах мăнаккăшне çапла каласа пачĕ:

— Тепĕр виçĕ эрнерен Хĕрлĕ Çар кунĕ çитет. Çав кун валли фронта парнесем çитерме хатĕрленетпĕр. Паян

эпир, пионерсем, кашни киле кӗрсе ҫавӑн ҫинчен каласа тухрӑмӑр, кам мӗн парассине ҫыртӑмӑр. Икӗ кунтан пар-несене шкула пухмалла.

— Апла эппин,—терӗ Селле. Вӑл яшка сыпма чарӑн-сах кӑшт шухӑша кайса ларчӗ, вара ыйтрӗ:—Кам мӗн пама пулчӗ-ха?

— Тӗрлӗрен. Хӑшӗ шӑрттан паратпӑр, терӗҫ, хӑшӗ кӗпе-йӗм, питшӑлли, тала, фуфайка,—темӗскер те пур. Кӑрлач Микулийӗн икӗ кинӗ ятарласа пӗр сысна ӳстер-нӗ. Сысни пысӑк, шап-шурӑ, карташӗнче йӑраланса ҫӳ-рет. Ыран ӑна пусатпӑр, терӗҫ. Пурте фронта пулӑшма хатӗр. Пӗр ҫын та ҫак паха пысӑк ӗҫе хутшӑнмасӑр юл-малла маррине пурте ӑнланнӑ. Эпир фронта пулӑшни—ҫӗнтерӗве ҫывхартни пулать,—тесе ӗнентерӳллӗ вӗҫлерӗ Нина хӑй сӑмахне.

Апат ҫисен, Нина наччаслӑха Тамара патне чупса кай-са килчӗ. Электричество ҫутӑлман-ха. Нина мӑнаккӑшӗ тирӗк-чашӑк тирпейленӗ хыҫҫӑн кӑмака ҫине хӑпарса выртнӑ. Нина кӑмака ҫине хӑпаракан картлашка ҫине тӑчӗ те аллипе хыпашласа мӑнаккӑш пуҫне тупрӗ, ӑна ҫемҫен ыталарӗ.

— Мӑнакай, эпир фронта яма мӗн паратпӑр? Тен, вӑл, эпир янӑ япала, аттене лекӗ?—терӗ Нина мӑнаккӑш хӑлхине тутипе сӗртӗнсе.

— Мӗн те пулин парӑпӑр, ачам,—терӗ мӑнаккӑшӗ ҫемҫелнӗ сасӑпа. Нина калама ҫук саванса мӑнаккӑш пуҫне ҫемҫен хӑпартласа хӑй кӑкри ҫумне хӗстерчӗ. Мӑнаккӑшӗ фронта валли япала пама килӗшессине Нина мӗнчул кӗтнӗ, мӗнчул хатӗрленнӗ. Нина кӗтни ҫитрӗ!

— Тамара амӑшӗ мӗн хатӗрлетӗп тет фронта яма?—ыйтрӗ мӑнаккӑшӗ.

— Пӗр мӑшӑр ҫӑм чӑлха, алшиш ҫыхнӑ тата тулӑ ҫӑ-нӑхне ҫупа пыл ҫине ҫӑрса печени пӗҫернӗ. Тамара мана ҫитерсе пӑхтарчӗ, пиtӗ тутлӑ, пит нумай, пӗр пысӑк хутаҫ!

— Эпир ҫынсенчен начар парне хатӗрлемӗпӗр. Аҫу вӗт вӑрҫӑра. Тен, шӑпах ун патне ҫитӗ. Ун патне ҫитей-месен, тепӗр лайӑх салтак патне ҫитӗ. Вӑл та савӑнӗ... —терӗ Селле ҫемҫен, ӑйхӑ килнипе анаслакаласа,—эсӗ ыран шкултан таврӑннӑ ҫӗре пирӗн те парнесем хатӗр пулӗҫ.

— Юрӗ, мӑнакай,—терӗ Нина мӑнаккӑшне, ытарай-масӑр пуҫӗнчен шӑлса. Лампочка ҫутӑлчӗ. Нина ҫав са-

мантрах картлашка çинчен çăмăллăн сикрĕ, урокĕсене хатĕрлеме сĕтел патне хавассăн пырса ларчĕ. Вуннĕрсехетченех уроксем хатĕрлесе, вĕренсе ларчĕ вăл. Кăмăлсем лайăх чухне вĕренме питех лайăх, çăмăл иккен!

Тепĕр кун Нина шкултан килнĕ çĕре пӳрте ăшалаьă хур ашĕ шарши сарăлнă. Пăхать—чăланта сĕтел çинче тăватă хур пур. Халĕ çеç вĕсене кăмакаран кăларнă пулмалла: çу юхса çеç тăрать. Нина, хурсене курсан, хĕпĕртенипе кулса, кăшкăрса ячĕ:

— Ак, мăнакай! Чăн та начар мар парне хатĕрлерĕнçке! Мăнаккăшĕ кăмăллă пит-куçпа Нина енне çавăрăнса çапла каларĕ:

— Иккĕшне ман ятпа ярăпăр, тепĕр иккĕшне сан ятпа.

— Юрĕ, юрĕ, мăнакай, халех çыратăп!—хавасланчĕ Нина! Вăл чăлантан тухса кĕнекисене хума сĕтел патне пычĕ. Кунта пĕр тĕрке яп-яка та шап-шурă çемçе йĕтĕн пирри пур.

— Мăнакай, ку пир те парнелĕх-и?

— Парнелĕх. Тăлалăх касас, тетĕп.

— Ой, мăнакай! Пирĕн парне Тамарăсенчен те авантарах пек мана!—терĕ Нина пир тĕркине сӳткелесе пăхса.

— Аван пултăр ĕнтĕ, парне вĕт!—тулли кăмăлпа савăнчĕ карчăк.

Нина сĕтел умне ларчĕ. Вăл пысăк листа хутран ансăр татăк касса илчĕ. Çырма хатĕрленсе аллине химически карандаш тытрĕ, вара кăшт шухăшласа ларчĕ те çапла çырчĕ:

*„Дорогим защитникам Родины от пионерки из Чувашии Нины Турбаевой и ее тети Степаниды Каюровой“.*

Çак çырнă хута Нина пĕр хурăн ури çине аврарĕ, вара, хучĕ ан сӳтĕлсе кайтăр тесе, ăна çиппеле пит аван туртса çыхрĕ.

Каçхине Нинăпа мăнаккăшĕ пир тĕркинчен тăватă мăшăр тăла касрĕç, „хур шалĕ“ текен çĕвĕпе тăла вĕçĕсене пӳклерĕç.

— Ĕнтĕ пĕтĕмпех хатĕр,—терĕ Нина хăй пĕркунах туса хатĕрленĕ çирĕм пилĕк конвертне те тетрадьсем айĕнчен кăларса.

— Çук-ха, пĕтĕмпех мар. Виçĕм çулах хам валли виçĕ метр шура, пит çӳхе катан пир илнĕччĕ, çавăнтан пит тутрисем тăвас,—хыпаланса каларĕ карчăк.

— Машинăпа халех пўклесе хуратăп,—терĕ Нина. Чăлантан машина футлярĕпех йатса тухрĕ вăл, майлаштарчĕ. Селле кĕлетри арчине уҫса асаннă катам пирне илсе кĕчĕ, ăна таткăн-таткăн касрĕ. Нина машинăпа пўклеме тытăнчĕ, шарлаттарса ҫĕлет, часах пўклесе те пĕтерчĕ.

— Ĕнтĕ пĕтĕмпех хатĕр,—терĕ Нина, машинне вырăна лартса.

— Хатĕр, каяйса леҫмелле,—терĕ мăнаккăшĕ уҫă кăмăлпа.

Нина калама ҫук савăнать, вĕҫĕмсĕр савăнать.

Вырсарни кун ҫитрĕ. Фронт валли пухнă парнесене хĕрлĕ обозпа станца ăсатаҫҫĕ. Шкул патĕнче тулли лавсем тăраҫҫĕ. Хĕрлĕ обоза ăсатма колхозниксем, шкул ачисем, учительсем пухăннă. Вĕсем шкул умĕнче тăраҫҫĕ, районтан килнĕ военком сăмах каласса кĕтеҫҫĕ. Ҫанталăк чылай сивĕ пулин те, Нина мăнаккăшĕ те пур: карчăк паян сивĕрен хăраман.

Парнесене леҫме каякансем лавсем ҫине ларчĕҫ, тапранса кайма хатĕрленчĕҫ. Военком шкул картлашки ҫинче тăрса калама тытăнчĕ. Вăл Хĕрлĕ Ҫар тĕрекĕ ҫинчен, куллен-кун ҫĕнтерӳ хыҫҫăн ҫĕнтерӳ туса тăван ҫĕршыва тăшманран тасатса пыни ҫинчен чуна ҫĕклентерекен сăмахсем каларĕ, боецсем валли парнесем панăшăн халăха тавтурĕ. Юлашкинчен вăл пионерсем фронта, красноармеец ҫемьисене пулăшни ҫинче чарăнса тăчĕ, уйрăмăнах Нина Турбаева ятне асăнчĕ, хăмăр чĕрĕ куҫĕсене пионерсем тăракан ҫĕрелле ячĕ.

— Турбаева Нина вĕренӳре—отличница, обществăллă ĕҫре—чăн-чăн пионер, кая юлнă тĕттĕм мăнаккăшне совет ҫыннисен ретне кўртет. Турбаева пек ачасем—пирĕн савăнăҫ, пирĕн мухтавлăх, шкул илемĕ. Ҫакнашкал ачасем чăн-чăн патриотсем пулса ўсеҫҫĕ. Ҫитĕнсен вĕсем ҫĕршыва тăшман аллине парас ҫук. Сывă пултăр Хĕрлĕ Ҫар! Сывă пултăр ăна ертсе пыракан аслă Сталин! Сывă пултăр совет халăхĕ, унăн ҫеҫкисем—пионерсем!

Военком сăмахĕ пĕтсен, шапăлтаттарса алă ҫупни илтĕнчĕ. Малти хура лаша туртăнчĕ. Юра чĕриклеттерсе лавсем тапранчĕҫ. Ялав вĕлкĕшрĕ.

— Чипер кайăр!

— Парнесем ҫитиччен тăшмана тĕппипех пĕтерччĕр!

— Берлина ҫиттĕр Хĕрлĕ Ҫар! Тĕппипех ҫĕмĕрччĕр тăшмана!— илтĕнчĕҫ хаваслă сасăсем.

Селле халĕ Васса Павловна патне юнашар пырса тăчĕ. Шывланнă куçĕсене шурă тутăрпа шăлкаласа, вăл Васса Павловнăна хуллен çапла каларĕ:

— Пирĕн Нина çинчен те каларĕ мар-и çав сын?

— Сирĕн Нина çинчен те каларĕ,—ответлерĕ Васса Павловна. Вăл Селле çине ăшшăн пăхрĕ те çемçен ыйтрĕ:

— Ĕнтĕ, Селле, ачуна пионер ĕçĕсене тунăшăн текех ятлăн-и?

— Çук!—терĕ Селле,—уншăн ĕнтĕ эпĕ Нинăна нихăçан та ятлас çук. Нинăна мар, хама ятламалла пулнă мана. Эпĕ хам ĕмĕрте хамшăн çеç тăрăшнă, сынна пулăшса курман, халăх ĕçне явăçман. Çынна пулăшнă хыççăн чĕрене савăнăç кĕнине эпе ку таринччен пĕлмен...

Васса Павловна Селле каланине пуçне кăшт тайса, ытарайман ăшă кăмăлпа, хĕпĕртесе итлесе тăчĕ. Çынсем шкул патĕнчен саланма пуçларĕç. Селлен татах калаçас килет. Вăл Васса Павловнăна, унпа тачăрах тăрса, малаллa каларĕ:

— Нина кăмăлне ытараймасăр эпĕ вăл хушнине тăвакан пултăм. Пуçласа чирлĕ Плакине вут хутса патăм. Çавăн хыççăн эпĕ хам çынна усăллă пулнăшăн—хĕпĕртерĕм, чĕрене хайхи савăнăç кĕнине туйрăм. Паянхи пек эпĕ нихăçан та хĕпĕртемен: эпĕ те халăхпа пĕрле фронта кăшт пулăшрăм-çке...

Çапла каласа Селле ытларах шывланнă куçĕсене татах шăлса илчĕ. Васса Павловнăна куçран пăхрĕ.

Шăпах çак самантра вĕсем патне Нина пырса тăчĕ. Унăн пичĕ сивĕпе кĕренленнĕ. Хăмăр мамăк тутăр айĕнчен хура çӳçĕ куранать. Мăнаккăшĕ куçĕсене шăлкаласа тăнине асăрхасан, Нина хурлăхан пек йăлтăркка куçĕсемпе пĕрре мăнаккăшĕ çине, тепре Васса Павловна çине пăхса илчĕ.

— Мĕн пулнă?—ыйтрĕ Нина.

Васса Павловна Нинăна ăшă куçĕсемпе савса пăхрĕ те:

— Мăнаку савăнăç çулĕ çине тухнине каласа пачĕ,—терĕ.

Икĕ ватă алă тытса уйăралчĕç. Нина мăнаккăшĕпе юнашар хавассăн утса пычĕ, вăл ырă ĕçшĕн, Васса Павловнăшăн, мăнаккăшĕн савăнса утрĕ.

1946.

# ЁЛЁК ВЁРЕННИ

*Калав*

Якур нучче—кăвак çÿçле, шурă сухаллă, лутрарах старик. Колхоз пуçланнăранпах вăл пахча-çимĕç енĕпе ĕçлет. Пахчана ĕçлеме пыракан хĕрарăмсене пушă вăхăтра час-часах хаçат вуласа парать, çамрăксене ĕлĕкхи пурăнăç çинчен каласа пама, хальхи пурăнăçшăн хĕпĕртесе илме юратать. Пионерсем Якур пичче патне ĕçлеме пит хавас пыраççĕ. Якур пичче ĕлĕкхи çинчен калама тытăнсан, ачасем вара сывламасăр тенĕ пекех ăна итлеççĕ.

Хальхи вăхăтра правительство учительсене орденсем пани Якур пичче кăмăлне питĕ çĕклет.

— Вăт халĕ мĕнле, вăт совет правительстви учительсене мĕнле пахалать, тивĕçлипе пахалать,—тет вăл хаçата уçса орден илнĕ учительсен йышлă спискине сарса пăрахса.

Çурхи хĕвел çуттинче кантăкĕсемпе йăлтăртатса помидорпа купăста калчисен парникĕсем ретĕн-ретĕн курăнаççĕ. Çав парниксем тавраш̆енче Якур пичче кăштăртатса çÿрет. Пилĕк-ултă пионер купăста калчисене пĕр парникрен тепĕр парнике куçарса лартаççĕ. Вĕсем Якур пиччене пушă вăхăтра пулăшма килнĕ. Ачасем лайăх, хăвăрт та çыпăçуллă ĕçленине пăхса Якур пичче хĕпĕртет.

— Ӳсетĕр хĕвел çинче сарăлан чечексем пек, пултарулла ÿсетĕр, вĕренетĕр. Шкуле сирĕн пысăк, çутă: кĕр-кĕр вĕренетĕр. Учительсем сире юратаççĕ, аван вĕрентеççĕ. Урахла вĕт хальхи учительсем, пачах урăхла совет çĕршывĕнче çĕнĕ этем тăвакан учительсем, вĕсене нумайĕшне орден панăшăн хĕпĕртес килет. Юррăм çавăрăнаймасть, Джамбул пек юрлăттăм. Совет законĕсене шăпчăк сассипе мухтăттăм... Мĕншĕн эпĕ сирĕнпе тантăш мар-ши?

— Якур пичче, эсĕ çырма та, вулама та пĕлетĕн, эсĕ те вĕреннĕ пулĕ шкулта?—ыйтрĕ пĕр хĕрача. Хăй вара Якур пичче калаçма тытăнассине кĕтсе, ун çывăхнерех пырса тăчĕ.

— Вĕреннĕ, эпĕ те вĕреннĕ, ачасем.

— Каласа пар-ха, кам вĕрентнĕ сире?—çыпăçать тепĕр пионерĕ.

Якур пичче куçне хĕвел çине хĕссе пăхса илчĕ те:

— Канăр эппин, ларăр,—терĕ.

Ачасем парник аяккине ларчĕç. Якур пичче калама тытăнчĕ:

— Пирĕн шкул чиркӳ хурал пӳртĕнче пулнă. Пĕчĕк пӳлĕмре, кăмака çумĕнче, икĕ хăлтăр-халтăр парттă хушшинче 13 ача вĕренеттĕмĕр. Пирĕн класра пĕр чӳрече çеçчĕ, вăл та пулин симĕсĕн-кăвакăн куранакан кантăкĕ витĕр çутă сахал кӳртетчĕ, пирĕн класра ялан каç пулса килнĕ пек тĕттĕмччĕ. Вĕрентетчĕ пире шĕвĕр пуçлă, катăк шăллă диакон пулнă ватăрах çын. Вăл Ванифатий Агафонович Афонский ятлăччĕ. Афонский пире виçĕ çул хушши пĕр кĕнекепе, псалтырь текен кĕнекепе вĕрентрĕ. Куне-кунĕпех пире учитель çав кĕнекене вулаттаратчĕ. Вăл кĕнекен кашни страницине эрнешер, икшер эрне вулаттăмăр, виçшер эрне хушши ушкăнпа наизусть вĕренеттĕмĕр. Ту-ту!.. ту-ту!.. туса вĕренсе ларattăмăр вара. Виçĕ çул хушшинче çав кĕнеке йăлăхтарсах çитерчĕ.

Ванифатий Агафонович пире вулама лартатчĕ те хăй кăвак кĕççе сарса кăмака çине хăпарса выртатчĕ, аллине пичатнăй линейка тытатчĕ. Пичатнăйне вара аршăна пайласа виçĕ тĕслĕ сăрпа: хурапа, шурăпа, кăвакпа сăрланăччĕ. Эпир çак линейкăна меншĕн çапла сăрланă-ши, тесе пуçăмăрсене вататтăмăр. Пире шкулта ун чухне пичатнăй аршăн, метр мĕн иккенне каламан, паллă—псалтырь вулаттарнă, кĕлĕсем юрлаттарнă; патша, унăн арăмĕ, ачи-пăчи мĕн ятлине, вĕсене мĕнле мухтаса чĕнмеллине вĕрентнĕ; кăшт-кăшт çыртаркаланă. Пичатнăйра виçĕ аршăн иккенне эпĕ хут вĕренсе тухсан чылайран, Геронтьев хуçанне арман пĕвелеме кайсан, çĕр чавнă чухне тин чухлакан пултăм вара... Вăт çапла Ванифатий Агафонович кăмака çине хăпаратчĕ те выртатчĕ, эпир псалтырь наизусть вĕренеттĕмĕр. Ачасенчен кам та пулин пуçне кĕнеке çинчен çĕклесе унталла-кунталла пăхса илсенех, Афонский çав ачана кăмака çинче выртнă

çĕртенех пичатвăйпа пуçĕнчен тивертсе илетчĕ. Ача вара хăпарса тухнă пуçне хыпашлакаласа, йĕре-йĕре псалтырьти сăмахсене ним ăнланмасăр, шăла çыртса вĕренетчĕ. Вăл пичатнăя эпир питĕ юратмастăмар. Ванифатий Агафонович çав пичатнăйпа пире тултан класа пырса кĕнĕ чухне те кашнине пĕрер шаккаса илетчĕ, эпир шкултан тухса кайнă чухне те пĕрер шаккатчĕ. Эпир çав пичатнăя шаккамалли, теттĕмĕр.

Ванифатий Агафонович хăш чухне кăмака çинче хăрлаттарма тытăнатчĕ. Эпир вара, учитель çывăрса кайсанах, пĕр-пĕрин çине пăхса илеттĕмĕр те, пĕр çĕре пухăнса ларса, юмахсем калама тытăнаттăмăр.

Шкулта пирĕн пĕтĕм савăнмалли те çавă çеçчĕ вара, анчах ку савăнăçлă япала çумне часах пирĕншĕн ырă марри те хутшăнатчĕ. Ванифатий Агафонович хăш чух каçченех çывăратчĕ. Эпир çаплах, юмахсем каласа, пăшăлтатса ларattăмăр. Вăрансан вара Ванифатий Агафонович тытăнатчĕ туллашма. Çапла каласа кăшкăрашатчĕ: „Эсир вĕренместĕр! Юмахсем каласа шуйттана савăнтаратăр! Шуйттан сире астараты!" тесе ятлаçатчĕ. Шĕвĕ, вăрăм çÿçĕсене тăмалантарса кăмака çинчен анатчĕ те, кашни ачана киле кăларса ярас умĕн скамье çине тăсса хурса пушăпа явалантарса яратчĕ. Мăнкун умĕн „учителе" 50—60 çăмарта илсе килсе панă ачасене çемçерех çапатчĕ, çăмарта паманнисене хытă кукăртатчĕ. Хай пĕчĕк класра вăрăм тумтирне варкăштарса, катăк шăллă çăварĕнчен сурчăк сирпĕтсе ăшша пиçиччен пирĕнпе кĕрмешетчĕ. Урок вăхăтĕнче кăмака çине хăпарса çывăрасси учителĕн эрнере иккĕ-виççĕ те пулкалатчĕ, çапла вара эпир пушă куклине эрнере иккĕ-виççĕ çисе вĕреннĕ.

Чиркÿ праçникĕсенче пире, паллах, чиркÿре юрлаттарнă. Чиркÿре юрланăшăн текелесе пĕрре пире учитель пыл çитеретĕп, терĕ. Мăнкун иртсен, шкула пĕр стакан пыл илсе пычĕ, хутпа витсе сĕтел çине лартрĕ. Виçĕ кунччен сĕтел çинче ларчĕ пыл, никам та çав пыла астивсе пăхмарĕ, пыл паратăп тесе, эрне хушши пыл çитеретĕп тесе, Ванифатий Агафонович кашни ачана 10-шар çăмарта илсе килме каларĕ. Эпир мĕн хушнине турăмăр. Хайхи пирĕн учитель пире пыл çитерме пуçларĕ: çÿхе, пĕчĕк калек туса пынă та, кашни кун пире пĕрер калек пыл сыптарма тытăнчĕ. Ку, тет, светить тунă пыл, ку пыла çисен, çынна ăс кĕрет, вĕренекен ачасен чĕлхи-çăварĕ уçăлать, аван вĕренекен пулать, тет.

Малтан хăй пĕр калек çавăрса ăсса сыпать, вара пире пыл çине калекне кăшт чиксе илсе сыптарать, черетпе сыптарса тухать. Çапла эпир пĕр стакан пыла пĕр эрне лăп çирĕмĕр.

Пĕрре çуркунне, виçĕ çул вĕренсен, пирĕн шкула мăнтăр тиекпе наблюдатель текен пуп шăнкравсене шанкăртаттарса килчĕç, экзамен пулать, терĕç. Тытăнчĕç ачасенчен кĕлĕсем ыйтма, псалтырь вулаттарма, наизусть калаттарма. Ачасем шыв пек каласа параççĕ. Ачасене лайăх вĕрентнĕ тесе пирĕн учителе ырларĕç, темĕнле хĕрес парса наградăламалла тунă, терĕç.

Теплерен манран тиек: „пичатнăйра миçе аршăн?" тесе ыйтрĕ. Эпĕ ответлеймерĕм. Хама виçĕ çул хушшинче пичатнăйпа темиçе çĕр те шакканă пулĕ, эпĕ пичатнăйра миçе аршăнне пĕлейместĕп. Наблюдатель текен пуп, кăвак тумтир тăхăннăскер, кăкри çинчи пысăк хĕресе йăлтăртаттарса ман еннелле çавăрăнчĕ, пысăк куçĕсемпе мана çиес пек пăхрĕ, учителе шăппăн темĕн каларĕ. Учитель пичатнăя илчĕ те ман умма тытса: пичатнăйра миçе аршăнне пĕлместĕн-и? Ака, çакă мĕн ку?— терĕ ман сăмса патнех пичатнăя илсе пырса,— мĕн ку?—тет.

— Шаккамалли,—терĕм эпĕ, питĕ тĕрĕс калатăп тесе шутласа. Тиек лăх-лăх кулчĕ. Пуппа учитель пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç.

— Псалтыре, кĕлĕсене лайăх пĕлет, тата мĕн кирлĕ?—терĕ пуп. Вара пире 13 ачана пурне те „школа грамоты" текен хута шкултан вĕренсе тухнă тесе çырса пачĕç. Çапла вĕреннĕ эпир,— тесе пĕтерчĕ Якур пичче. Унтан кăштах шухăшларĕ те Якур ачасене акă мĕн каларĕ:

— Пирĕн ялтан вунсакăр çухрăмра тепĕр шкул пурччĕ. Унта лайăх учитель вĕрентет, тетчĕç. Çав учитель çинчен пĕтĕм халăх калаçатчĕ. Анчах та ăна, лайăх çын пулин те, патшана хирĕç каять, тесе тĕрмене хупнă... Шкулне те хупса лартрĕç кайран. Афонский вĕрентекен шкул çеç юлчĕ вара...

Каласа пĕтерсен вăл тепĕр хут хĕвел çине куçне хĕссе пăхса илчĕ те, ура çине тăчĕ. Унпа пĕрле мĕн илтнипе тĕлĕнсе кайнă ачасем те тăчĕç.

— Тепĕр 30 минут пек ĕçлĕр те, киле кайăр, урокĕсене авантарах вĕренĕр. Сире начар вĕрентмеççĕ, сирĕн начар вĕренме юрать-и?!—терĕ Якур пичче.

Ачасем Якур пичче каласа панă хыççăн шакăлтатса калаçса ĕçе тытăнчĕç.

1933.

# ЮТРАН КИЛНИ

*Юмах*

I.

Ҫӗрле ӑшӑ ҫумӑр ҫурӗ. Ирхине сап-сарӑ хӗвел пӑхрӗ. Сарт тайлӑмӗнчен ҫырла пахчи ҫине хӗвел хӑй ӑшшине кӑмӑллӑн ячӗ.—Ӳсӗр, капӑрланӑр, ҫитӗнӗр, ӗрчӗр,—тенӗ хӗвел, пахчари ӳсентӑрансем ҫине ӑшшӑн пӑхса.

— Эпӗ паян питӗ хӗпӗртететӗп,—терӗ хурлӑхан тӗмӗ, ҫӗрле ҫурӑлма тытӑннӑ ҫеҫкисене хӑвӑртрах кӑларса, тутлӑ шӑршӑ сарса.

— Эпӗ те, терӗ чие ҫырли тӗмӗ,—тымарсем патӗнче нӳрӗ нумай, хӗвел ӑшӑ, нимӗн те мана хупӑрламасть, пурӑнма, ӳсме пит аван.

— Эпӗ те хӗпӗртететӗп,—терӗ пӗр сасӑ, ҫӗнӗ сасӑ. Ку сасӑ ни чие ҫырли, ни хурлӑхан сасси пек мар, темӗнле урӑхла сасӑ. Халиччен ку сасса ҫак ҫырла пахчинче никам та илтмен.

— Кам вӑл? Ӑҫта вӑл?—терӗҫ сасартӑк хурлӑханпа чие тӗмӗсем, тӳлек ҫил вӗрнӗ майӑн унгалла-кунталла пӑхкаласа илсе.

— Эпӗ вӑл. Эсир мана халиччен курман-ха. Эпӗ те сирӗнпе пӗрле пӗр пахчара ӳсес тетӗп,—терӗ пӗр ӳсентӑран, тин ҫеҫ ҫӗр ҫумӗнчен ҫӳлелле ҫич-сакӑр ҫулҫӑллӑ тунине хӑпартма тытӑннӑскер.

— Эй, имшерккескер, кунтан ӗмӗрне те пирӗн пек хитре тӗм пулас ҫук,—терӗ чие ҫырли тӗмӗ, ҫак ӳсентӑран еннелле пӑхса илсе.

— Ӑҫтан пӗлен, тен лайӑх ӳсӗ; сасси хӑюллӑ-ха унӑн, чаплӑ япала пек, сассине пысӑк кӑларать,—терӗ хурлӑхан, хӑйӗн ҫамрӑк ҫулҫи ҫине ларнӑ сывлӑм тумламне хӗвел ҫинче йӑлтӑртаттарса илсе.

Чие ҫырлипе хурлӑхан тӗмӗсем ҫӗнӗ ӳсентӑран ҫинчен хӑмла ҫырли тӗмне пӗлтерчӗҫ:

— Пӑх-ха, пирӗн таврарах темскерлескер шӑтса ларнӑ. Ав, „хӗпӗртететӗп“ тесе ларать. Эсӗ ӑна палламастӑн-и?—терӗҫ чиепе хурлӑхан.

— Курман эпĕ нихăçан та кунашкал ӳсекен ăпалана. Хăмла пулĕ вăл? Çулçи хăмланăн пекрех-çке,—терĕ хăмла çырли тĕмĕ.

— Хăмла пулсан, ăна пахчаç ак часах кăкласа пăрахĕ. Ку хăмла пахчи мар. Колхозăн хăмла пахчи урăх пур. Хăмла пулсан, вăл ӳсме хăмла пахчине кайтăр,—терĕç чие тĕмĕсем.

— Мĕнлескер-ши вăл? Пысăк, лапсака ӳссе, пире хупăрламĕ-ши?—тесе пăшăлтатрĕç аякрах ларакан ытти тĕмсем, хăйсен çулçисемпе чĕтренсе, пĕр-пĕрин урлă çĕнĕ ӳсентăрана курасшăн кармашса пăхса.

— Ан шикленĕр, юлташсем. Эпĕ сирĕн пахчăра ӳсни-пе никама та кансĕрлес çук. Эпĕ, пысăк йывăç пек ӳссе, сиртен хĕвел çутине хупăрлас çук. Эпĕ явăнса ӳсме юрататăп. Иçĕм çырли теççĕ мана,—терĕ çĕнĕ ӳсентăран.

„Иçĕм çырли" тенине илтсен, пахчари пĕтĕм ӳсентăрансем тĕлĕнсе кайрĕç. Пĕр самантлăха пахчара шăпах пулчĕ. Унта-кунта вĕçкелесе çӳрекен ăшă çил те пĕр самантлăха таçта пытанса ларнă пек пулчĕ. Шăпланчĕ пурте. Хĕвел çеç кулса пăхать.

— Иçĕм çырли?!—терĕ чăн малтан чие тĕмĕ тĕлĕнсе тăнă çĕртен, сасартăк сассине кăларса.

— Ак тĕнче! Иçĕм çырли кунта—хĕлле сивĕ пулакан çĕрте ӳсет-и?!—терĕ хăмла çырли.

— Хăш чух ку çĕршывра мана та сивĕ лекет, эпĕ те хăрса ларатăп та, иçĕм çырли шăнса вилет вăл кунта,—терĕ слива тĕмĕ.

— Шăнса вилет! Шăнса вилет! Шăнса вилет!—терĕç иçĕм çырли çывăхĕнче ӳсекен тĕмсем.

Çак сăмахсем пахча талккăшĕпе сарăлса кайрĕç. Сăрт тайлăмĕпе, таçта çитиех сарăлса выртакан колхозăн пахчинче çак сăмахсем пур çĕрте те илтĕнчĕç. Речĕ-речĕпе ларакан чие, хăмла çырли, слива, хурлахан тĕмĕсем—темиçе çĕр тĕм—иçĕм çырли çинчен: „Шăнса вилет! Шăнса вилет! Шăнса вилет!"—тесе пăшăлтатрĕç. Иçĕм çырли, çакна илтсен, кулчĕ: „Эпĕ шăнса вилекенни мар çав. Мана сивĕпе хăратаймăн",—терĕ хăй ăшĕнче, пĕр хурланмасăр.

* *
*

Вăхăт иртет. Пахчари тĕмсем, шурă пĕркенчĕк пĕркеннĕ пек пулса, çеçкене ларса иртерчĕç. Ентĕ çырласем те чăмартаннă. Пĕрре колхоз председателĕпе пахчаç-бригадир тĕмсем хушшипе каласса иртеççĕ.

— Кăçал та çырла нумай пирĕн,—терĕ колхоз председателĕ.

— Нумай, нумай,—терĕ пахчаç.—Пахчара тăрăшса ĕçлени усăллă пулчĕ. Иртнĕ çул 500 пăта яхăн çырла пулнă пулсан, кăçал 1000 пăт пулать, тетĕп.

— Ĕçлесен пулать. Кĕркуннепе çуркунне пахчара тĕплĕ ĕçлес пулать. Тĕмсем тĕлĕнчи тăпрана кирлĕ имçамсем сапса çемçетмелле, хусăкламалла, çумкураксене пĕтермелле, хурт-кăпшанкăсенчен сыхланмалла,—терĕ колхоз председателе.

— Кашни çулах ку ĕçсене тăватпăр. Кашни çул пирĕн пахча юсанса пырать. Астăватан-и, чи малтан, пахча тума тытаннă чух, мĕнле ĕçлерĕмĕр? Ним юрăхсăр çĕре —сăрт тайлăмĕнчи чуллă çĕре—тасатса, тислĕк тăкса, темиçе хут сухаласа юсарăмăр. Ударлă ĕç пулчĕ ку. Малашне тата авантарах ĕçлесчĕ-ха,—терĕ пахчаç.

— Эй, этем тем те тума пултарать. Ударниксем çав пахча выранне—халиччен юрăхсăр выртакан çĕре—халĕ пысăк тупăш паракан тунă пулсан, килес çул эпир ку пахчана тата пысăклатăпăр: 30—40 гектара çитерĕпĕр, тата çакăнтах, юрăхсăр çĕре аванлатса, иçĕм çырли чĕртсе ӳстерĕпĕр. Мĕнле пурăнать-ха санăн леш сăнамалăх лартнă иçĕм çырли туни?

— Чиперех ӳсет-ха. Ав, ларать.

Çапла калассан, икĕ çын иçĕм çырли туни ӳсекен çĕре çитрĕç.

Иçĕм çырли чылай ӳснĕ. Хăй тĕлне тăратса панă рамăллă решетке çине илемлĕн яванса, хĕлĕхсемпе çакланса ӳсет.

— Халĕ ĕнтĕ сарăпламасть, аван ӳсет. Хĕл ăнăçлă каçса килес çул аванах ӳссессĕн, эсĕ каланă пахча çитес çулсенчех пулса ларать,—терĕ пахчаç, иçĕм çырли çине кăмăллăн пăхса.

* * *

Пахчара тĕрлĕ çырласем пулса çитрĕç. Чие, хурлăхан, слива тĕмĕсем нумай çырлаллă турачĕсене çĕрелле усса лараççĕ. Хăмла çырли аякранах хĕрлĕн, саррăн курăнать. Колхозниксем пиçсе çитнĕ çырласене пухма килчĕç. Хăшпĕр йышши çырласене ăшне хут сарнă ещĕксем çине тултарса, лавсем çине тиесе, станцие турттараççĕ, хăшпĕр йышшисенчен пахчарах шурă саппунлă хĕрарăмсем варени пĕçереççĕ.

— Ку тӗмӗн ҫырли нумайтарах.

— Кунӑн ҫырлисем пылакрах.

— Кунӑн шултӑрарах,—теҫҫӗ ачасем, пиҫсе ҫитнӗ тутлӑ ҫырласене татса, тӑраниччен ҫисе ҫӳресе.

Шавлӑ, юрӑллӑ, кулӑллӑ иртсе кайрӗ пахчари ҫырла пиҫнӗ вӑхӑт. Ҫырлана татса пӗтерсен, пахча илемсӗрленсе юлнӑ пекех туйӑнчӗ.

— Ҫырласем ӳстерсе патӑмӑр, ӗнтӗ килес ҫул валли ӳсме, ҫырла тума вӑй хатӗрлетпӗр,—тесе пӑшӑлтатаҫҫӗ тӗмсем.

— Хатӗрлӗр, хатӗрлӗр! Лайӑхрах ӳсӗр! Килес ҫул вӑйлӑ, капӑр пулӑр,—терӗ хӗвел.

* * *

Шӑрӑх кунсем сивӗнме тытӑнчӗҫ. Хӗвел, аяккалла кайнӑ пек, пахча ҫине халӗ ӑшшӑн пӑхмасть, тӗмсемпе савӑнса калаҫмасть. Салхуланчӗ ҫанталӑк. Ҫил те кичемӗн шӑхӑрать, ҫурҫӗр енчен сивӗ илсе килет. Ҫырла тӗмӗсем сарӑхрӗҫ, хӗрлӗ-сарӑ ҫулҫисем ҫӗрелле вӗл-вӗл туса ӳкеҫҫӗ.

— Кичем ӗнтӗ, ыйхӑ килет,—тесе пӑшӑлтатаҫҫӗ тӗмсем.

— Манӑн та ыйхӑ килет,—терӗ иҫӗм ҫырли тӗмӗ.

— Санӑн ыйхӑ мар, вилӗм килет, вилмелли вӑхӑт-ҫитет санӑн,—терӗҫ иҫӗм ҫырлине кӳршисем.

— Ҫу-ук, йӑнӑшатӑр!—терӗ иҫӗм ҫырли туни хӑюллӑн.

Пӗр ирхине шапарсем, кӗреҫесем йӑтса, колхозниксем пахчана кӗчӗҫ. Тӑкӑннӑ ҫулҫӑсене шӑлма, тӗмсен тӗлӗсене хусӑклама тапратрӗҫ. Тепӗр хут шавларӗ пахчара этем сасси.

Виҫӗ-тӑватӑ кунтан пахча каллех шӑпланчӗ. Колхозниксем пахчари ӗҫсене пӗтерчӗҫ.

Час-часах юрлӑ, ҫумӑрлӑ кунсем пулаҫҫӗ. Пӗр каҫхине сивӗ ҫил юра вӗҫтерсе килчӗ. Ҫырла тӗмӗсене ҫав каҫах юр витсе кайрӗ. Ир еннелле сивӗ ҫил хытӑрах вӗрчӗ те ҫанталӑк сивӗтрӗ.

— Ой, сивӗ, мӗнле хӗл каҫас?—теҫҫӗ ҫара ҫӗрте тӑракан слива тӗмӗсем.

— Эсир тӑрнаккай ӳсетӗр; пире, лутраскерсене, юр витнӗ те, юр ӑшӗнче сивех мар,—теҫҫӗ хурлӑхан тӗмӗсем.

— Эпир шӑнатпӑр та, леш, иҫӗм ҫырли, черченкӗскер, мӗнле тарӑхать пуль, сивӗпе вилсе те кайӗ вӑл,—тесе калаҫаҫҫӗ тӗмсем.

Ишӗм ҫырли нимӗн те чӗнмерӗ. Ӑна пахчаҫ тӑпрапа вигсе хунӑ та, ҫиелтен ҫемҫе юр витсе кайнӑ. Тен вӑл илтеймерӗ тӗмсем ун ҫинчен калаҫнине...

II.

Аяккалла кайнӑ хӗвел пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗнех сывхарма пуҫларӗ. Тайлӑмри ҫырла пахчи ҫине ӑшшӑн пӑхать. Пӗлӗт тӳпи халӗ кӑвакрах, ҫанталӑк ҫутӑрах, ҫил ӑшӑрах. Тӗмсене хӳсе кайнӑ юр шыв пулса юхрӗ.

— Ай, ӑшӑтнӑ-ҫке, питӗ ырӑ!—терӗ хӑмла ҫырли тӗмӗ, чӑн малтан вӑранса, тулса ҫитнӗ качкисене хӗвел ӑшшинче ӑшӑтса.

— Кӑчкӑсене ыран-паянах сарма тытӑнатӑп, тӳсме ҫук, халех ҫурӑлса каяҫҫӗ,—терӗ хурлӑхан тӗмӗ те.

— Ӳсме, капӑрланма тытӑнатпӑр,—терӗҫ ытти тӗмсем.

— Эпӗ те вӑранатӑп ӗнтӗ,—терӗ ҫӗр айӗнчен тухакан ишӗм ҫырли туни.

— Эсӗ вилмен-и?—терӗҫ йӗри-тавра ӳсекен тӗмсем, тӗлӗнсе.

— Эпӗ вилессе шутламан та, ав пӗр слива тӗмӗ вилнӗ пулас,—терӗ ишӗм ҫырли тӗмӗ.

Тӗмсем хуран курӑнса ларакан слива тӗмӗ ҫине ҫавӑрӑнса пӑхрӗҫ. Чӑн та, слива тӗмӗн турачӗсем чӗрӗ курӑнмаҫҫӗ: кӑчкисем типме тытӑннӑ, тем нимӗн те шарламасть.

Ишӗм ҫырли чиперех хӗл каҫни ҫинчен хыпар пӗтӗм пахчана сарӑлчӗ. Ку хыпара ӑшӑ ҫил, тӗмсем хушшинче вӗҫсе ҫӳресе, пурне те пӗлтерчӗ.

— Вилмен-ҫке ютран килнӗ ишӗм ҫырли, вилмен,—тесе пӑшӑлтатрӗҫ пӗтӗм тӗмсем.

— Каласа пар-ха, мӗнле тӳсрӗн эсӗ хӗллехи сивӗре? Ишӗм ҫырли туни сивве тӳсеймест тенине илтнӗччӗ эпир. Ав пӗр слива тӗмӗ шӑнса вилнӗ вӗт, хӑрнӑ,—терӗ хурлӑхан.

— Каласа пар-ха, каласа пар!—терӗҫ пур тӗмсем те.

Ишӗм ҫырли туни тӳлек ҫилпе кӑшт авӑнса илчӗ те хӑй ҫинчен калама тытӑнчӗ.

— Эпӗ сирӗн пата хам ирӗккӗн килсе шӑтман. Пахчаҫ мана Мичурин асатте патӗнчен илсе килсе кунта лартнӑ. Тӗрӗс, халиччен Чӑваш республикинче ишӗм ҫырли ӳсет тенине никам та илтмен; чӑн та, ишӗм ҫырли ку ҫӗршывра ӳсме пултарайман. Ман атте-анне ҫуралнӑ ҫӗршыв—ӑшӑ Крым. Мичурин асатте ҫамрӑк чухнех ман атте-

аннене хӑй пахчине илсе килсе лартнӑ. Мичурин пахчинче, кунти майлах, хӗлсем сивӗ пулаççӗ. Мичурин манӑн атте-аннесенчен сивӗрен хӑраман иçӗм çырли тунисем ӗрчетме тытӑннӑ. Мичурин вӑл тӗлӗнмелле çын. Вӑл кӑнтӑр енче—ӑшӑ çӗрте çеç ӳсекен ӳсентӑрансене сивве тӳсмелле тӑвать. Мичурин пахчинче манпа кӳршӗрех шӑрӑх енчи ӳсентӑрансем—персик, лимон, абрикос ӳсетчӗç. Тата тӗрлӗ ӳсентӑрансем те, веçех урӑхланса, ырӑланса кайнисем пурччӗ. Эпӗ халӗ кунта пуçласа килтӗм те пурӑнма тытӑнтӑм. Эпӗ ку çӗршывра пурӑнма пултаратӑп пулсан, Мичурин пахчинче манпа пӗрле çитӗнекен ӳсентӑрансем те ӳсме пултараççӗ. Вӗсем те ак килӗç, вара пирӗн пахчаран пурте тӗлӗнӗç. Кӑнтӑр енӗ кунта куçрӗ, кунта кӑнтӑр енчи ӳсентӑрансем ӳсеççӗ-çке! —тейӗç. Эпӗ те ку çӗршывра пурӑнма пултаратӑп.

— Тӗлӗнмелле! Тӗлӗнмелле!—терӗç пахчари тӗмсем.

— Тӗлӗнмелле! Эпӗ те хамран хам тӗлӗнетӗп, манӑн атте-аннесем сивӗрен пит хӑрана, эпӗ акӑ, Мичурин асатте мана сивӗрен хӑрамалла мар тунипе, пӗрре те сивӗрен хӑрамастӑп.

Пахчаç хайӗн пысӑк аттипе кӗптӗртеттерсе çитрӗ. Аллинче кукӑр çӗçӗ. Иçӗм çырли туни патне пычӗ те:

— Пит маттур эсӗ, нумайтарах ӗрчетем-ха сана, тураттусене касса татах лартам,—терӗ те çӗççипе тунан турачӗсене кӑчӑрт! тутарса касса илчӗ. Каснӑ çӗртен замазкӑпа сӗрсе хучӗ. Касса илнӗ турачӗсене тирпейлӗ тытса, саппун арки çине хурса, пахчан тепӗр вӗçне лартма кайрӗ.

## ШЁШКЁ

**Юмах**

I.

Кёркунне шёшкё тёмине мăйăр татакан ачасем пётёмпе хуçса ватса пётерне. Мăнтарăн шёшкийё! Епле чăтнă-ши вăл çав асапа? Пăхсан, халё хёрхенес килет. Хуçăк турачёсем шанса хуралса çёрелле чикённё. Çулçисем таткаланса çурăлса пётнё. Кёрхи хура тăм ўкичченех ем-ешёл ларакан шёшкё хăй илемне çухатнă. Нумаях пулмасть шёшкё пит илемлё, тикёс тăрăллă, хăмла пек мăйăрлă курăнса ларатчё. Халё пёр мăйăр та çук. Хăй те илемсёрленсе ванса юлнă.

Шёшкёпе юнашар пёр ăвăс ларать. Хуллен çилпех хăйён хытă çулçисене çăтăл-çăтăл вылятать. Ăвăсăн ним шухăш та, ним хуйхă та çук, анчах шёшкё çине пăхать те, хурланса, шёшке хёрхенсе калать:

— Шёшкё тус, мён усси пур санăн мăйăр ўстерни? Пăх-ха ёнтё ху çине, эсё мăйăрусене пула мёнле ванса пётнё. Килес çул пёр мăйăр та ан ўстер, ан çурат. Мăйăр çуратса ўстерни вăл ху шăмму-шаккуна ватни анчах, сана хуна ним усси те çук,—тет.

Шёшкё ăвăс çине вăйё-халё пётнё майёпе аран-аран куçне уçса пăхрё. Типсе, хăрса кайнă çулçисене кăштăртаттарса, йăнăшса, сассине хуллен кăларса калать:

— Тёрёсех санăн сăмах, ăвăс тус. Килес çул пёр мăйăр та ўстермёп. Ай-яй-ай, шăмшак пит ыратать. Йёпе-сапа пулать пуль,—тет.

Кёрхи йёпе-сапа пуçланчё. Йёпе-сапа хыççăн хёл те персе çитрё. Хёлле шёшке, лутраскерне, пётёмпёх юр сапса кайрё. Хёлле пур йывăççем те ўсмесёр тёлёрсе ларчёç. Çил-тăман улатчё, юр вёçтеретчё, йывăççене нимён те мар: кашласа çеç лараççё.

II.

Хӗл иртсен ҫуркунне пулчӗ. Вӑрманти юр ирӗлсе пӗтрӗ те, ҫӗр ӑшӑнсанах пӗтӗм йывӑҫсем, кӑраксем чӗрӗле пуҫларӗҫ. Шӗшкӗ те, юр айӗнчен тухсанах, чӗрӗлме тытӑнчӗ. Унтан-кунтан кӑчкӑсем кӑларчӗ. Хӗвел пӗҫертет, ӑшӑ ҫил вӗрет, кӑчкӑсенчен ҫулҫӑсем тухаҫҫӗ. Иртнӗ кӗркунне шӗшкӗ, майӑр тӑвас мар тесе, тертленнӗччӗ, анчах халӗ тем тӑвас ӗнтӗ: майӑр те тӑвас, те тӑвас мар? тет. Пур йывӑҫ та, пур кураӑк та кашни харпӑрхӑй майлӑ чечеке ларса хӑшӗ ҫырла, улма, хӑшӗ вӑрӑ, хӑшӗ майӑр ӳстереҫҫӗ,—кашни йывӑҫ-кураӑк хӑй йӑхне-тӗпне ӗрчетесшӗн. Пурте хӗвеле пӑхаҫҫӗ, унӑн ҫуттишӗн ҫӳлелле туртӑнаҫҫӗ. Хӗвелӗ пурне те ыррӑн пӑхать, ӑшӑ ҫил ярать, ачашлать. Пит аван, пит илемлӗ! Ав шӗшкӗрен аякра мар вӑрман улмуҫҫи курӑнать. Вӑл палӑрми шурӑ-кӗрен чечекре ларать. Кӗркунне ҫав вӑрман улмуҫҫийӗн ҫӗклейми улми пулӗ. Вӑрман улмуҫҫийӗнчен аякрах мар пӗр ҫӗмӗрт йывӑҫҫи ҫеҫкере ларать, шап-шурӑ, шур кӗпеллӗ илемлӗ хӗр пек туйӑнать. Шӗшкӗ пӗтӗм йывӑҫсем харпӑр-хӑй тӗллӗн ҫимӗҫ кӳме тытӑннине курса шухӑша кайнӑ.

— Ытти йывӑҫсен пурин те вӑрӑсем—ачисем пулаҫҫӗ, эпӗ ҫеҫ пушӑ ларатӑп. Хӗвел хӗртсе пӑхать, пит ӑшӑ, пит аван. Хӗпӗртесе пурӑнас, ӳсес килет, манӑн та майӑр ӳстермесӗр хурлӑха юлас марччӗ,—тет шӗшкӗ. Хӑй хӗвел ӑшшинче ҫамрӑк ҫулҫисене ӑшӑтса ларать. Аманчӑк шӗшкӗн чунтан-вартан майӑр ӳстерес килет. Кунӗ-ҫӗрӗпе ҫавӑн ҫинчен шухӑшлать. Шухӑшларӗ-шухӑшларӗ те, майӑр тӑвас тесе, хатӗрленме тытӑнчӗ. Пӗр туратне пӑхать—хуҫӑк. Тепӗр туратне пӑхать—туратӑн майӑр пулмалли ҫӑчкисене иртнӗ кӗркунне ачасем хуҫса кайнӑ. Турат вӗҫӗсем хуҫкаланчӑк. Шӗшкӗн пит майӑр туса, майӑр ӳстерес килет. Кӗркунне шӑмшак ыратнине те вӑл маннӑ, анчах темӗн чухлӗ майӑр тӑвас тесе тӑрӑшсан та, майӑр ӳстерме май ҫук: шӗшкӗн пӗр тӗрӗс турат та, пӗр пӗрчӗ вӑй та ҫук. Шӗшкӗ пит хуйхӑрса ларчӗ.

Куллен-кун шӗшке хӗвел ӑшӑтса ачашлать. Шӗшкӗ хуллен-хулленех кӗркуннехи суранӗсене хӗвел ӑшшипе тӳрлетрӗ. Ҫӗнӗ туратсем, ҫӗнӗ кӑчкӑсем кӑларса ӳстерет. Тӳрленет, юсанать шӗшкӗ, хӑй ӑшӗнче хӑйӗннех шухӑшлать: усӑсӑр йывӑҫ ҫеҫ пултӑм эпӗ кӑҫал, пӗр

мăйăр та ӳстереймерĕм. Мĕн манăн пурăнни! Хĕвел çутти сая каять, ах, анчах...

Хĕвел, шĕшкĕ шухăшне пĕлсе, хуйхине туйса, шĕшкĕ турачĕсене ачашшăн çутатать, хĕрхенсе пăхса калать:

— Ан хуйхăр, пĕчĕк, лутра шĕшкĕ. Санăн иртнĕ кĕркунне пит шăмму-шакку аманса пĕтнĕ. Ача-пăчасем сана ытла хăрушла, тискеррĕн ватнă. Кăçал санăн канас пулать. Эпĕ сана мăйăр ӳстерсен те, ӳстермесен те пĕр пекех пăхатăп. Пĕр пекех саншăн та ăшă яратăп. Кăçаллăха канса, илемленсе лар-ха. Килес çул валли вăй хатĕрле,—тет çут хĕвел. Хăй ăшшăн кулать, çутçанталăка илем кӳрет.

III.

Çу иртет. Ирхине, каçхине сивĕрех. Вăрман улмуççи улмисем саралчĕç. Кашни çĕр, шурă тăм ӳкмессерен, çĕре тăкăнаççĕ. Çынсем вăрмана пĕрнесем, хутаççем çака-çака килеççĕ, мăйăр татаççĕ, уй-улми пуçтараççĕ. Акă пĕр кунхине эпир паллакан шĕшкĕ патне виçĕ ача пычĕç. Пĕри мăйăр шыраса турачĕсене сире-сире пăхать.

— Асту, майĕпе туратсене тыткала, ан хуç, ан амант шĕшкĕне,—терĕ тепĕр ачи. Лапкă çил унăн мăйĕнчи хĕрлĕ галстук вĕçĕсене вĕл-вĕл вĕçтеркелет.

— Пĕлтĕр эпĕ çак шĕшкĕ çинчен пит нумай мăйăр татнăччĕ, кăçал пĕр мăйăр та çук,—терĕ мăйăр шыраканни.

— Астăватăп, эпĕ те курнăччĕ сана çак шĕшкĕ çинчен мăйăр татнине. Эсĕ ку шĕшкĕне мăйăр татнă чух турачĕсене пĕтĕмпех хуçса ватса пĕтернĕччĕ, çавăнпа унăн кăçал мăйри те çук,—терĕ галстукли.

— Эпĕ пĕлтĕр пĕлмен йывăç-курăка ватма юраманнине. Халĕ ĕнтĕ хам аван мар тунине хам куçпах куратăп.

— Пионер—çутçанталăк тусĕ. Вăл ӳсентăрансене, кайăк-кĕшĕксене юратать, вĕсене пĕтересрен, сиен тăвасран сыхлать. Мĕн тăвар халĕ эпир? Ӳсентăрансене ватма, вырăнсăр касма юраманни çинчен лозунгсем çырар.

— Юрĕ, юрĕ—килĕшрĕ пионер юлташĕ.—Айта халех киле, çыратпăр лозунгсем. Эпĕ ку шĕшкĕне пĕлтĕр ватнă пек никам та ан ваттăр ӳсентăрансене.

Ачасем утрĕç.

— Куртăн-и, илтрĕн-и, çамрăк ăру мĕн калаçать?— ыйтрĕ шĕшкĕрен хĕвел, шĕшкĕ çине тимлĕн пăхса.

— Илтрĕм, куртăм,—терĕ шĕшкĕ, хĕпĕртенипе çулçисене тӳлек çилпе силлентерсе илсе,—ĕнтĕ пирĕн пĕр çулçă та, пĕр турат та мăйăр татнă чухне хуçăлас çук. Килес кĕркунне валли çĕклейми мăйăр ӳстерĕп.

— Ӳстер, саван, лутра шĕшкĕ,—терĕ хĕвел.

— Аван-çке пурăнма, ах, аван-çке,—терĕ шĕшкĕ, килес çул валли мăйăр тума хытă шухăш тытрĕ, хатĕрленме тытăнчĕ.

Мăйăрĕ мĕн чухлĕ пулĕ-ши çак шĕшкĕн? Йĕтайĕç-ши ун турачĕсем сарă мăйăрĕсене?

1925.

## ВĔРЕНЕПЕ КУРШАНКĂ

*Юмах*

Вăрман хĕрринче ватă юман сарăлса ларнă. Вăл пит пысăк, лапсака пулнă. Унăн хăвалне кăнтăрла тăманасем кĕрекĕре ларнă, хĕвел çуттинчен пытаннă. Юман таврашĕнче йывăççем, курăксем ӳснĕ. Пурте юман хĕвел çуттине хупăрланăшăн кăмăлсăр пулнă. Вĕсем каланă:

— Мĕншĕн эпир çак юман сывăхĕнче шăтса ӳсме тытăнтăмăр-ши? Пирĕн уçăрах çĕрте, нимĕн хупăрламан çĕрте шăтса ӳсмеллеччĕ.

Пĕрре кĕркунне пит вăйлă çил-тăман пулчĕ. Вăл вăрманти йывăççене хытă силлерĕ. Кашларĕ, кĕрлерĕ вăрман. Ватă юман хăвалĕ пысăкрах тĕлтен шăтăр-шатăр турĕ те çĕре кĕрĕслетрĕ.

— Ватăлнă эпĕ, вилĕм килчĕ манăн, — шухăшларĕ вăл, — манăн вырăнта ытти ӳсентăрансем шăтса ӳссе савăнччăр.

Тепĕр кун ирхине хресченсем вăрмана пăчкăсемпе, пуртăсемпе килчĕç, юмана сыпăларĕç, çурчĕç, вутă туса купаларĕç, каçалапа вуттине турттарса та кайрĕç. Юман йĕри-тавра ӳснĕ ӳсентăрансем хĕпĕртерĕç:

— Пирĕн валли вырăн пушанса юлчĕ, килес çул пире ӳсме ирĕк пулать, — тесе шухăшласа лараççĕ. Пуринчен ытла юман çумнерех ӳснĕ çамрăк вĕренĕ хĕпĕртерĕ. Вăл шухăшлать:

— Килес çул çуркунне хам тĕлти ирĕкленнĕ вырăна ик-виç турат ӳстерсе чăсса яратăп тата аялтан хунав кăларасчĕ. Урăх ӳсентăран нимĕн те ан шăтайтăр ку вырăна. Хам тĕлти вырăна пĕтĕмпех хамăн йышăнасчĕ, ирĕккĕн ӳсесчĕ те пысăкрах, чаплăрах пуласчĕ,—тет.

— Манăн та чиперех ӳсесчĕ-ха. Эпĕ кăçал çуркунне çеç шăтнă та пысăках ӳсеймерĕм, вăрă çитĕнтермелĕх пулаймарăм. Килес çул кунта мана та сарăлса ӳсме, вăрăсене ирĕккĕн çитĕнтерме вырăн пур,—терĕ виçĕ-тăватă пĕчĕкрех çулçăллă çамрăк хупах.

Вĕрене, хупах сăмахĕсене илтсен, çилленчĕ. Вăл хăйĕн кăшт сарăхма пуçланă тăррине пĕкçе çĕрелле пăхрĕ те каларĕ:

— Эй, телейсĕр ӳсентăран, ху эсĕ çĕр çумĕнчен те хăпайман-ха, çапах сарăлса ӳсесчĕ текелетĕн. Çиттĕр-ха çуркунне, парăп акă эпĕ сана хампала юнашар саркаланса ларма, — терĕ вĕрене, сарă пуçне танлăн çӳлелле çĕклерĕ.

* * *

Çуркунне çитрĕ. Хĕртсе хĕвел пăхать. Ăшă çил кăнтăр енчен хуллен вĕрет. Курăксем, йывăçсем ешĕре пуçларĕç. Хайхи вĕрене хĕпĕртет. Туратсем, хунавсем кăларас тесе, шултăра кăчкăсем хатĕрлесе хунă. Кĕç-вĕç вĕрененĕн ик-виç турачĕ шăтса тухĕç. Аялтан хунавсем шăтма та хатĕр.

Вĕренепе юнашар хупах та хулăн çулçисене кăларма тытăнчĕ. Вĕрене хупаха хунав кăларса, турачĕсене тăсса ярса хупăрласшăнччĕ, пĕтерсе хурасшăнччĕ, анчах хупаха пĕтерсе хума ĕлкĕреймерĕ, вĕрене çулçи сарăлса çитиччен хупах çулçисене сарса яма тытăннă. Парка туналлă çулçăсем калама çук пысăк сарăлса ӳсеççĕ. Алла сĕлтрĕ вĕрене.

— Пурĕ пĕр манран çӳллĕ ӳсейрес çук çав хупах, — терĕ вăл.

Хĕвел пăхать. Ăшă çил вĕрет. Вĕрене çулçисене вылятать. Вĕрене хĕпĕртет. Ирĕккĕн ӳсеççĕ-ха манăн туратсем, хунавсем. Мĕн тĕрлĕ аван! Мана пĕр пек хĕвел ăшăтса тăрать, нимĕн те хупласа кансĕрлемест. Вĕрене çапла шухăшласа савăнса ларать. Çӳлти турачĕсен пӳрнелле çулçисене пĕр çилсĕрех вылятать. Хупах çинчен те вăл мансах кайнă пек пулнă, хăйпе мухтанать, çӳлелле пăхать.

Ир пулать те каç пулать. Хĕвел ăшă пăхнипе, çуллахи çумăр нӳррипе хупах сарăлнăçем сарăлать. Пурăнсан-пурăнсан хупах пит ахăрса ӳссе кайрĕ, сарăлкаласа çеç ларать. Туни патак пек хытă, хулăн. Унталла та, кунталла та турачĕсене салатса янă — аллисене тăсса ларнă пек ларать. „Ан тивĕр мана, ан пырса çыхланăр ман тавраша, ан кансĕрлĕр мана ӳсме", тенĕ пек туйăнать. Лутрарах йывăç тĕмĕсенчен те çӳлерех ӳснĕ. Патне ан пыр! Турачĕсен вĕçĕнче симĕс тӳмме пек чăмăрккасем кĕтти-кĕттипе ӳстерчĕ, чечек кăларма шухăшлать пулас.

Вӗрене хайӗн пысӑк мӑнкӑмӑлла шухӑшӗсемпе ҫӳлелле ҫеҫ пӑхса ларатчӗ, халӗ ӗнтӗ, хупах вӗрене хунавӗсене хупӑрлама пуҫласан, вӗрене аялалла пӑхрӗ те калать:

— Эсӗ мӗн йӗркепе ҫак вырӑнта сарӑлса ларма тытӑнтӑн? Манӑн туратсене, хунавсене кансӗрлетӗн. Эсӗ ӑҫтан ҫӑваран килсе шӑтса лартӑн кунта? Лапка ҫулҫусемпе мӗншӗн манӑн хунавсене хупӑрлатӑн? Эсӗ кӑҫалах пушанса юлнӑ пӗтӗм вырӑна йышӑнасшӑн, килес ҫул вӑррусем те ҫакӑнтах шӑтса ӳсе пуҫласан, мӗн курмалла санпала? Пӗтеретӗн-ҫке эсӗ! Эпӗ сана асту-у!

— Питех ан ятлаҫсам,—терӗ хупах вӗрене хирӗҫ.— Эпӗ кирек ӑстан килсе шӑтнӑ пулам, санӑн ӗҫ ҫук унта. Манӑн вӑрӑсем пирки ан та калаҫ: вӗсемшӗн те ҫӗр ҫинче вырӑн пур. Таҫта кайса та, тепле карта хӗрринче те, тепле ҫырмана ҫитсе те шӑтса ӳсӗҫ вӗсем. Эпӗ хам та кунта сукмак хӗрринче ӳснӗ авнерен хӗр ури ҫиве ҫакланса килнӗ. Вӑрманпа иртсе пынӑ чух сарӑ хӗр юман айне канма ларчӗ те, мана чӑлхи ҫинчен илсе пӑрахрӗ. Эпӗ вара ҫаканта шӑтрӑм...

Вӗрене вара нимӗн те шарламарӗ. Хӑйӗн сарлака ҫулҫисене ҫил майӗпе выляткаласа илчӗ те, пуҫне каллех ҫӳлелле ҫӗклерӗ. Хӗвелпе кӑвак пӗлӗте ҫеҫ пӑхса тӑрать.

Ҫу иртесси аякра мар. Пур ӳсекен япаласем те вӑррисене ӳстерчӗҫ. Вӗрененӗн те вӑррисем ҫитӗнеҫҫӗ. Икӗ ҫунатла, вӑр-вӑр ҫеҫ вӗҫкелесе ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. Вӗрене хӑйӗн вӑррисемпе мухтанать:

— Манӑн ачасем пит аван! Мӗн тӗрлӗ вӗсем! Лӗпӗш пек! Эпӗ вӗсене ҫунатлӑ тунӑ. Майлӑ ҫилпе таҫта та вӗҫсе кайма пултараҫҫӗ. Таҫти ҫӗре те вӗҫсе кайса вӗсем вӗрене йӑхне ӗрчетӗҫ,—тет.

Хупахӑн та вӑррисем (куршанкисем) ҫитӗнчӗҫ.

Вӗрене хупаха калать:

— Санӑн ачусен мӗн илемӗ пур? Ах, путсӗр япала! Ӑҫта кайса, ӑҫта вырӑнаҫӗҫ вӗсем?—тет.

Хупах хӑйӗннех калать:

— Манӑн вӑрӑсемшӗн ан хӑра эсӗ. Вӗсем хам патӑмах ӳксе, ку вырӑнтах шӑтса ӳссе хама тӑвӑр тумӗҫ-ха. Май пулсан, манӑн ачасем те ҫӗр ҫинче хупах йӑхне ӗрчетме аяккалла кайӗҫ,—тет.

Ҫу иртрӗ. Вӗренен те, хупахӑн та вӑррисем ҫитӗнсе ҫитнӗ. Сивӗ. Ирсерен шап-шурӑ тӑм ӳкет. Хупах ҫулҫисем тӑм тивнипе шанса хуралса ҫӗре лӗчӗркенсе ӳкр ӗҫ.

Тунипе куршанки çеç тăрса юлчĕç. Куршанкă çулçăсем хăрнăшăн пĕрре те хуйхăрмарĕ.

— Пирĕн çулçăсем çеç мар, пур курăксем те типеççĕ акă,—терĕ вăл хăй ăшĕнче.

Вĕрененĕн те çулçисем сарăхрĕç. Унăн çунатлă вăррисем халех ӳкетпĕр, халех вĕçсе каятпăр тесе, сулланкаласа вĕçкелесе тăраççĕ. Кашни кунах тĕрлĕ мамăклă вăрăсем вĕренепе куршанкă çывăхĕнчен вĕçе-вĕçе иртсе каяççĕ.

— Ăçталла каятăр?—ыйтаççĕ хăш чух вĕренепе куршанкă.

— Çĕнĕ çĕре пурăнма, ирĕк вырăнта шăтса ӳсме,— теççĕ çăмăл мамăклă пĕчĕк вăрăсем.

Пĕр каçхине çĕрле çĕрĕпе çил уларĕ. Вĕренене çĕрĕпе çил-тăвăл хытă силлерĕ. Мĕскĕн вĕрене унталла-кунталла тайкаланса çеç ларать. Ирхине куршанкă пăхать—вĕрененĕн пĕр вăрри те çук. Пĕтĕмпе çĕрлехи çил-тăвăлпа таçта вĕçсе кайса пĕтнĕ. Куршанкă хăй тĕрĕсех ларать. Унăн пĕр вăрри те тăкăнман.

Вĕрене çав ирех каллех куршанкăна ятлама тытăнчĕ. Хăй вăррисенех мухтаса пĕтереймест.

— Пăх та тăр ĕнтĕ манăн ачасене! Мĕн тĕрлĕ аван вĕçсе карĕç вĕсем! Пĕри те хам патăма ӳкмерĕç. Пĕри те кунта ӳксе шăтса хама кансĕрлес çук. Санăн вăррусем вырăнтан та тапранман-ха. Путсĕр япаласем! Çакăнтах ӳксе, çакăнтах шăтаççĕ пулĕ! Вĕсене никам та пĕтерес çук. Çырла пек чипер, тутлă пулсан, вĕсене çынсем те, кайăк-кĕшĕксем те çиме илсе кайĕччĕç. Мăйăр пек çимелле пулсан, шăши те пулин килсе хăй шăтăкне сĕтĕрсе кайĕччĕ. Манăн вăрăсем пек çунатлă пулсан, вĕçсе кайма пултарĕччĕç. Çунатти те, илемĕ те, тути те, ним усси те çук! Мĕнле майпа вĕсем кунтан хăпса кайĕç?

— Эсĕ манăн аннене—хупаха пирĕн пирки ятлаçрăн, халĕ пире ятлатăн. Ан васка, çитĕ вăхăт, куршанкă та хăй туни çинче юлмĕ. Эпĕ çырла пек, мăйăр пек чипер, тутлă пулмасан та, вĕçсе кайма çунат çук пулсан та, хам анне патнех ӳксе, хам анне çумĕнчех шăтса ӳсе хам аннене пурăнма тăвăр пултăр, тесе шухăшламастăп. Пирĕн анненĕн мĕнпур вăрри çак хăй патнех ӳксе шăтас пулсан, сывлама та вырăн çук пулать. Санăн вăррусенĕн çуначĕ пур, вĕсем çуначĕпе вĕçсе каяççĕ, манăн çунат вырăнне çекĕл пур. Эсĕ мана авантарах сăнаса пăх-ха: манăн йĕри-тавра çекĕл-çке. Çуратнă çĕршывран, хам

аннерен уйăрăлса каяс тесен, эпĕ кам çумне те пулин вăйпах çатăрланса çакланса каятăп-çке!—терĕ.

Пĕр ирхине вĕренепе куршанкă патĕнчен йытă чупса пынă. Типĕ çулçăсем айĕнче темĕн чăштăртаттарнине илтех кайнă. Йытă икĕ хăлхине чăнк тăратса куршанкă патне сикрĕ.

Мĕнле те пулин çимелли кайăк мар-ши вăл тесе, йытă куршанкă таврашĕнче нăш-нăш шăршласа çӳреме тытăнчĕ, лапсака хӳрине пăлтăр-палтар çавăркалать. Чăштăртаттараканни шăши çури пулнă мĕн. Вăл, пит чеескер, йытта курсанах, вĕлт çеç шăтăка, амăшĕ патне, анчĕ. Кайса тыт ăна. Йытă ăна çаплах шырать, çавăрăнкалать куршанкă туни таврашĕнче.

— Акă пирĕн те кун килчĕ, — хĕпĕртерĕ куршанкă, йытă сĕтĕрĕнмессерен ун лапсака хӳри çумне çакланса. Куршанкăн туни пĕтĕмпе çаралса юлчĕ, тап-таса, çап-çара. Йытă, çавăрăнкаласа çӳресен, куршанкă туни патĕнчен, ним тупайманшăн кăмăлсăрланса, малалла чупрĕ. Ку йытă таçта çитсе, таçта ӳкерсе хăварать ĕнтĕ хăй хӳри çинчи куршанкăсене. Сывă пул çуралнă çĕршыв! Куршанкă çĕнĕ çĕре кайрĕ ĕнтĕ.

Вĕрене тĕлĕнчĕ.

— Куршанкă унашкал саланать-çке вăл урăх çĕрелле, ахалех пулчĕ ман ятлаçни, килĕшсех пурăнмаллаччĕ пĕрлех,—терĕ вăл ӳкĕнĕçлĕн.

Çурçĕр енчен сивĕ çил килет. Кас-кас юрпа сапса каять. Вĕренепе куршанкă туни халĕ шăп лараççĕ, пĕрпĕринпе каларас килмест вĕсен, хĕл ăйăхĕ пусрĕ вĕсене.

1925.

## АСЛАТИ

*Калав*

Кăнтăрла çитсе килет. Хĕвел пит пĕçерет. Пĕлĕт хĕрринче хуралла-шурăллă çумăр пĕлĕчĕсем купаланса тăраççĕ. Тапхăр-тапхăр аякран, хуллен аслати сасси илтĕнет. Лявук пиччен улмуççи пахчинче ача-пăча сасси пур. Аякранах ян-ян илтĕнет. Виçĕ хĕрача çатан карта çинче лараççĕ. Лапсака, вĕтĕ улмаллă улмуççи ачасем ларакан тĕле сулхăн тăвать. Ачасем виççĕшĕ те аркисене сип-симĕс вĕтĕ панулми тултарнă. Хĕвелпе пиççе хуралса кайнă урисене суллакаласа улма çисе лараççĕ.

— Эпир улма çинине эсир никама та ан калăр,—тет ултă çулхи Укçине—Лявук пичче хĕрĕ. Хăй симĕс панулмине ирĕксĕр çинĕ пек, тути çăварне чалăштарса, куçĕсене хĕссе чăмлать.

— Атте пасартан килет пулĕ ĕнтĕ. Вăл, эпир улма çинине курсан, ятлаçать. Улман пулса çитмесĕр çимеç-çĕ, тет. Пулса çитмесĕр çисен, аслати çапать, тет.

— Халĕ пире аслати çапать-и ĕнтĕ?—тесе ыйтрĕ пилĕк çулхи пĕчĕк Марук. Хăй çыртнă улмине çăварĕнчен кăларса илчĕ:—аслати çапать пулсан, çыртнă улмана та пулин çиес мар. Чăнах çапать-и вара?—тесе татах ыйтать Марук йĕрсе ярас сассипе.

Çичĕ çулхи Праски, çак хĕр ачасенчен чăн пысăкраххи, хăйне хăй пысăк çын вырăнне хурса калать:

— Хăш чухне çапать, хăш чухне çапмасть.

Праски хăй çыртнă улмине, йÿçĕ пулнăран ывăтса ячĕ те:

— Пĕчĕккисене çапать, пысăкраххисене, ман пеккисене, çапмасть,—тесе хучĕ. Улмисене хăшне-пĕрне çĕре пăрахать, хăшне-пĕрне çыртса пăхса арки çине хурать. Питне-куçне пĕркелентерсе, йывăр ĕç тунă пек чĕрĕ улмана çатăртаттарать.

— Çук, аслати вăл кирек кама та çапать. Пĕчĕккисене, пысăккисене,—пурне те çапать. Кам улма çиет, çавна çапать; эсĕ ху та пĕлместĕн,—терĕ Укçине. Праçки еннелле çавăрăнса ларчĕ те тутипе кăшт мăкăртса та илчĕ.

Праски хăйĕннех:

— Эсĕ ху та пĕлместĕн, асту, пĕлекенни килсе ларнă кунта. Эпĕ сиртен пысăкрах-ха. Эсир иксĕр те нимĕн те пĕлместĕр. Ман пек пысăккисене аслати улма çисен те çапмасть. Эпĕ пĕлтĕр панулмине пўрне вĕçĕ пек пулсанах çинĕ те, мана çапах аслати çапман-çке. Пысăкрах ачасене сапмасть çав вăл аслати. Сана та, Укçине, аслати çапмасть пулĕ-ха. Çу-ук, сана та çапмасть. Эсĕ Марукран пысăкрах вĕт. Марук пĕчĕккĕ. Ăна çумăр килсенех аслати шартлаттарсах пăрахать акă! Укçине, хăйне Праски аслати çапмасть тенĕрен, Праски майлă пулса та тăчĕ.

— Мана та аслати çапмасть, сана та, Праски, çапмасть, Марука çеç çапать.

Укçинен пичĕ, хăйне аслати çапмасть тенĕрен, савăнăçлă, анчах çавăнтах пĕчĕк хĕр пичĕ хурлăхлă та пулчĕ.

— Марука аслати çапсан, Марук çук пулать-çке вара. Марук çук пулсан, манăн кампала выляс? Праскипе ятлаçсан, эпĕ Марук патне каяттăм. Марук çук пулсан, выляс килмест манăн. Ах, эпĕ Марука та аслати ан çаптăр, тетĕп те...

Укçине, Марукшăн хуйхăрса, хуйхăллă куçĕсемпе Марука пăхса илчĕ.

Марук пĕр шарламасăр юлташĕсем калаçнине итлесе ларать. Куçĕсемпе пĕр вĕçĕмсĕр юлташĕсене пăхать.

— Праски, эсĕ аслатине курнă-и?—ыйтрĕ Укçине.

— Ху курнă-и?—тет Праски.

— Эпĕ курман та, пирĕн атте курнă,—тет Укçине.

— Кам пек вăл аслати?

Укçине аслати мĕнлине каласа пама тытăнчĕ. Хăйне хăй пысăк çын вырăнне хурса, аслати çинчен пит хăрушшăн каласа пама тăрăшать. Хăй куçĕсене пысăклатнă, тутисене мăкăртса калаçать.

— Аслати хўлтĕр-хўлтĕр тăвать те, вара çумăр çăвать. Аслати хўлтĕртетни—вăл урапа чупни, тет. Веç, ав, унта пĕлĕтсем курăнаççĕ. Укçине сăрт пек купаланса тăракан хураллă-шурăллă пĕлĕтсене аллипе тĕллесе кăтартрĕ.

— Çав пĕлĕтсем тăрăх шыв турттарса урапапа чупаççĕ. Урапи сăртсемпе пынă чух хӳлтĕр-хӳлтĕр тутарса пырать—аслати пулать. Лаши сăртран аннă чух хытă чупсан, шывĕ пичĕкере чӳхенсе сирпĕнет. Çавă çумăр çуни пулать. Лашине вутлă чăпăрккапа хăвалаççĕ,—тет. Вăл çисĕм çиçни. Пирĕн атте аслати пĕлĕт тăрăх çӳренине пит пĕлет. Мана çавăнпа улма çиме хушмасть. Улмана, пиççе çитмесĕр çисен, аслати çапать, тет те, çунтарать, тет. Ачасем виççĕшĕ те çумăр пĕлĕчĕсем çинелле пăхаççĕ.

— Укçине-е-е! Ăçта эсĕ? Кил хăвăртрах! Аçу пасартан кулач илсе килчĕ!—тенĕ сасă илтĕнчĕ.

Укçине амăшĕ Укçинене чĕнет. Укçинен аслати çинчен тата калас кăмăл пурччĕ. Амăшĕ сассине илтсенех, Укçине хăпăл-хапăл арки çинчи улмине сиплерĕ те, çатан çинчен анса, килне вĕçтерчĕ.

Çумăр пĕлĕчĕсем ял çинелле тăвăнса килчĕç, хĕвел хупланчĕ. Праскипе Марук, йĕри-тавра мĕн пулнине сăнамасăр, улма çикелесе лараççĕ. Сасартăк аслати хаяррăн авăтса ячĕ. Хĕр ачасем шартах сиксе шари! çухăрса ячĕç.

— Пĕтрĕмĕр, аслати халь çапса пăрахать пире улма çинĕшĕн,—тесе шухăшларĕç пĕчĕк çынсем. Иккĕшĕ те кĕл пек шап-шурă шуралса кайса аркă çинчи улмасене çĕре сирпĕтрĕç. Праски хăвăртрах çатан çинчен анчĕ те киле вĕçтерчĕ. Çавăрăна-çавăрăна пăхса чупать. Пĕчĕк Марук кĕске алă-урисемпе тапашланса çатан çинчен часах анаймарĕ. Пĕччен юлсан, Марук макăра-макăра çатан çинчен анкаласа килнелле чупрĕ. Чупать-чупать, нимĕн чул та каяймасть. Сасартăк çил-тăвăл çавăрса çитрĕ. Улăм пĕрчисем, çӳпĕ-çапă, тусан вĕçсе килсе, Марука питĕнчен пырса çапăнчĕç. Марук ниçта кĕрсе кайма пĕлмесĕр çатан çумне çухăра-çухăра тĕршĕнсе тăчĕ. Аслати пĕр чарăнмасăр тенĕ пекех çĕр кисрентерсе авăтать. Çил-тăвăл ураран ӳкерес пек, çĕре ӳпне-питне çавăрса пăрахас пек, тулашать.

Çав вăхăтра Марук амăшĕ хăйĕн икĕ аслă хĕрĕпе пӳртре ларнă. Çил-тăвăл чиксĕр пăтранса килнине курсан, амăшĕ 16 çулхи Вассăна:

— Чуп-ха, тухса ил-ха хăвăртрах Марука. Ача тăвăлтан хăраса пит çухăрать пуль. Паçăр вăл хĕр ачасемпе Лявук карти çинче ларатчĕ. Чуп-ха, кайса ил,— терĕ.

Васса, тăвăл киличчен тĕрĕ тĕрлесе лараканскер, халĕ тĕррине пуçтарса хунă та, сак çинче кашни аслати авăтмассерен шарт сиксе ларать.

— Персе вĕлеретĕп тесен те тухмастăп халĕ эпĕ пÿртрен. Аслати те çапса пăрахĕ. Мĕнле чунпа тухас манăн çав хаяр çил-тăвăл çине,—терĕ Васса. Çиçĕм пит вăйлă çиçрĕ те, Васса сак çине шаларах сиксе ларчĕ.

— Эпĕ Марука кайса илетĕп,—терĕ 12 çулхи Лисук, кĕнеке вуласа лараканскер. Лисук нумаях пулмасть шкултан пионерсен пуххинчен таврăннă, кĕнекине те çавăнтан илсе килнĕ. Пионер йăлисене, пионер законĕсене Лисук пит аван пĕлнĕ. „Хатĕр пул!" тенине манман. Пионер паттăр. Хăруша вăхăтра кансĕр ĕçе тума пионер яланах хатĕр

Лисук вуласа ларакан кĕнекине хупрĕ те:—Анне, эпĕ кайрăм!—тесе пÿртрен хăвăрт тухса чупрĕ. Васса çаплах хăраса ларать.

— Сана, усала аслати те çапмасть пуль,—тесе юлчĕ хăй. Аслати тата хытăрах авăтнă пек туйăнать. Çил-тăвăл куçа уçма та памасть, калама çук вăйлă. Пĕр чарăнмасăр çиçĕм çиçет. Чăнахах та пит хăрушă.

Кăшт тăрсан, Лисук Марука пÿрте йăтăрлантарса та кĕчĕ. Марук сиксе чĕтресе çухăрать. Амăшĕ Марука йăпатса аркă çине тытса ларчĕ. Марук амăшĕ арки çинчен анса кăмака хыçнелле кĕрсе кайма хăтланать.

Лисук йăмăкне ыталаса тытрĕ те:

— Мĕншĕн, Марук, йĕретĕн? Ĕнтĕ киле çитрĕмĕр вĕт. Çил-тăвăл халь иртсе кайĕ, ан йĕр,—тет.

Марукĕ темĕн каласшăн, анчах хытă ĕсĕкленипе каласа яраймасть.

Амăшĕ те йăпатать, Марук çаплах йĕрет.

— А-а-а аслати ça-а-апать мана, э-э-эпĕ у-у-улма çинĕ çав,—тесе ячĕ хайхи Марук, макăрма чарăнаймасăр, пĕтĕм пĕвĕпе чĕтресе.

— Улма çинĕ? Улма çинĕшĕн нихăçан та аслати çапмасть. Уншăн пулсан, пĕрре те ан йĕр,—терĕ Лисук. Хăй йăмăкĕ патĕнче ăшшăн кулкаласа тăрать. Йăмăкне пуçĕнчен те шăлать, йывăрскерне çĕклесе те пăхать.

— Ан йĕр, Марук, улма çинĕшĕн аслати çапать, тесе ăна айвансене хăратма калаççĕ. Акă эсĕ кантăкран пăхса тăр-ха,—терĕ Лисук. Хăй çавăнтах Марука кантăк умне аран-аран çĕклесе тăратрĕ те, пÿртрен хăвăрт тух-

са кайрĕ. Кăшт тăрсанах Лисук хăй саппунĕпе пахчаран пĕр аркă тулли вĕтĕ панулми йăтса кĕчĕ.

— Акă, пăх, Марук. Эпĕ пĕр аркă улма пуçтартăм. Аслати авăтнă, çиçĕм çиçнĕ чухнех улмана çиетĕп, эсĕ кантăкран пăхса тăр.

Лисук каллех пӳртрен вĕлт тухрĕ те, карташĕнче тăрса, Марука кантăк витĕр калать:

— Пăх, Марук, улма çиетĕп, астуса тăр, аслати çапать-и мана,—терĕ те карташ варринче уçă çĕрте тăрса, улма çиме тытăнчĕ. Çил-тăвăл кăшт лăпланнă пек, анчах аслати тата хытăрах хӳлтĕртетет, çиçĕм йăл-ял тусах тăрать. Çанталăк тата хытăрах тĕттĕмленчĕ. Акă пĕр-икĕ тумлам шултăра çумăр пăт-пат ӳккелерĕ. Лисук карташ варринче улма çисе тăрать. Сасартăк çумăр чĕреслетсе яра пачĕ. Лисук пӳрте чупса кĕчĕ.

— Куртăн-и, Марук, мана аслати улма çинĕшĕн çапрĕ-и?—тесе ыйтрĕ.

— Çапмарĕ-çке,—терĕ Марук пĕтĕм пĕчĕк пит-куçĕпе хĕпĕртесе, çуталса кайса.

— Ан ман, Марук, аслати çынна нихçан та улма çинĕшĕн çапмасть. Улмана пулса çитмесĕр çисе пăхма кирек хăçан та юрать, анчах ытла нумай çисен, вăл, пулса çитменскер, вар-хырăма пăсать тата çиме те тутлă мар, усси çук унăн. Аслати улма çинипе çименнине пĕлмест. Илле пророк çинчен калани вăл юптару çеç. Ăна ахаль туртса кăларнă. Çиçĕмпе аслати—вăл хăй тĕллĕн тĕнчери вăй-хăват. Аслати вăл çил пекех, çумăр пекех, хăй тĕллĕн пулать.

Çумăр чĕреслетсе нумайчченех çуса тăмарĕ, часах иртсе кайрĕ. Кай енчен пĕлĕт çуталса та килчĕ. Кăшт тăрсан хĕвел те курăнчĕ. Хура пĕлĕт айĕнчен тухса, кулса янă пек пăхать. Хулăм пĕлĕтсем мал еннелле купаланса шурĕç. Кăвак пĕлĕт çумăр хыççăн тасалса çăвăннă пек, тата та кăвакрах, çутăрах. Улăх урлă асамат кĕперĕ ӳкрĕ. Марук çумăр чарăннă-чарăнман урама сиксе тухрĕ. Пĕчĕк çын пĕтĕм чĕререн, аслати мана улма çинĕшĕн çапмасть, тесе савăнать. Унта-кунта шыв кӳленчĕкĕсем пур. Марук кĕпине çĕклесе кӳленчĕксенче çара уран утса çӳрет. Пĕчĕккĕскер, унталла та, кунталла та чупкалать, шыва урисемпе атса сирпĕтет. Иртсе кайнă çумăр хыççăн хуллен аслати сасси илтĕнет: мăкăртатса, пĕр çилĕсĕр авăтнă пек туйăнать. Марук аслати сасси илтĕнмессерен хăй ăшĕнче:—Ах, мĕн тĕрлĕ

ыра, аслати улма ҫинёшён ҫапмасть,—тесе шухăшлать те Марукăн савăннипе сиккелесе чупас килет. Ҫавăнтах хăрах уран сиккелесе илет. Хёвел ҫинче хăй мёлки сиккеленипе хăй кулать. Пётём ҫутҫанталăк Марукшăн урăхла, илемлё, савăнăҫлă туйăнать. Ача чунё нимёнрен те хăраса тарăхмасть. Пёчёк таннуҫа пусмăрласа, хăратса тăракан ултав сирёлнё.

Праскипе Укҫине ҫумăр иртсе кайсан чылайран тин выляма тухрёҫ. Праски аслати сасси илтёнми пуличченех сăхман пёркенсе шăналăк ăшёнче пăшкаса выртнă. Укҫине икё аллипе питне хупласа сакайне кёрсе ларнă та, ҫумăр иртсе кайсан, амăшё туртса кăлармасăр та тухман. Халё те аякри аслати сасси кăшт илтёнсенех Праскипе Укҫине килелле тарса кёме пикёнеҫҫё. Марук юлташёсене урамра курсан, вёсем патне чупса пычё. Хăйён кёпи чёркуҫҫи таран йёп-йёпе, хăй ытарайми савăнăҫлă кулать.

— Эсир хăвăр нимён те пёлместёр. Улма ҫинёшён аслати ҫапмасть,—терё Марук. Хăй пуҫне суллакаласа, аллисене выляткаласа каларё.

— Ăҫтан пёлтён? Кам каларё?—ыйтрё Праски.

— Пирён Лисук паян аслати хăрушла аватнă чухнех, аслати умёнчех карташёнче улма ҫисе тăчё, аслати ҫапах ҫапмарё...

Праскипе Укҫине Марук каланине яланах итлесех тăракан марччё, халё пёр шарламасăр, тёлённипе хытса кайса итлесе тăраҫҫё.

— Улма ҫинёшён аслати никама та ҫапмасть. Ёненмесен Лисукран хăйёнчен ыйтăр,—терё Марук.

Хёрачасем виҫҫёшё те Лисук патне аслати ҫинчен ыйтса пёлме урисемпе шыв сирпётсе чупрёҫ.

1925.

---

## ВУПĂР

*Калав.*

I.

Эпĕ пĕчĕккĕ, улттă-çиччĕре пур пулĕ... Пĕрре атте анкартинче авăн типĕтет. Каç пулнă. Пӳртре хăй çутнă. Анне каçхи апат пĕçерет. Эпĕ анне патĕнче, вăл ĕçленине пăхса ларатăп. Пиччепе аппа урамра кӳршĕ хĕрĕпе калаçса тăраççĕ. Вĕсем кулса калаçни пӳртех илтĕнет. Вучахри вут çунса пĕтме тытăнсан, анне мана:

— Яшка пиçрĕ, аçуна кайса чĕн, апат çийĕпĕр!—терĕ.

Эпĕ хамăн кивĕ сăхмана пĕркентĕм те, çара пуçăмах анкартине вĕçтертĕм. Чĕрĕ лаша пулса, пуçа каçăртса сиккелесе чупатăп.

— Апат çимелле!—тесе кăшкăратăп.

Йĕтем çине çитрĕм. Пирĕн авăн çумĕнче аттепе Якку пичче кучкенсе* ларнă та, чĕлĕм туртаççĕ.

Якку пичче, ватă старик, пирĕн кӳршĕ. Вăл та хăй йĕтемми çинче авăн типĕтет. Пирĕн йĕтемсем юнашарах. Якку пичче атте патне чĕлĕм туртма, калаçса ларма пынă.

Авăнсем мăкăрланаççĕ. Тырă шăршипе тĕтĕм шăрши сăмсана çапать. Çанталăк тӳлек, уяр. Тулли уйăх тăрă пĕлĕт çинче çап-çутă курăнать. Капансем урлă пирĕн йĕтем çине çутатса пăхать

— Ыгла çутă. Авăн çапма пит аван,—терĕ атте. Хăй, çанталăк аван тăнипе, ăмсанса йĕри-тавра пăхкаласа илчĕ.

— Çанталăкĕ калама çук аван! Малашне тепле пулĕ? Манăн шăмшак йăвăша пуçларĕ. Çанталăк пăсăласса сисет пуль, хăямат,—терĕ Якку пичче. Кучкенсе ларнă çĕртен Якку пичче аран-аран айлаткаласа тăчĕ те, аяла хывса ларнă аçамне илсе тăхăнчĕ.

---

* Кукленсе. Ред.

— Çанталăк ыран-паянах пăсăлмасть пулĕ-ха. Уйăх карталанман-çке. Çанталăк пăсăлас умĕн уйăх йĕри-тавра карта пулаканччĕ!—терĕ атте.

— Шура пĕлĕт таткисем те çук-и вара пĕлĕт çинче? Куçăм витĕрех курмасть те, çанталăк улшăнассине пĕлĕте пăхса чухлаймастăп,—терĕ Якку пичче. Хăй аллипе хăрах куçне хупласа çӳлелле пăхса илчĕ.

— Пĕлĕт тăрă, шыв пек тап-таса, тăп-тăрă, кăн-кăвак. Айта, хĕрĕм, киле,—терĕ атте. Сӳннĕ чĕлĕмне çăпата пуçĕ çине шаккаса кĕлне кăларчĕ те, ларнă çĕртен тăчĕ. Эпир киле кайрăмăр. Якку пичче хăй йĕтемĕ çинелле утрĕ.

Эпĕ аттепе Якку пичче калаçса тăнă чухнех киле хăвăртрах каясшăн çунса тăтăм. Халĕ аттерен иртсе кайса пaçăрхи пекех сиккелесе пыратăп. Манпа юнашар манăн мĕлке сиккелесе пырать. Сасартăк... тĕттĕм пулма пуçланă пек туйăнчĕ. Мĕлкĕ те пĕтсе ларнă пекех пулчĕ. Çав вăхăтрах Якку пичче йĕтем çинчен:

— Ан кай-ха, Мĕтри, кил-ха кунта!—тесе кăшкăрчĕ.

Атте, ман хыçран утса пыракансккер, каялла çаврăнчĕ те йĕтем çинелле утрĕ. Эпĕ те атте хыççăн каялла чупрăм. Уйăх çутти тĕттĕтленнĕçем тĕттĕмленет. Якку пичче йĕтем варринче тăрать. Йĕри-тавра тĕттĕмленсе пырать. Йĕтем хуп-хура курăнa пуçларĕ. Эпĕ хăраса кайрăм. Аттене сăхман аркинчен çатăрласа ярса илтĕм.

— Мĕн çава пулчĕ, мĕн тĕттĕмленсе килчĕ? Уйăх çутти пĕте пуçларĕ-çке,—терĕ атте йĕтем çине кĕрсенех.

Якку пичче пирĕн пата пырса тăчĕ. Вăл аттене:

— Эпĕ хам та сана çаванпа чĕнтĕм вĕт. Уйăха вупăр çиме пуçламарĕ-ши?—тетĕп. Пăх-ха, Мĕтри, авантарах.

Эпир виççĕмĕр те тĕттĕмленсе пыракан уйăха пăхса тăма тытăнтăмăр. Уйăх пĕр енчен пĕчĕкленсе пырать.

— Ах, шуйттан! Уйăха вупăр çиет вĕт!—терĕ Якку пичче. Хăй хăраса ӳкнĕ пулас, сасси тытăнчăкланма пуçланă.

Атте, хытса кайнă пек пулса, пĕр чĕнмесĕр уйăха пăхса тăрать. Уйăхĕ, пĕр хура япала хупланипе, çуттине çухатнăçем çухатать.

— Чим-ха! Эпĕ ăна, шуйттана, вĕри кĕл сапам,—терĕ Якку пичче. Аçамне хуплаштарчĕ те, авăна кĕрсе кайрĕ.

Уйăх çутти пачах пĕтсе ларнă пек. Якку пичче авăнтан ĕвĕк шăрша каларса вĕри кĕл илсе тухрĕ. Аçам аркипе тытнă. Ватăскер, хыпаланса, ĕштеленсе, вĕри кĕле çӳлелле сирпетет.

— Вĕри кĕл сан куçна, пĕтешшĕ вупăрĕ!—терĕ.

Якку пичче арак çинчи кĕле сапса пĕтерчĕ. Вăл хушăра уйăх пĕтсех ларчĕ. Çалтăрсем паçăр, уйăх çутатнипе, питех палăрмастчĕç, халĕ—шултăрарах те, нумайтарах та курăна пуçларĕç.

— Пĕтрĕмĕр! Вупăр уйăха çисех ярсан, тĕнче пĕтет, теççĕ!

Çак сăмахсене Якку пичче пит хăраса, хуйхăрса каларĕ. Пуçĕ çиве хăрушла япала персе анассине пĕлнĕ пек, пуçне икĕ аллипе ярса илчĕ. Ахлатса сывласа, вăйĕ пĕтнипе авăн çумне кучкенсе ларчĕ.

— Ах, тур çырлах, ан пăрах! Вилес пулсан те, çакăнтах вилетпĕр-çке ĕнтĕ! Васпати, васпати памилăй!—Çав вăхăтрах Якку пичче иккĕ-виççĕ сăхсăхса илчĕ.

— Ăмма питех хăрас-ха, Якку пичче! Тен, чиперех иртсе кайĕ-ха. Перре хĕвел хупланнăччĕ те, çапах тĕнче пĕтмерĕ-çке,—терĕ атте. Якку пичче вăйсăрланса кайнă сасăпа:

— Ах, ачам! Ырă мар ку! Тĕнче пĕтнĕ чух вупăр уйăха çисе ямалла, теççĕ,—терĕ те, каллех сăхсăхма пуçларĕ.

Атте Якку пиччепе юнашар пырса ларчĕ. Эпĕ аттепе Якку пичче хушшине хĕсĕнсе кĕрсе лартăм. Хăравипе, чĕтресе, пăштик-пăштик сывласа ларатăп. Хамăр вилнине, тĕнче пĕтнине курас мар тесе, эпĕ питĕме алăпа хытă хупларăм. Якку пичче чавси сиккеленипе, эпĕ Якку пичче сăхха персе ларнине туятăп...

Те нумай, те сахал лартăмăр, атте сасартăк:

— Уйăх курăна пуçларĕ!—терĕ.

Эпĕ пите уçрăм. Чăнахах та уйăхăн пĕр хĕрри кĕлт курăнать. Якку пичче сăхсăхма чарăнчĕ.

— Тĕнче пĕтме вăхăт çитмен-ха эппин,—терĕ Якку пичче. Ларнă çĕртен авăн çумне перĕнкелесе тăчĕ те, уйăха пăха пуçларĕ. Атте те тăчĕ. Эпĕ аттерен юлмастăп.

Атте, ман çине пăхса илчĕ те:

— Иртсе каять акă вăл. Тата пăртак тăрсан, паçăрхи пекех çутă пулать,—терĕ.

— Ĕнтĕ иртсе каять,—тет Якку пичче.—Ĕнтĕ вупăр уйăха çăварĕнчен кăларса ячĕ пуль.

Уйăх çуталнăçем çуталать. Йĕри-тавра çуттăн курăна пуçларĕ. Хура тĕттĕм япала уйăх çинчен сисĕнкĕсĕр шуса тухать.

Уйăх çуталнă майĕпе Якку пиччен хăрасси те пĕтрĕ. Вăл аттепе пĕрле чĕлĕм чĕртме тытăнчĕ.

— Ăçтан çăваран тухре-ха çав вупăр?—тет Якку пичче. Хăй чĕлĕмĕ ăшне табакне пӳрнепе пускаласа тултарать.

— Те вупăр, темскер вăл?—терĕ атте.

— Ай, мĕн агашатăн! Вупăр пулмасăр, мĕн пулать тата вăл!—тет Якку пичче.

Чĕлĕмĕсене иккĕшĕ те чĕртсе ячĕç те, Якку пичче калама тытăнчĕ:

— Эпĕ çамрăк чух бурлакра çӳренĕ. Пĕрре, Атăл хĕрринче, каçхине апат пĕçернĕ чух, уйăха вупăр çиме пуçларĕ. Ун чухне манăн куç-пуç витĕр курать. Уйăха вупăр çинине хамах курса тăтам. Вупар вăл йытă майлах. Уйăх патне хуллен-хуллен шуса пычĕ те, уйăха кап ярса илсе чăмлама та пуçларĕ Эпир нумайăн Атăл хĕрринче пăхса тăратпăр. Вупăр уйăха чăмларĕ-чăмларĕ те, кăшт çеç çăтса ямарĕ. Пĕр чĕрне хури чухлĕ çеç юлчĕ.

— Вĕри кĕл сапăр, вĕри кĕл!—терĕç хăшĕ-пĕрисем.

Вут хунă çĕртен вĕри кĕл илсе сапрăмăр та, уйăха вупăр çав самантрах çăварĕнчен кăларса ячĕ. Кĕл шăршине вупăр юратмасть иккен. Кĕл вăл, çунвă япала, таса.

— Апли апла пулĕ те-ха,—тет атте,—вупăр ăçта пурăнать-ши эппин?

— Вупар вăл тĕпсĕр çырмара сăнчăрта тăрать, тет. Çав çырмана ахаль çын анаймасть, тет. Тухатмăшсем çеç тамана пулса вĕçсе анаççĕ, тет. Тухатмăш пĕрер çынна усал тăвас пулсан, вупăра сăнчăртан салтса ярать, тет. Лешĕ каять, тет, вара çынсене пуса-пуса выртма. Вупăр пуснă тенине илтмени эсĕ?

— Илтесси илтнĕ те, мана вупăр пуснине курман,—тет атте.

— Ах, ачам, вупăр пуснине никамăн та курас ан пултăр. Çынна вупăр пуссассăн, çын тĕлĕкре пит асапланать. Çухăрса яма сасси тухмасть, вăранса тăрас тесен — алă-ура сиккеленмест. Пĕтĕм шăмшакка лап хупласа йывăрлантарса пăрахать те, çын туртăнса выртать. Пĕр кача пӳрнине çеç сиккелентерсен, çын вăранма пултарать, çавăнтах çынна тăн та килсе кĕрет. Хăрушла вăл вупăр. Çынна вупăр пусмалла пĕрер курайман тухатмăш

тăвать. Вупăрĕ çынсене пусса çӳресен-çӳресен усалланса каять те, вара уйăх патне пырать. Пĕрре ĕлĕк-авал çапла пулнă, тет. Асатте калатчĕ ăна. Вупăр уйăха чăмларĕ-чăмларĕ, тет те, пĕлĕт çинчен сĕтĕрсех антарчĕ, тет. Тепĕр кун уйăх капан кутĕнче выртса пырать, тет. Хăйне пĕтĕмпех вупăр чăмласа мăтатса пĕтернĕ, тет. Каçхине, çынсем курăччен, пĕр çын уйăха пĕлĕт çине улăхтарса янă, тет, вара.

Атте лăш кулса ячĕ.

— Аплах пулнă-ши вара?—терĕ.

— Ĕлĕк-авал, ачам, пулнă та пулĕ. Пулман тес çук.

Атте нимĕн шарламасăр чĕлĕмне мăкăрлантарса авăнтан виçĕ-тăватă улăм пĕрчи туртса кăларчĕ те, йăвалаласа пăхрĕ. Типĕ улăм шатăртатса ванать.

Калаçкаласа тăнă вăхăтра уйăх çап-çутă пулса тăнă.

— Авăн типсе çитет. Апат çисе кăшт кансассăнах авăн çапма тухас,—терĕ атте.

— Ентĕ тухсан та пырать. Манăн та ачасене кĕçĕр, эсĕ калана пекех, авăн çапма кăларас пулĕ-ха.

Якку пичче, чĕлĕмне мăкăрлантарса, хăй авăнĕ патнелле хуллен утрĕ. Эпир аттепе киле кĕтĕмĕр...

Апат çисе ларнă чухне пичче уйăх тĕттĕмленнĕ чухнехине калама тапратрĕ.

— Эпир урамра тăратпăр. Сасартăк уйăх тĕттĕмленме пуçларĕ. Михаля пиччесен карташĕнче çăри-çăри тукаларĕç. Унччен те пулмарĕ, Михаля пичче çӳçне-пуçне вирелле тăратнă та, çарамасах хапхинчен сирпĕнсе тухрĕ. Тĕнче пĕтет, тĕнче пĕтет!—тесе хаярран кăшкăрса ярса урам тăрăх чупа пачĕ. Вăл кăшкăрнипе кӳршĕ çыннисем те урама сиксе тухрĕç.

— Мĕн пулнă?

— Вут тухнă-и?

— Кам авăнĕ çунать?—тесе пĕр-пĕринчен ыйтаççĕ. Уйăх тĕттĕмленсех ларма тытăнсан, хĕрарăмсем сасăпах улама тапратрĕç. Пирĕн Алтатте те пĕчĕк ача пекех макăрчĕ,—терĕ пичче. Хăй кулкаласа аппа çине пăхса илчĕ.

— Эсĕ ху та чутах макăрса ямарăн. Тарье пулман пулсан, ху та çухăра-çухăрах пӳрте тарса кĕреттĕн те. Тарьерен çеç вăтанса макăрмарăн пулас,—терĕ аппа пиччене хирĕç.

— Чăнахах çав уйăх пĕтсе ларнă чухне пит хăрамалла. Урам тулли çын сапаланса тăрать. Çухрашкала-

нине, чупкаланипе пушшех чун хăрать, тискеррĕн туйăнать,—терĕ пичче.

Эпĕ питĕ хăранипе халĕ тин чĕтреме чарăнтăм. Пичче каланине халхана тăратса итлесе ларатăп. Хамăн куç кантăк çинчех. Вупăр уйăха тепĕр хут çиме тытăнманши тесе, эпĕ кантăкран темиçе хут та пăхса илтĕм. Манăн апат çиес шухăш та çук.

Ыттисене кура атте те ĕлĕк чухнех хĕвел тĕттĕмленни çинчен каласа пама тытăнчĕ.

— ... Иван ун чухне алăри ача. Пĕтĕм халăх пусăра тырă вырать. Çанталăк уяр, пĕр çумăр пĕлĕчĕн татăкки те курăнмасть. Кăнтăрлахи апат çиес умĕн сисмен çĕртенех хĕвел тĕттĕмленме тытăнчĕ. Хура пĕлĕт хĕвеле хупларĕ пулĕ тесе пăхкаларăм йĕри-тавра—пĕлĕт таврашĕ çук. Хĕвел тĕттĕмленнĕçем тĕттĕмленчĕ те—и—и... пĕтсех ларчĕ. Каç пулнă пекех тĕттĕмленчĕ. Ах, пит хăраса ӳкрĕмĕр вара! Ытла пит хăрушлаччĕ-çке! Çынсем ĕçе пăрахса килелле чупа пуçларĕç. Пурте: „Тĕнче пĕтет, тĕнче пĕтет!"—тесе ниçта кайма аптравă. Хветĕркке Яккăвĕ лаша кӳлнĕ те, вырман авасем урлах шатăртаттарать. Эпĕ Ивана çеклерĕм те, Хветĕркке хыççăн чупрăм. Аннӳ ман хыçран талкăшать. Кĕтӳ те кĕртсе ячĕ. Староста уй-хапхи патне тухнă та: „Халăх, кĕрĕр яла—тĕнче пĕтет!"—тесе кăшкăрать. Пурте: „Киле çитсе вилесчĕ хăть!"—тесе антраса кайса, тар юхтарса чупаççĕ...

Атте каласа пĕтерчĕ те сĕтел хушшинчен тухрĕ. Пурте апатланса пĕтертĕмĕр, унтан çывăрма выртрăмăр. Эпĕ атте хыçне кĕрсе выртрăм. Хамăн ыйхă та килет, анчах ниепле те çывăрса каймалла мар. Куçа хупсассăнах вупăр курăнать. Хура лапсăркка йытă пек те, тепĕр чухне пĕр картина çинче курнă măйракаллă шуйттан чĕппи пек. Кайран тепле çывăрса кайнă.

Çĕрле ыттисем авăн çапма тухнă. Мана пӳрте пĕччененех хупса хăварнă. Юрать-ха, эпĕ çĕрле вăранман, вăраннă пулсан, вупăртан хăраса çавăнтах вилеттĕм пулĕ.

## II.

Халĕ уйăха „вупăр çинĕ" каçран 30 çул ытла иртрĕ. Эпĕ ĕнтĕ пĕчĕк хĕрачаран çитĕнсе 15—16 çул учитлĕре пурăнатăп.

1924 çул, хĕлле. Сивĕ уяр каç. Эпĕ уйăх тĕттĕмленнине сăнама урама тухрăм. Уйăх пирĕн пахчари йăмра-

сенчен çӳлерех хăпарнă та, çапах çутă çутатса пăхать, юра симĕсĕн-кăвакăн йăлтăртаттарать. Таçта ял варринче çынсем юрлани, ача-пăча çуйăхни илтĕнет. Унта туй иккен. Çынсем туй курма каяççĕ. Эпĕ те урамалла çынсемпе пĕрле туй еннелле утрăм. Утнăçемĕн хам уйăха пăхсах пыратăп. Уйăх çап-çута тăнă çĕртех пĕр хĕрри тĕттĕмленме тытăнчĕ. Такам уйăха хĕрринчен катса илнĕ пек катăк курăна пуçларĕ. Çутти илемсĕрленсе, хĕрелсе кайрĕ. Краççын пĕтнĕ лампа çутти пек хĕрлĕн, тĕксĕмĕн курăнать.

Эпĕ хам пĕчĕккĕ чухне уйăх тĕттĕмленнине аса илтĕм. Кам та пулин халех урама сиксе тухса: уйăха вупăр çиет, тĕнче пĕтет, тесе çухăрса ярассăнах туйăнатчĕ.

Анчах урам шăпăрт. Ун пек, кун пек çухăракан никам та çук. Краççын çутти кашни пӳртрех пур. Ман умри çынсем, туй курма каякансем, чарăнса тăчĕç те, пĕр-пĕринпе уйăх тĕттĕмленни çинчен календарь ăнлантарнă тăрăх калаçма пуçларĕç. Эпĕ иртсе кайрăм.

Туй çĕмĕрлет. Лаша тулхăрни, хуткупăс сасси. Ĕçнĕ çынсем юрлани аякка каять. Уйăх тĕттĕмленнĕçем тĕттĕмленсе пырать. Ак тата мана хирĕç туй урамĕнчен виççĕн утса тухрĕç. Калаçкаласа пыраççĕ.

— Шкулта пĕлĕт çине пăхмалли труба пулмалла. Айтăр-ха хăвăртрах, трубапа уйăх тĕттĕмленнине авантарах кайса курар,—тет пĕр сасă. Ку çынна эпĕ сассинченех палларăм. Ку Корниле Иванĕ—40-42 çулхи çын. Хут пĕлет вăл. Шкула пырса чăвашла кĕнекесем, хаçатсем илкелесе каять.

— Пур пулмалла-çке,—тет Шур Микула, 60 çулхи старик, Корниле Иванĕн кӳрши.

Ман тĕле çитрĕç. Виççĕшĕ те чарăнчĕç. Виççĕмĕш çын Алендей Кĕркурийĕ иккен. Вăл халь кăна Хĕрлĕ Çартан таврăннă. Эпĕ ăна Хĕрлĕ Çартан таврăннăранпа курманччĕ те-ха.

— Ăçта каятăн?—теççĕ мана.

— Уйăха „вупăр çинине" курма тухрăм,—тетĕп.

Çынсем лăш кулса илчĕç.

— Пĕлĕт çине пăхмалли труба шкулта пур-и?—тет Иван.

— Вăл çук та, бинокль пур,—тетĕп.

— Кунтах-и?

— Çук, шкулта,—тетĕп.

— Айта, пире бинокль та юрать. Уйăх затменине авантарах курасчĕ-ха,—тет Иван.

Çапла калаçкаласа тăнă хушăра пирĕн пата тепĕр ушкăн çынсем пычĕç. Кунта ваттисем те, çамрăккисем те пур. Пуринчен ытла ача-пăча нумай. Ку çынсем те шкула кайма тухнă иккен. Уйăх теттĕмленнине трубапа пăхасшăн. Шкулта пĕлĕт çине пăхмалли труба пур тесе такам калана вĕсене. Ун пекки çук тесен, хăшĕпĕри каялла кайрĕç. Иван, Алендей Кĕркурийĕ, Шур Микула тата пилĕк-улта ача-пăча шкула çитиччченех пычĕç.

Уйăх вăл темĕн тата ытларах тĕттĕмленчĕ. Шкулалла васкаса утатпăр. Ача-пăчасем пирĕн хыçран кĕшĕлтетсе пыраççĕ. Шăн çăпатисемпе юра чĕрик-чĕрик тутарса, утнă çĕрте утаççĕ, чупнă çĕрте чупаççĕ.

Шкула çитрĕмĕр. Пĕлĕт çине пăхмалли труба çукшăн кăмăлсăрланса, эпĕ çынсене бинокль илсе тухса патăм. Çынсем пит хавас. Вĕтĕ-шакăр ачасем черет йышăнса пăхаççĕ. Эпĕ çав хушăра вĕсене уйăх мĕншĕн тĕттĕмленнине каласа паратăп.

Ака тĕксĕм уйăх хуллен çутăлма тытăнчĕ. Ачасем шкул патĕнчен пĕчĕккĕнех саланма пуçларĕç.

Хайхи виçĕ çын: Корниле Иванĕ, Алендей Кĕркурийĕ, Шур Микула—ман хваттере кĕчĕç, кĕнеке-хаçат илес, теççĕ. Эпĕ мĕн пур пек çĕнĕрех хаçатсене патăм. Унтан халăх ĕлĕк уйăх тĕттĕмленнисенчен çынсем хăрани çинчен сăмах тапратса ятăм.

— Ĕлĕкрех пулсан, кун пек чухне пĕтĕм халăх хăраса ўкнĕ ĕнтĕ,—тет Микула пичче, шурă çўçлĕ, шурă сухаллăскер—вăл мана пит авалхи çын пек туйăнать. Хай вăл пит ăслă. Хут пĕлет. Ачисене те вĕрентнĕ.

Эпĕ пĕчĕккĕ чухне „уйăха вупăр çинине“, Якку пичче уйăха кĕлпе сапнине, хам вилсе каяс пек хăранине каласа патăм.

Пурте манпа пĕрле кулаççĕ.

— Ĕлĕк чăнах та çаплах пулнă çав,—теççĕ вĕсем.

— Революци пулни халăхăн куçне уçтарчĕ.

— Ака пурăна-киле халăх ĕлĕкхи йăласене йăлтах парахĕ,—терĕ Алендей.

Хурал чанĕ 10 çапрĕ.

— Киле каймалла пуль,—терĕ Иван.

— Каятпăр,—терĕç Микула пиччепе Алендей.

— Сывă пул, пирĕн пата пырса лар,—терĕç мана çынсем. Виççĕшĕ те алă тытрĕç.

— Ӳлĕмрен хăвăр килсе ларăр, яланах килĕр,—терĕм эпĕ вĕсене.

— Эпир килетпĕр-çке кунта,—тесе, çынсем киле кайма тухрĕç.

Эпĕ те алăка питĕрсе кĕме вĕсемпе пĕрле тухрăм. Уйăх çӳлĕ тӳпере çап-çутă ăрать. Пĕлĕт таса, кăвак. Пирĕн ял вĕçĕ тĕлĕнче кăна пĕлĕт çинче тĕтре пек хупăрланнă, хăмăр пĕлĕт таткисем пур.

— Ай-ай çутă! Хайхи леш, вупăр, уйăх патĕнчен саççимех тасалнă,—терĕ Алендей кулкаласа. Эпир пурте алкум вĕçĕнче чарăнса тăтăмăр.

— Э-э-э!—терĕ Микула пичче, аллине сĕлтсе.—Акă тĕттĕмлĕх пĕтсех пырĕ, „вупăр" та çавнашкалах сирĕлĕ. Пурăннăçемĕн, çутталла тухнăçемĕн халăх вăранать, тасалать. Суя, кирлĕ мар япала пурăнăçран майĕпе пăрахăçа тухать. Ĕлĕк затменисенчен халах хăранă, тесе калаçса ирттертĕмĕр. Халĕ пăхăр-ха! Затменисенчен кам хăракан пур? Ветĕр-шакăр ачи-пăчи те затменине сăнаса пăхасшăн бинокльпе ăрмăшать.

Юра шăтăртаттарса çынсем хуллен урам тăрăх утрĕç. Эпĕ çынсем куранми пулачченех алкум вĕçĕнче тăтăм. Тӳлек, çутă, сивĕ. Ялта хăй çутти сахал, унта-кунта çеç курăнкалать. Пĕр сасă-чĕвĕ те илтĕнмест.

Эпĕ çынсене асатма тумтирсĕрех тухнă. Сивĕ шатăр чĕпĕтрĕ, çӳçенсе кайрăм та, алкумне чупса улăхрăм. Юр йăлтăртатнипе, уйăх çуттипе ăмсанса каллех пĕр самантлаха йĕри-тавра пăхса илтĕм. Ял телĕнчи хăмăр тĕтре хуллен хĕвеланăçĕ еннелле туртăнать...

1927.

---

# АЯКРИ ТĂВАНСЕМ ВАЛЛИ

*Калав*

I.

— Уç чӳречене, ме хаçатсем,—терĕ почта салатса çӳрекен Михаля пичче. Хăй Михаççен чӳречине шăкар-шăкăр тутарчĕ.

Сĕтел хушшинче вырăсла букварь вуласа ларакан Михаç хăвăрт тăчĕ те чӳречине икĕ еннелле яр-р! уçса ячĕ.

— Хаçатсем хушшинче пĕр çыру пур,—терĕ Михаля пичче, Михаçа пĕр тĕрке хаçат тыттарса. Хăй тепĕр кил патнелле, сăран сумкине умра тытса, утса кайрĕ.

Михаç, чӳречине хупсанах, хаçат тĕркине салатрĕ.

— „Чăваш Коммунĕ"—аннене, „Çамрăк большевик"—аппана, ку—мана.

Çапла пĕчĕк Михаç, хăй тĕллĕн калаçса, „Пионер сасси" хаçата уçрĕ. Хаçат ăшĕнчен кăштăрт кăвак конвертлă çыру сиксе тухрĕ. Михаç çыру конвертне вăр-вар уçрĕ. Çырăва Мускавран пиччĕшĕ янă. Амăшĕпе аппăшĕ патне çырни те пур, Михаç патне пиччĕш уйрăм çырнă. Шултăра, илемлĕ çырнă, вулама пит аван. Климентий вăл ялан пĕчĕк Михаç патне шултăра, илемлĕ, эсĕ те ман пек çырма вĕрен тесе, çырусене тăрăшса çырса ярать. Михаç çырăва вулама тытăнчĕ.

„Савнă пĕчĕк шăллăм Михаç.

Мĕнле пурăнатăн? Шкула ĕнтĕ эсĕ иккĕмĕш çул каятăн. Аван вулама, аван çырма вĕрентĕн пулĕ? Хĕлле киле пырса каятăп. Сан валли лайăх картинкăллă кĕнекесем илсе пыратăп. Халĕ сана эпĕ октябрь праçникĕ тĕлне нимĕн те парса яраймастăп. Çавăнпа эпĕ сана пĕр сăмах каласшăн. Астăватăн-и, амбарта, манăн сĕтел çинче, пĕчĕк пичке пурччĕ. Ун çине „сберкасса" тесе çырнă. Вăл пичкере вак укçа чылай пулмалла. Çав пич-

кене те, ун ăшĕнчи укçана та сана паратăп. Пĕркун эпĕ сана çав пичкери укçапа вылямаллисем илсе парса хăварма астуман та. Вăл укçапа эсĕ хăвна мĕнле япала кирлĕ—çавна ил. Аван вĕрен. Аван вĕренсен, сана та инженерсем вĕренсе тухакан шкула ярăпăр. Кăçал ĕнтĕ эпĕ инженера вĕренсе тухатăп та сана Мускава илсе килсе кăтартатăп.

Сывă пул!

Сана юратакан пиччӳ Климентий".

Михаç çырăва вулама тытăнсан, вуланăçемĕн унăн хурлăхан пек хура куçĕсем, тăп-тăп илемлĕ тутисем кулса ячĕç. Вуласа тухсан, çыруне çавăркаласа пăхрĕ, вара тата тепĕр хут вулама тытăнчĕ. Михаçăн çак вăхăтра амăшĕпе аппăшĕ килте пулнă пулсан, Михаç вĕсене ку çырăва мĕн тĕрлĕ пысăк савăнăçпа вуласа памĕччĕ-ши! Анчах Михаç килте пĕчченех. Амăшĕпе аппăшĕ ĕçрен таврăнайман-ха. Амăшĕ сĕт-çу ферминче ĕçлет. Унтан вăл кĕтӳçсем ĕнесене çарантан хăваласа киличчен таврăнаймасть. Аппăшĕ—Кĕтерӳç—18 çулхи хитре хура хĕр—колхозра счетовод пулса ĕçлет. Михаçăн амăшĕпе аппăшĕ килте ир-кас çеç ĕçлеççĕ, кăнтăрла ялан колхоз ĕçĕнче.

Михаçăн ашшĕ тата пачах килте çук: ватăлмалăх кунра вăл ялхуçалăх курсне вĕренме Горький хулине кайнă.

Михаç савăнăçлă çырăва пĕчченех пĕр-икĕ хут вуласа тухрĕ те, тирпейлĕн хутласа, кĕсъине чикрĕ. Вара пуканпа тăрса çӳлĕк çинчен амбар уççи илчĕ те пӳртрен тухрĕ.

II.

Тепĕр кун, канмалли кун, пионерсем шкула вылямa, юрлама, ташлама пухăннă. Ачасемпе пĕрле учительница Нина Алексеевна та вылять, савăнать.

— Ачасем, эпĕ ĕнер хаçат çинче пĕр вырăс писателĕ Испанири ачасем çинчен çырнине вуларăм,—терĕ Нина Алексеевна, ачасене хăй йĕри-тавра пухса. Вăл çапла çырать: „Пĕр ялти столовăйра сĕтелсем çине нумай чашăксем лартса тухнă. Кашни чашăк çумне пĕрер çемçе булка хунă. Столовăйра ĕçлекен пĕр ватăрах çын кантăкран та, алăкран та, ачасем килни курăнмасть-и тесе, пырса пăхать. Вăл Мадрид хулинчи ачасене кĕтет. Тепĕр икĕ сехетрен ачасем çитеççĕ тесе столовăйра ĕçлекене пĕл-

терчӗҫ. Вӑл ачасене кӗтсе хатӗрленнӗ. Кӗтет, кӗтет... икӗ сехет те иртсе кайрӗ, ачасем ҫук, килмерӗҫ. Столовӑйра ӗҫлекен урама тухать. Урамра санитарсем вилнӗ ачасене турттарса пыраҫҫӗ. Столовӑйра ӗҫлекен каллех столовӑйне кӗчӗ те, куҫӗсене шӑла-шӑла, булкӑсене, чашӑксене сӗтелсем ҫинчен пуҫтарчӗ. Кӗтнӗ ачасем килеймерӗҫ. Вӗсене фашистсем ҫул ҫинче бомба пӑрахса вӗлернӗ. Фашистсем юри ача-пӑчасем шкулта вӗренсе ларнӑ ҫӗре бомбӑсем пӑрахаҫҫӗ. Ача-пӑчасем юнлӑ татӑкӑн сирпӗнеҫҫӗ, таткаланса пӗтеҫҫӗ. Ҫуртсем ишӗлеҫҫӗ, ҫунаҫҫӗ. Йӗрӳ, кӑшкӑрашу. Хула-и, ял-и—ҫунать, пӗтет. Бомбӑсем лекнипе, ҫуртсем ишӗлнипе ҫынсем нумай вилеҫҫӗ. Чӗрӗ юлнӑ ача-пӑча, сехри хӑпнипе, ниҫта кӗрсе кайма пӗлмест. Нумайӗшӗ вӗсем ашшӗ-амӑшӗсӗр, килсӗр, татӑк ҫӑкӑрсӑр тӑрса юлаҫҫӗ. Хӑшӗ-пӗрисем тата уйхирелле сапаланса кайса йӗрсе ҫӳреҫҫӗ. Киле каяс—килӗ ҫук. Ҫиме ыйтас—ҫимелли те ҫук, ашшӗ-амӑшӗ те ҫук. Кам ҫав ачасене хӗрхенмӗ? Кам вӗсене пулӑшмасӑр тӳсӗ? Тискер фашистсене аса илсен, камӑн чӗри хаяр ҫилӗпе тулмӗ? Кам фашистсене ылханмӗ?!"

— Тӗп пулччӑр фашистсем!

— Ҫӗнтертӗр Испани республики!

— Пӗттӗр фашизм!

Ҫакнашкал сӑмахсем илтӗнчӗҫ пионерсем хушшинчен.

Михаҫӑн Нина Алексеевна сӑмахӗсене итленӗҫемӗн хура хитре куҫӗсем пӗр йӑлтӑртатса, пӗр тӗксӗмленсе илеҫҫӗ. Михаҫӑн тискер фашистсене тӳсейми ҫилӗ килет. Хурлӑх куракан Испани ачисене хӗрхенсе, юратса пулӑшас шухӑш вӑйлӑн хӗлхемленет.

— Илер, ачасем, совет ҫӗршывӗнчи ачасен пурӑнӑҫне. Пирӗн пурӑнӑҫ пур енчен те ҫутӑ, илемлӗ, ҫурхи кун пек чипер, савӑнӑҫлӑ. Эпир ҫутӑ та таса шкулсенче вӗренетпӗр, тулӑхлӑ пурӑнӑҫпа паттӑрӑн ҫитӗнетпӗр. Совет ачисен пурӑнӑҫӗ—ҫутӑ уяв. Кам туса панӑ пире ҫакнашкал пурӑнӑҫа?—Аслӑ ҫулпуҫ Сталин ертсе пыракан коммунистсен партийӗ туса панӑ.

— Сыва пултӑр Сталин!—нумай саслӑн янӑрарӗ класс.

Пионерсен чаплӑ юррин юлашки сӑмахӗсем янӑраса пӗтсен, ачасем пӗрерӗн-иккерӗн сӗтел патне тухма тытӑнчӗҫ. Сӗтел патне йӗркеллӗн пырса тӑраҫҫӗ те, кӑмӑлтан панӑ укҫине сӗтел ҫине хурса, хӑйсем мӗн чухлӗ панине список ҫинче ҫырса хӑвараҫҫӗ. Михаҫ кӗтмен ҫӗртен Нина Алексеевна патне пычӗ те:

— Нина Алексеевна, эпĕ киле кайса килем-и?—терĕ.
— Кайса кил!—тавăрчĕ Нина Алексеевна.

Пионерсемпе октябрĕноксем пĕрин хыççăн тепри сĕтел çине укçа тухса хураççĕ. Акă юлашкинчен чи пĕчĕк ача 50 пус хыврĕ те, урисемпе вĕлтĕртеттерсе, хăй вырăнне кайса ларчĕ. Ĕнтĕ ачасен киле те каймалла, хăшĕ-пĕрисем тухса кайрĕç те, анчах нумайĕшĕ каймаççĕха, укçа мĕн чухлĕ пухăннине пĕлесшĕн. Укçана шутлама уйăрнă пионерсем укçа мĕн чухлĕ пухăннине каласа парасса кĕтеççĕ. Акă икĕ ача укçа шутласа пĕтерчĕç.

— Михаç мĕншĕн тухса кайрĕ-ши вăл?—тесе пĕр-пĕринчен ыйткалаççĕ ачасем.

— Михаç темшĕн киле вĕçтерчĕ!—терĕ кăтра хура çӳçлĕ Ануç.

— Михаç килчĕ!—илтĕнчĕ коридортан. Çав самантрах класа Михаç кĕчĕ. Аллинче унăн çутă пĕчĕк пичке. Михаç хăй калама çук савăнăçлă: хура куçĕсем йăл-йăл выляççĕ, тутисем кăмăллăн кулаççĕ. Михаç, сĕтел патне пырса, пичкине укçа купи патне лартрĕ.

— Пичче ĕнер çыру янăччĕ,—пуçларĕ калама Михаç. Çак пичкери укçана мана паратăп, тесе çырнă вăл. Эпĕ „Юный конструктор" илес тенĕччĕ. Халĕ ку укçана Испанири республиканецсен ачисене пулăшма паратăп!—тесе пĕтерчĕ Михаç чĕтрекен сассипе.

Киле кайма коридора тухнă ачасем пурте класа кĕчĕç. Ачасем пурте пĕчĕк пичке çине тĕлĕнсе пăхаççĕ.

Чăн малтан Нина Алексеевна сасси илтĕнчĕ.

— Маттур эсĕ, Михаç!—терĕ Нина Алексеевна.

— Ку пичкен уççи килте çук, почтăна кайса уçмалла,—терĕ Михаç.

— Манăн ăна уçакан уçă пур!—терĕ Нина Алексеевна. Пĕчĕк çăраççипе Нина Алексеевна пичкене уçрĕ, пичке тĕпĕ тухса ӳкрĕ. Пит тĕлĕнмелле! Кĕмĕл, пăхăр укçасем, пичкерен тухса, сĕтел çинче сапаланса кайрĕç.

— Шутлар!—терĕ Нина Алексеевна паçăр укçа шутланă ачасене.

Шутлама тытăнчĕç. Пĕр ачи пăхăр укçасене шутлать, тепри—кĕмĕлсене.

— Манăн 5 тенкĕ те 22 пус!—терĕ пăхăр укçа шутлаканни.

— Манăн 9 тенкĕ те 70 пус!—терĕ тепĕр ачи.

— 14 тенкĕ те 92 пус!—тĕлĕнсе каларĕ тахăшĕ.

— Михаçăн пуринчен нумай пулчĕ!—терĕ тепĕр сасă.

Ачасем каллех шавласа кайрĕç.

Нина Алексеевна Михаç патне пĕшкĕнсе:

— Ху валли пĕр-пĕр япала илмелĕх укçа хăвармастăн-и?—тесе ыйтрĕ, ачасем шавлана сасă витĕр.

— Çу-ук!—терĕ пуçне сулласа Михаç,—пĕтĕмпех паратăп, пĕтĕмпех аякри тăвансене пултăр! Фашистсене çĕнтермелле, тĕп тумалла!

1936.

## *М. Д. ТРУБИНА*

*(кӗске биографи)*

Марфа Дмитриевна Трубина (Трубина Мархви) 1888 ҫулта Куснар ялӗнче (Куславкка р., Чӑваш АССР) хресчен ҫемьинче ҫуралнӑ.

1909-мӗш ҫулта М. Д. Трубина Чӗмпӗрти (халӗ Ульяновск) учительсене хатӗрлекен чӑваш шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ. Вӑл ҫав вӑхӑтранпах учительница пулса ӗҫлет.

Халӑха вӗрентес ӗҫре пӗтӗм вӑйне хурса ӗҫленӗшӗн правительство ӑна „За трудовое отличие“ медаль парса наградӑланӑ.

Илемлӗ произведенисем ҫырма Марфа Дмитриевна ҫамрӑклах пуҫланӑ, анчах унӑн литературӑри творчестви Октябрь революцийӗ хыҫҫӑн ҫеҫ палӑрса сарӑлма тытӑнать. М. Трубинан малтанхи произведенийӗсем „Шурӑмпуҫ“, „Сунтал“, „Хатӗр пул“ журналсенче, „Канаш“, „Ҫамрӑк большевик“ хаҫатсенче, тӗрлӗ хрестоматисенче пичетленсе тухнӑ.

Литература ӗҫне пуҫӑннӑ вӑхӑтра М. Трубина ача-пӑчасене валли пӗчӗк калавсем, сӑвӑсем ҫырнӑ. Унӑн сӑввисем хушшинче „Тырӑ акакан юрри“, „Ҫумӑр хыҫҫӑн“, „Ҫамрӑка“ тата ыттисем те паллӑ вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ.

„Ҫамрӑка“ ятлӑ сӑввинче, С. Чекеҫе (Хумма Ҫеменне) хисеплесе ҫырнӑскерӗнче, автор хӑйне ҫамрӑк чухне пусмӑр самани ӳсме, ҫырма, уҫҫӑн юрлама ирӗк паманни ҫинчен каласа парать, революци хыҫҫӑн ҫамрӑк чӑваш писателӗсен сассисем уҫҫӑн янранине кӑтартать:

Эпӗ ӳснӗ пусмӑрпа,
Манӑн юрӑ ҫавӑнпа
Уҫӑ, ҫирӗп янраймасть,
Вутлӑ-хӗмлӗ тухаймасть.
Эсӗ пултӑн каярах,
Сана пусмӑр пит ватман.
Сан сассу та уҫӑрах...—тет вӑл.

М. Д. Трубина—прозаик. Унăн прозăпа çырнă паллă произведенийĕсем çаксем: „Ĕç тухмарĕ“, „Праски йăнăшĕ“, „Хĕрлĕ галстук“, „Пĕчĕк колхозниксем“, „Марине“, „Нина“ тата ыттисем те.

Писательница Трубина хăйĕн произведенийĕсенче ялти пурăнăç çинчен ытларах çырать. Унăн тĕп геройĕсем—колхозниксем, хĕрарăмсем, шкул ачисем. Трубина калавĕсене пирĕн хальхи вăхăтри çынсем нумайĕшĕ пĕлеççĕ, юратса вулаççĕ, шкул ачисем унăн хăшпĕр произведенийĕсене чăваш литератури урокĕсенче вĕренеççĕ.

М. Д. Трубинан çакăн пек кĕнекесем пичетленсе тухнă: „Ачасем валли çырнă юмахсем“ (1924 ç.), „Хĕрлĕ галстук“ (1925 ç.), „Ача-пăча сăввисем“ (1926 ç.), „Çĕнтерчĕ“ (1928 ç.), „Марине“ (1929 ç.), „Пĕчĕк бригадирсем“ (1931 ç.), „Ĕç тухмарĕ“ (1933 ç.), „Калавсем“ (1933 ç.), „Мучар“ (1934 ç.), „Хĕллехи каçсенче“ (1935 ç.), „Нина“ (1946 ç.).

---

ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

## ТУПМАЛЛИ

Стр.


Хĕрлĕ галстук . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Арçури . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 13
Пĕчĕк колхозниксем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 23
Килйыш . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 39
Пирĕн савăнăç . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 48
Ĕлĕк вĕренни . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 78
Ютран килни . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 82
Шĕшкĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 88
Вĕренепе куршанкă . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 92
Аслати . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 97
Вупăр . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 103
Аякри тăвансем валли . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 112

М. Д. Трубина (кĕске биографи) . . . . . . . . . . . . . . . . 117

Редактор *В. Долгов.*
Технический редактор *М. Тимофеева.* Корректор *С. Алексеев.*

Сдано в набор 15. V. 1947 г. Подписано к печати 3.IX. 1947 г.
НТ 05138. Объем 7,5 п. л. Тираж 10.000 экз. Заказ № 1852

Тип. № 2 Упр. полиграфпромышлен. при Совете Министров ЧАССР,
г. Алатырь.

# 1917

Редактор В. [illegible]
Технический редактор М. [illegible] Корректор С. [illegible]
Сдано в набор 15. V. 1947 г. Подписано к печати 3.IX. 1947 г.
НТ 05138. Объем 7,5 п. л. Тираж 10.000 экз. Заказ № [illegible]
[illegible]

1947

Хакĕ 6 тен.
Цена 6 руб.

М. Д. ТРУБИНА

РАССКАЗЫ и СКАЗКИ

На чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары • 1947